Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ

**Н.Г. Ильина**

# ЧĂВАШ ЛИРИКИ

## (1960−1990 çулсем)

Шупашкар 2013

УДК 821.512.111.0
ББК 83.3(2Рос=Чув)6
И 46

*Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн Ăслăлăх канашĕ йышăннипе пичетленет*

Рецензентсем:
филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ *О.Г. Владимирова*
филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ *И.Ю. Кириллова*

Ăслăлăх редакторĕ:
филологи ăслăлăхĕсен докторĕ *А.Ф. Мышкина*

**Ильина Н.Г.**
**Чăваш лирики (1960–1990 çулсем):** монографи / Н.Г. Ильина. – Шупашкар: Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ, 2013. – 140 с.

Ку ĕçре сăвă тишкерес ыйтăва хускатнă, чăваш критикĕсен статйисене хак панă. 1960–1990 çулсенчи чăваш лирикинчи унччен çителĕклĕ е пачах тĕпчемен авторсен вырăнне палăртма тăрăшнă, вĕсен никампа пăтрашмаслăхне, çав вăхăтрах пĕрлештерекен енĕсене, наци хăй евĕрлĕхне йĕрлесе тухнă. Лирика геройĕсен трагеди сăлтавĕсене çĕнĕлле ăнлантарнă.

Кĕнекене тăван литература аталанăвне тĕпченĕ чухне, аслă вĕренӳ заведенийĕсенче лекцисем вуланă е вăтам шкулта паянхи сăвăçсен пултарулăхне пăхса тухнă май усă курма пулать.

ISBN : 978–5–87677–185–8

© Ильина Н.Г., 2013

## КӲРТӖМ

Лирика хайлавӗ – ҫыннӑн шалти пӑшӑрханӑвӗн, чунчӗм пурнӑҫӗн ӳкерчӗкӗ. Сӑвӑпа паллашса вулакан тепӗр ҫыннӑн кӑмӑлне, шалти вӑрттӑн хусканӑвӗсене лайӑххрах туйма-ӑнланма, ӑна хӗрхенме вӗренет, кӑмӑл-сипет виҫисемпе танлаштарса хӑйӗн утӑмӗсене тӗрӗс хак пама пултарать. Ҫавӑнпа та паянхи кун – ҫӗр чӑмӑрӗ, курайманлӑхпа тулса ҫитнӗскер, кӗҫ-вӗҫ сирпӗнсе каяс пек чӗтренсе тӑнӑ вӑхӑтра – лирика патне таврӑнни, вулакана сӑвӑ тӗнчин вӑрттӑнлӑхӗсене уҫса пама тӑрӑшни уйрӑмах пӗлтерӗшлӗ.

Юлашки ҫулсенче XX ӗмӗрӗн иккӗмӗш ҫурринчи чӑваш поэзине тишкерсе ҫырнӑ самай сулӑмлӑ ӗҫсем пулчӗҫ: *Г.А. Ермакова* Геннадий Айхи пултарулӑхӗнчи философи мотивӗсене[1] тата эстетика никӗсӗсене тӗпчерӗ[2]; *И.В. Софронова* чӑваш поэзийӗнчи Тухӑҫ лирикин традицийӗсене тупса палӑртрӗ[3]; *О.Г. Владимирова* чӑваш силлаботоники йӗркеленсе аталаннине йӗрлерӗ[4]; *Е.Ю. Иванова* – Алексей Воробьев поэтика тӗнчине уҫса пачӗ[5]; *О.В. Скворцова* иртнӗ ӗмӗрӗн 70–80-мӗш ҫулӗсенчи чӑваш лирикин литературӑпа стиль туртӑмӗсене шырарӗ: М. Волкова, В. Энтип, Н. Теветкел, В. Урташ, Ю. Айдаш поэтсен сӑввисене тӗплӗн тишкерчӗ[6]. Ҫак сумлӑ ятсем ҫинче хальлӗхе эпир чарӑнса тӑмарӑмӑр. Пирӗн ӳлӗм тухас кӗнекесенче вӗсем, паллах, хӑйсен вырӑнне тупӗҫ.

Чӑваш лирикин пӗр пӗтӗмӗшлӗ ӳкерчӗкӗ калӑплансах ҫитнӗ теме ҫук-ха. Уйрӑмах юлашки аллӑҫуллӑха илес пулсассӑн, ҫителӗклӗ е пачах тӗпчемен ятсем пур: П. Эйзин, Л. Мартьянова, А. Аттил, П. Яккусен, М. Сунтал, Г. Федоров, Н. Сельверстрова, М. Карягина т.ыт.те.

Филологи ӑслӑлӑхӗсен ретӗнче стиль шыравӗсемпе сулӑмӗсене тупса палӑртасси, вӗсене тӗпчесси пысӑк ыйтусенчен пӗри пулса тӑрать. Ҫакӑ вӑл поэзи илемлӗхӗн тӗрлӗ

енлӗхне уҫса пама, тӑван литература аталанӑвӗн пӗтӗмӗшле ӳкерчӗкне калӑплама питӗ кирлӗ. Эппин, тин кӑна асӑннӑ сӑвӑҫсен пӗлтерӗшне тата тӗп туртӑмсемпе сулӑмсене палӑртмасӑр хамӑр поэзин тӗрӗс те тулли сӑн-сӑпачӗ пур тесе калама пултараймӑпӑр.

Ҫавӑнпа та ку кӗнекере ҫак поэтсен никампа пӑтрашмаслӑхне, ҫав вӑхӑтрах вӗсене пӗрлештерекен енӗсене, наци хӑй евӗрлӗхне йӗрлесе тухма тӗллев лартнӑ. Кӗнеке ятне «Чӑваш лирики (1960—1990 ҫулсем)» тесе палӑртнӑ пулсассӑн та хӑш-пӗр поэтсен (сӑмахран, П. Яккусен, Л. Мартьянова, М. Карягина) XXI ӗмӗр пуҫламӑшӗнче ҫырнӑ сӑввисене те асӑрхаса иртме тӑрӑшнӑ. Унсӑрӑн халӗ те тухӑҫлӑ ӗҫлекен ҫав сӑвӑҫсен сӑн-сӑпачӗ хӑрах енлӗрех курӑннӑ пулӗччӗ.

Илемлӗ хайлав текстне ӑша хывас тесен унӑн пӗтӗмӗшле тытӑмне, содержанипе форма пӗрлӗхне асра тытни тӗпре пулмалла. Ҫак «тӗвӗ» пӗтӗм хайлав элеменчӗсене чӑмӑртаса, ҫыхса тӑрать. Пӗр-пӗр лирика текстне тишкерсе хаклас, ӑнланас, лирика геройӗн тӗнчине кӗрес, автор ӑсталӑхне палӑртас тесен вара нумай чухне «тӗвве» салтма, унӑн элеменчӗсене пайӑррӑн вакласа тӗпчеме тивет.

Сӑвӑ текстне вуласа унти шухӑш-туйӑмсене ӑнланасси, пӗр енчен, питех те ансат пек. Анчах та куҫа курӑнсах кайман вӑрттӑнлӑхсем кунта сахал мар. Лирика — эпоспа драмӑна хирӗҫле тӑракан литература тӗсӗ. Эпоспа драма этем пурнӑҫне пур енлӗн сӑнласа параҫҫӗ пулсассӑн, лирика, ҫӳлерех палӑртрӑмӑр ӗнтӗ, ҫыннӑн ӑнне, ӑн айӗнчи шухӑшлавне, субъективлӑ саманта мала кӑларать. Лирика, эпоспа драмӑпа танлаштарсассӑн, ӳнерӗн урӑх ушкӑнне кӗнӗн те туйӑнать (экспрессивлӑ ушкӑна). Ҫавӑнпа та лирика хайлавӗсене тӗпчемелли меслетсем те эпика е драма хайлавӗсене тишкермеллисенчен палӑрмаллах уйрӑлса тӑраҫҫӗ. Лирика хайлавӗнче эпир ӗҫ тытӑмне йӗрлеместпӗр, харкамҫӑсене пӑхса тухмастпӑр, психологи функцийӗ тулашӗнче тӑракан пайӑрӑмсене тӗпчесех каймастпӑр т.ыт.те. Ун вырӑнне лирика геройӗ (субъекчӗ) тӗп вырӑна тухать. Лирика геройӗ — сӑвӑсенчи хумханullӑ туйӑмлӑ ҫын сӑнарӗ. Вӑл поэтӑн никампа пӑтрашми енӗсене калӑпласа тӑрать пулсассӑн та, пӗтӗмлетӳллӗ сӑнар шутланать. Урӑхла каласан, лирика харкамҫи туйӑм-шухӑшӗсемпе, характерӗпе автора питӗ ҫывӑх пулма пултарсассӑн та вӗсен хушшинче уйрӑмлӑх яланах пур.

Çавăнпа ăна сăвăçпа танлаштарни тĕрĕс мар. Мĕншĕн тесен кашни сăввинче автор лирика геройĕнче хăйĕн пĕр-пĕр курăмлă енне вăйлатса кăтартать, унăн чун-чĕре хумханăвĕсене типизацилет, пĕтĕмлетет. Вулакан вара хăйне лирика геройĕпе пĕр килтерет, унăн туйăмĕсене чунĕ витĕр кăларать. Эппин, лирика субъектне авторпа анчах мар, вулаканпа та танлаштарма пулать.

Çапла лирика хайлавĕсенчи сăнар нумай енлĕ пулни, кашни сăмахăнах палăрмалла йывăрăшĕ пурри, çыру чĕлхи питĕ туйăмлă та шухăшлă пулни çак литература тĕсне меслет тĕлĕшĕнчен тĕпчессине йывăрлатать.

Юлашкинчен çакна каламалла: «Чăваш лирики (1960–1990 çулсем)» монографи çулталăк хушшинче ларса çырнă ĕç мар. Кĕнеке авторĕ студент чухнех поэзипе кăсăкланма пуçланă, курс тата диплом ĕçĕсем çырнă, аспирантурăра чăваш лирикине тишкерсе кандидат диссертацийĕ (2002) хӳтĕленĕ. Тĕпчев ертӳçи филологи ăслăлăхĕсен докторĕ В.Г. Родионов профессор пулчĕ, Г.И. Федоров профессор та пĕрмаях тĕрек парса пычĕ. Аслă вĕрентекенĕмсене усăллă канашсем сĕннĕшĕн, тĕпчев çулĕ çине тăма пулăшнăшăн чĕререн тав тăватăп.

# I. ПОЭЗИЕ ТĔПЧЕС ЫЙТУ

## 1.1. *Сăвă тишкерĕвĕн меслечĕсем*

«Поэзие тĕпчес ыйтăва пирĕн ăслăлăхра ку таранччен çителĕксĕр тишкернĕ тесен те йăнăшах пулмĕ. Тĕрĕссипе каласан, хальлĕхе пирĕн сăвва (поэзие) тишкермелли еплерех мелсем пурри çинчен сăмах хускатса калаçни те курăнмарĕ-ха. Эпир поэзие чуххăмăн, кам мĕнле пĕлет, çавăн пек тишкеретпĕр. Паллах, çавăн пек калани пурин те пĕр евĕр тĕпчемелле тенине пĕлтермест. Сăмах кунта тĕпчеври туйăм-сисĕме, интуицие наука тĕпчев мелĕпе çураçтарасси е тĕрĕслесси çинчен пырать»[7]. Литература пĕлӳçисем сăвăç пултарулăхне тишкермелли, поэзи тĕнчине кĕрсе унти кăмăл-шухăш тупсăмне уçмалли майсем сахал мар сĕннĕ. Вĕсенчен хăшĕ меллĕрех, камăн концепцине тĕпчев никĕсне хумалла-ха хайлавсене туллин тишкерсе тĕрĕс хак пама? Эппин, хăш-пĕр меслетсен тĕшшине ăнкарса илни кирлех-тĕр.

*Форма меслетне* («формальный метод») энциклопеди словарĕнче çакнашкал ăнлантарнă: «Теоретическая концепция, утверждающая взгляд на художественную форму как категорию, определяющую специфику литературы и способную к саморазвитию»[8]. Çак шкулăн меслетне тĕпе хуракансем (В.В. Виноградов, В.М. Жирмунский, Ю.Н. Тынянов, Б.М. Эйхенбаум, Б.В. Томашевский т.ыт.те) унччен тĕпчемен ыйтусене хускатса сахал мар тарăн тĕпчев тунă. Вĕсен ĕçĕсем литература пĕлĕвĕн аталанăвĕнче пĕлтерĕшлĕ тапхăр пулса тăраççĕ. Анчах, паллă ĕнтĕ, çак меслете тĕпе хуракансем содержанипе форма иккĕлĕхне (дуализмне) парăнтарсах пĕтерейменĕ. Вĕсен концепцийĕ, тĕпрен илсен, формалистлах юлнă. Сăмахран, Б.В. Томашевский сăвăлла хайлавра содержани пур, анчах вăл илемлĕх тулашĕнче тăракан пайрăм тесе шутлать[9]. В.В. Кожинов шухăшĕпе, чăн-

чăн поэзи содержанийĕ сăвă хапинчен маларах ниепле те çуралма пултараймасть, вăл унпа пĕр харăс çуралать, унпа пĕрле çеç пулма пултарать[10].

Мускав лингвистика кружокĕн членĕсен ĕçĕсем тепĕр ăслăлăх шкулĕн – *структура шкулĕн* – никĕсĕ пулса тăнă. 1950 çулсем вĕçĕнче совет тĕпчевçисенчен хăшĕ-пĕри литература пĕлĕвĕнчи çак сулăма хапăлласах йышăннă, вĕсемшĕн вăл пĕртен-пĕр тухăçлă меслет пек туйăннă. Структуралистсем сăвă чĕлхин тĕрлĕ «шайĕсене» (фонологи, грамматика т.ыт.те) тишкернĕ – «содержани», «форма» текен ăнлавсене хĕссе кăларса «шайсем» пирки анчах калаçасшăн пулнă. Ку енĕпе уйрăмах Ю.М. Лотман палăрнă. Çак тĕпчевçĕ концепцийĕпе килĕшӳллĕн, текста «шай» урлă çеç тишкерме пулать иккен[11].

Ку меслете Б.П. Гончаров тĕрĕсех критикленĕ пек туйăнать. «Чăннипех хайлавра пĕтĕмпех программăланăши, – тет вăл, – сасăсем хăй хальлĕн çеç пулаймаççĕ. Вĕсем пĕрлешсе сăмах тăваççĕ, сăмахсенчен ăсласа тунă пуплев йĕркеленет, содержани пулать. Чĕлхе ăслăлăхĕнче хытă-çемçе е уçă-хупă сасăсене хире-хирĕç тăратса танлаштарни, тĕпчени çыпăçуллă та вырăнлă. Анчах ку принцип литература пĕлĕвĕнче епле ĕçлет-ши», – тесе çырать[12].

«Сăвăлла хайлавăн пĕр пĕтĕмĕшлĕ илемлĕх тытăмĕ арканман чухне çеç ăслăлăх тĕпчевĕ пирки калаçма пулать», – тесе çирĕплетет Н.К. Гей[13]. Унăн шухăшĕпе, илемлĕ содержани тытăмне тĕпчени çителĕксĕр, мĕншĕн тесен хайлав шалашĕ, унăн илемлĕх системи сăмахран çӳлерех. Ăслăлăх тĕпчевĕн тĕрлĕ меслечĕсемпе мелĕсене пăхса тухнă чухне çакна яланах шута илмелле. Ӳнер произведенийĕ пĕр хальлĕ, пайланман-вакланман чухне çеç пурăнать.

Структуралистсем сĕнекен «шай» меслетне эпир те хапăлласах каймастпăр. Сăвăлла хайлава истори, социаллă экономика, философи ыйтăвĕсене уçса панă чухне «пулăшу материалĕ пек усă курмалла, йăла-йĕрке пирки калаçнă чухне пĕлӳлĕхсен çăл куçĕ вырăнне йышăнмалла»[14] тесе ăнлантарни тĕрĕсех пек туйăнмасть пире.

В.В. Федоров тĕпчевçĕ пачах хирĕçле шухăш калать (унпа туллин килĕшетпĕр). «Поэзи тĕнчи, – тет вăл, – чăн пурнăçрипе тӳр килмест. Унтан та ытла, поэзи тĕнчин хăйĕн саккунĕсем. <...> Пĕр-пĕр текст хăйĕн илемлĕх задачине

пурнăçлатăр тесессĕн унăн кăмăл-сипет, философи, юридици тата ытти функцийĕсем пулмасан та пултараççĕ – унăн хăйĕн çутçанталăк, психологи тата социаллă саккунĕсем»[15].

Литература пĕлĕвĕнче *микросемантика* тишкерĕвĕн тĕрлĕ тĕсĕсем пур: лингвистика поэтики («лингвистическая поэтика»), анаграмма меслечĕ («анаграммирование»), стилостатистика, сасă символизмĕ («звуковой символизм») т.ыт.те. Сăвăç пултарулăхне тĕпченĕ чухне мĕнле пулăшма пултараççĕ-ши вĕсем? Сăмахран, *сасă символизмне* илер. Ку меслетпе сăвва тĕпченĕ чухне пуплеври кашни пайрăма харкам пĕлтерĕш пама тăрăшаççĕ. *Анаграмма меслечĕ* сасă символизмне çывăх: сăвăлла хайлавран грамматика категорийĕсене «кăларса илсе» вĕсене уйрăм пăхаççĕ – пĕр сăмаха сăввăн пĕтĕмĕшле сасă йĕрки пăхăнса тăрать-мĕн. Çавăн пекех *фонологи поэзийĕ* («поэзия фонологии»), *виçе поэзийĕ* («поэзия размера») ятлă сăвă тишкерĕвĕн меслечĕсем те пур. Анчах кунта микросемантика тишкерĕвĕн пур тĕсĕ пирки те каласа, ăнлантарса тăни кирлех мар пулĕ. Вĕсен пурин те пĕр çитменлĕх палăрать: сăвăлла хайлавăн пĕрлĕхне куçран çухатаççĕ.

М.Г. Гаспаров «Семантический ореол метра: к семантике русского трехстопного ямба»[16] ятлă статйинче сăвă виçин семантикипе сăмах тĕшшине тупни хушшинче пĕрпеклĕх курать.

Çак тĕпчевçех тепĕр статьяра текста тишкерме каллех *«шай» меслетне* сĕнет. Анчах ку «шайсем» Ю.М. Лотманăн «иерархи шайĕсенчен» уйрăлсарах тăраççĕ. Илемлĕ хайлава йăлана кĕнĕ пек уйăрса пăхакан чĕлхе шайĕсем витерсе тăраççĕ-мĕн. Ю.М. Лотманăн «шайĕсем» пĕри теприне çирĕп пăхăнса тăратчĕç пулсассăн, М.Г. Гаспаровăн[17] «шайĕсем» черетленеççĕ, ылмашăнаççĕ, пĕр тĕвĕ тăваççĕ – текстăн шухăш пĕрлĕхне йĕркелеççĕ имĕш.

Мĕнлерех ĕçлет-ха М.Г. Гаспаров? Сăвăлла хайлава вăл виçĕ тапхăрпа тĕпчет иккен. Пĕрремĕшĕнче сăвва вулать те куç тĕлне мĕн (тата мĕншĕн) ытларах пулнине асăрхать. Енчен пĕрре пăхса нимех те курăнмасан иккĕмĕш тапхăра куçать: кашни йĕрке, кашни çавра, сăмах çаврăнăшĕ хыççăн чарăнса майĕпен вулать, текста ăнланса илес çĕрте мĕнле çĕнĕ шухăш çуралнине астума тăрăшать. Калаçу пуçа килекен ирĕклĕ ассоциацисем çинчен мар, текстри уйрăм сăмахсем

пирки анчах пынине асăрхаттарать. Ку хутĕнче те нимĕн те пулмарĕ пулсассăн виççĕмĕш тапхăра куçать: сăвă текстĕнчен малтан пур япала ячĕсене суйласа тема тăрăх уйăрать, унтан паллă ячĕсене, ĕç-хĕлсене çырса илет. М.Г. Гаспаров А. Пушкинăн «Снова тучи надо мною...» хайлавне çапла тишкерсе самай кăсăклă пĕтĕмлетӳсем тăвать. Анчах ку меслет поэтсен тĕнчине туллин, пур енлĕн уçма пулăшаймасть: ытла та кăткăс, пăтрашуллă. Тата А. Пушкина мар, А. Фетăн «Шёпот, робкое дыханье...» сăввине (кунта пĕр ĕç-хĕл те çук) тĕпчеме сĕннĕ пулсассăн мĕн калама пултарĕччĕ М.Г. Гаспаров?

Сăвă çемми поэзи пĕр пĕтĕмлĕхĕнче çеç хăй пĕлтерĕшне тупни пуриншĕн те паллă. Çавăнпа та кунашкал танлаштару вырăнсăртарах. «Сăвă çемми – лексикăпа, интонаци тата синтаксис тытăмĕпе, кăмăл-туйăмпа тата семантикăпа çав тери тачă çыхăннă, – тесе çырать Л.И. Тимофеев. – Çак курăмлă пĕрлĕхре çеç сăвă çемми поэт суйласа илнĕ пĕтĕмĕшле пуплев юхăмĕпе килĕшӳллĕ хăйне майлă уйрăм характер йышăнать»[18].

Т.Г. Мальчукова *танлаштарупа типологи* меслетне кăмăллать. «Пĕрремĕшĕнчен, лексикăна, стилистикăна, ритмикăна, эвфоние тĕпчемелле. Иккĕмĕшĕнчен, сăнарсемпе мотивсене, композицие, лирика сюжетне, геройне, кăмăл-туйăмпа идея содержанине пăхмалла. Виççĕмĕшĕнчен, сăввăн шалашĕпе хапине, жанр йăли-йĕркисене тата автор çĕнĕлĕхне, текст историне тишкермелле», – тесе палăртать вăл[19]. Чăннипех, сăвălла хайлавăн тулаш çыхăнăвĕсене шалти тытăмпа çыхăнтарса тĕпченĕ чухне ку меслет кирлех, вăл «хушма вăчăра» пулать те. Анчах лириксен тĕнчине уçнă çĕрте авторăн биографийĕнчи лару-тăру, саманташсен хаклавĕ т.ыт.те шутсăр пĕлтерĕшлех мар.

Иртнĕ ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсенче литература ăсчахĕсене *«системный подход»* текен тишкерӳ меслечĕ кăсăклантарма пуçлать. Ку тĕлĕшрен Б.П. Гончаровăн «Поэтика Маяковского»[20] кĕнеки курăмлă. Вăл çак меслет никĕсĕнче илемлĕ пулăмсен пĕрлĕхне ăсласа илнине курать. «”Шайсене” системăсемпе ылмаштарни терминологи вăййи мар», – тет Б.П. Гончаров.

Анчах системăна структурăсăр усă курас тени, Д.П. Ильин çирĕплетнĕ тăрăх, системăлăх пачах çукки çин-

чен калать, е ку меслет «хыçалти алăкпа» кĕнĕ структурализмах, нимĕнле уйрăмлăх та çук. Структурализм шайĕсене система меслечĕн иерархийĕсемпе (система тата подсистема, макросистема тата микросистема) хирĕçлетсе тăратнине йышăнмасть çак тĕпчевçĕ. Ун шухăшĕпе, пĕтĕмĕшле тытăмăн уйрăм пайĕсене микросăнарпа микросăнарсен пĕрлĕхне хире-хирĕçлетни пирки те тавлашмалăх пур. Д.П. Ильин «илемлĕхпе эстетика чăнлăхне» (поэзи тĕнчине) сăнарлăхпа литература системи пек çеç кăтартнипе те килĕшмест[21].

Мĕн сĕнет-ха Д.П. Ильин? Илемлĕ сăмах ăстаçи (поэт) хăйĕн туйăмĕсене вулакан патне мĕнле çитернин вăрттăнлăхĕ ытларах кăсăклантарать тĕпчевçе[22]. Унăн ĕçĕ хăйне май интереслĕ, уйрăм сăвва е харкам сăвăç пултарулăхне тишкернĕ чухне вырăнлă та. Анчах чăваш лирикин темиçе вунăçуллăхне, тăван литературăри тĕрлĕ туртăмсене пăхса тухнă чух ку меслет тухăçлах мар.

С.В. Калачева XX ĕмĕрти 90-мĕш çулсенче компьютер технологийĕ аталанса кайнă майăн сăвă çырма пултаракан кибернетика машинисем шутласа кăларма пулать текенсем йышланнă пирки хумханса пĕлтерет[23].

В.В. Кожинов шухăшĕпе (эпир те унпа килĕшетпĕр), çакнашкал ĕнентернисем этемĕн чун суккăрлăхĕпе çыхăннă. «Çапла шутлакансем сăвă çырас пултарулăхăн чăн пĕлтерĕшне ăнланмаççĕ (е ăнланмана переççĕ), – тесе çырать вăл. – Паянах пĕр иккĕленмесĕрех калама пулать: чи чаплă машина та нихăçан та чăн-чăн сăвă çыраймĕ. Мĕншĕн тесессĕн поэзире чун илемĕ пытаранна, унта çын чĕри тапать тата уйрăм шăпа пур»[24].

В.В. Кожинов ĕçĕ ĕнентерӳллĕрех, меллĕрех пек пирĕншĕн, мĕншĕн тесен пĕр-пĕр сăвăç пултарулăхне тарăн та нумай енлĕн тишкерме, объективлă пĕтĕмлетӳсем тума ку чухне майсем ытларах. Тĕпчевçĕ хăй сăмахне курăмлă тĕслĕхсемпе çирĕплетет. Тĕслĕхрен, «Стихи и поэзия» кĕнекере сăввăн тулашĕпе шалашĕ уйрăлми çыхăнура пулни пирки пĕрре мар калать, сăвă хапине кăшт та пулин улăштарни содержание те улăштарать тесе ăнлантарать вăл[25]. А. Пушкин, Н. Языков, Е. Баратынский тата ыттисен сăввисене тишкерсе пĕтĕмĕшле пултарулăхăн содержанипе формăн пайланман пĕрлĕхне кăтартать. «”Содержани” тата

“форма” – эпир шутласа кăларнă абстракцисем çеç. Тишкерĕвĕн малтанхи тапхăрĕнче содержанипе хапана уйăрса пăхни вырăнлă та, кирлĕ те, анчах юлашкинчен синтез тумалла», – тесе çырать В.В. Кожинов çав кĕнекерех[26].

В.Г. Родионов та çак шухăшах калать: «Юлашкинчен, мел суйласа илнĕ тата хайлавăн тытăмне тишкернĕ хыççăн, синтез тумалла. Çакă вара хайлава каллех пĕтĕмĕшле, анчах та уйрăм детальсене пĕлсе пуянлатнă хыççăн курма май парать»[27]. (Çак концепцин тымарĕсем Гегель «Эстетики»[28] таранах тăсăлаççĕ: ăсчах содержанипе формăна тишкерӳ пуçламăшĕнче уйрăмшар, кайран пĕр пĕтĕмĕшлĕ пăхма сĕнет. Паллă тĕпчевçĕ М.М. Бахтин та сăвăра тулашпа шалаш пĕрпĕринпе çыхăнни, анчах эстетика тишкерĕвĕ тунă чух вĕсене уйăрса пăхмалли пирки çырнă[29]).

Çапла вара тĕпчев меслечĕсем ăслăлăхра нумай. Пирĕншĕн В.В. Кожинов, М.М. Бахтин, В.В. Федоров, В.Г. Родионов ĕç меслечĕсем чи тухăçлисем, çавăнпа хальхи чăваш сăвăçисен пултарулăхне тĕпченĕ чухне вĕсен вĕрентĕвĕ çине ытларах таянăпăр.

Анчах та тишкерĕве пуçăниччен кашни тĕпчевçĕн тата мĕне асра тытмалла-ха? Ку ыйту тавра пĕрремĕш сыпăкăн тепĕр пайĕнче калаçăпăр.

## 1.2. *Хальхи чăваш сăвăçисен пултарулăхне ăслăлăхра хак пани*

Поэзи тĕнчи вăл – тĕпчев ирттермелли харкам ăнлав. Ăслăлăх ăнлавĕ поэзи тĕнчинчен çуралса тухмалла. Урăхла каласан, çав тĕнчери саккунсем тишкерӳçĕн пурнăç опычĕпе, тĕнче курăмĕпе тӳр килмесен те унăн литература хайлавĕнчи саккунсене пăхăнмаллах[30]. Чи малти вырăнта хак парасси мар, ăнланасси пултăр. Çавăн чухне çеç çыравçă критике хисеплĕ, унăн шухăшне картма пуçлĕ[31].

Тĕпчевре çакă çав тери пĕлтерĕшлĕ самант. Ма тесессĕн пурне те паллă: пирĕн çĕр-шывра сахал мар вăхăт хушши «тӳнтер социологизм» («вульгарный социологизм») пуç пулса тăнă. Критикăра час-часах çакнашкал шухăш пулнă: «Класс кĕрешĕвне кăтартма вĕренсе пырса, кăмăла çеç тултаракан поэзирен пăрăнса пырса социализм строительствине тарăн кăтартма хăнăхмалла. Социализм строительствин çул-

йӗрӗпе тӗрекленсе пыракан хуҫалӑх никӗсне, класс кӗрешӗвне тата ялпа хулан ҫӗнӗ пурнӑҫ йӑлисене ӑнланмалла кӑтартса паракан агитка юрӑсене нумайлатасси ҫине ытларах ҫаврӑнса пӑхмалла»[32].

1920 ҫулсен вӗҫӗнче, уйрӑмах 30-мӗш ҫулсенче, ҫыравҫӑсен Октябрь революцийӗ, тӑван парти, коммунизм, халӑх тӑшманӗсем пирки ҫырмалла пулнӑ. Анчах вӑл ҫулсенче наци туйӑмӗ вӑйланма пуҫланӑран тӑван халӑх историйӗ патне таврӑнакансем, чӑваш малашлӑхӗшӗн пӑшӑрханакансем, «пулхӑр халавӗшӗн» тунсӑхлакансем те пулман мар. Тӗслӗхрен, Митта Ваҫлейӗ чӑваш метисланассине, вырӑса тухса пӗтессине сиссе чӗрине ҫунтарса «Сӗрӗмре» сӑвӑ ҫырнӑ.

Акӑ эпӗ каллех
Пит салхуллӑ...
Мӗнле хурлӑх? –
Час эпӗ калӑп,
<...> Камӑн ҫук пулхӑрӑн юнӗ.
Кам хӑйне вырӑслать,
Метислать –
Ҫавӑ пирӗншӗн пултӑр йӳнӗ,
Вӑл халӑхшӑн ирсӗр чысла!
<...> Ҫавӑнпа та пулхӑр халавӗ
Сӳнӗ тен вӑл
Пӗр ырӑ сехет...
Е апла тӑк пулхӑр ҫӗр-шывӗн
Час ҫухалӗ хӗлхемлӗ чысӗ?
Хамӑнтан ӳтленес савнӑ ывӑл,
Тен, вӑлах та пулӗ метис?

Ҫамрӑк Хусанкай та «Тутар поэчӗсене» ятлӑ сӑвӑра тӑван халӑхсен историйӗ пирки шухӑшлать:

Каҫарӑр, поэтсем! Тен, пысӑк ҫылӑх...
Те ырлӑха пулать, те хурлӑха.
Анчах аваллӑх темшӗн питӗ савӑк.
Чун темӗншӗн туртать аваллӑха?

Ҫакнашкал шухӑш-туйӑмсем, «нӑйкӑшусем» ҫутӑ малашлӑха утнӑ чухне, социализм тунӑ чухне чӑрмантаракан ҫӳп-ҫап пек курӑннӑ вӑл вӑхӑтри критиксене: «Хальхи вӑхӑтра чӑвашсен культури сӳнет, чӑвашсен малашнехи пӗрех пулас ҫук тесе е пуҫӗсене сӗнксе, е ҫӑварӗсене карса ӗмӗтсӗрленекенсем те пур. Революцие, Миттапа Хусанкайӑм, пулхӑрсем туман вӗт. Социализма та пулхӑрсем тумаҫҫӗ. Чӑваш

ĕç халăхĕсенчен пăрăнатăр эсĕр! <...> Вĕренес пулать, халăха урлă пăхмалла мар. Сăнас пулать. Чăваш ĕç халăхĕ ĕçлет. Юрă юрламалла ĕçсем те сахал мар. Курас пулать»[33].

«Чи малтан, Хусанкай – вак буржуалла мещен поэчĕ, индивидуалист. Пролетариллĕ, пĕрлешӳллĕ пурнăçран аякра тăрать. Пролетари кăмăлне ăнланмасть, пролетариллĕ пурнăç сăнне кăтартмасть. <...> Поэт пăлхавлă пурнăçран аякра, вăл кашни чĕр чуна шеллет, ун малашнехи обществăшăн кирлĕ этем çук. Пит хавшак чĕреллĕ Хусанкай! Кăна вырăсла «сентиментализм» теççĕ. Этем тесе тăшмана та хĕрхенмелле-и пирĕн?»[34].

Чăваш литература критики иртнĕ ĕмĕрĕн 20–30-мĕш çулĕсенче нумай çивĕч ыйтăва татса пама тăрăшнă пулсассăн та, тĕп тĕллевĕ унăн çыравçăсене идеологиллĕ воспитани парасси пулнă. «Вăл вăхăтра пирĕн критиксенчен чылайăшĕ çамрăк пролетçыравçăсен ретĕнчи çынсем пулнă, – çырать В.Г. Родионов. – Вĕсем ун чухне чăвашсен патриархĕн И.Я. Яковлевăн, унăн шкулĕнчен вĕренсе тухнă прозаиксемпе поэтсен пархатарлă ĕçĕсене сивленĕ. Çак сăлтавсене пула пирĕн критикăпа литература наукинче чи малтан тӳнтер социологизм шкулĕ пуç пулса тăнă. Вырăс критикипе литературоведенийĕнче çав шкула 1932 çулта сивленĕ, çавна май йăнăш хак панисене тӳрлетме пултарнă. Чăваш культуринче çак ĕç (çĕнĕлле хак парасси) пурнăçланайман». Сăлтавне çыннисем малтанхисемех юлнинче, вĕсем хăйсен шухăшĕсене улăштарманнинче, çак çынсем пысăк вырăн йышăнса тăнинче курать В.Г. Родионов. «1937 çулхи репресси вăхăтĕнче шăпах тӳнтер социологсем палăртнă «çитменлĕхсем» çине таянса вуншар çыравçа сăлтавсăр айăпланă. Вăрçă хыççăнхи çулсенче те тӳнтер социологизм пуç пулса тăнă-ха пирĕн. Унăн тымарĕсем паян кунччен те (статьяна 1988 çулта çырнă. – *Н.И.*) сыхланса юлнă»[35].

Чăннипех те, пĕтĕмĕшле сасă иртнĕ ĕмĕрĕн 20–30-мĕш çулĕсенчи пекех тиркевлĕ пулмасассăн та, тĕпчевçĕ хăйĕн шухăш-кăмăлне çыравçăна йышăнтарма тăрăшни 1990 çулсенче сисĕнет. Сăмахран: «Çапах та тунмастăп, паянхи поэзи... кăмăла çырлахтараймасть. <...> Юлашки темиçе çул хушшинче кăна пирĕн автономилле республикăра пысăк заводсем, Союзĕпе паллă предприятисем нумай лартрĕç.

Шупашкар ГЭСĕ ĕçе кӳлĕнчĕ. <...> Çакна йăлтах хамăр вăхăтри çынсем – ĕçри чăн-чăн улăпсем турĕç, çав хушăрах хăйсем те палăрмаллах улшăнчĕç: тавра курăмĕ анлăланчĕ, коммунизмла ăнланулăхĕ тарăнланчĕ. Акă чи малтан мĕн çинчен çырмалла та поэтсен – ваттисен те, çамрăккисен те»[36].

Ĕç паттăрĕсемпе «хăватлă» социализм пирки çыракан сăвăçсене мухтани, шел пулин те, паллă тĕпчевçĕсен ĕçĕсенче те курăнать. Тĕслĕхрен, А.В. Васильев (Васан) «Хавхалану хавалĕ» (1987) кĕнекере парти, Ленин çинчен çыракан сăвăçсен хайлавĕсене пĕрремĕш рете лартать: «Сăмахĕсем Шавлин янравлă, витĕмлĕ.

Леш енчисем, ан çапăр тек юмах!
Гранит çине çырăнмалли сăмах:
– Мир пултăр çĕр çинче! –
Пилленĕ Ленин.

Паян тин çырнă пек янраççĕ çак йĕркесем. Поэт чĕри вăхăт таппине сейсмограф пек туйса тăнă. Тĕрĕссипе кашни сăввиех актуаллă С. Шавлин, вăхăт ыйтнипе çырнăскерсем»[37].

Ку кĕнекери тĕпчев пирки, пĕтĕмĕшле каласассăн, çиелтентерех тунă теме пулать. Тепĕр статьяра та çав ӳкерчĕкех, сăвă тарăнăшне кĕни курăнмасть – П. Эйзин сăввисене «касать те ваклать»:

«”Январь çара уран чупать кĕрт çийĕн. Янрать, ялтăртатать сивĕ...” Янкăр хĕл сиввине çапла сăнлать поэт. Шел, çав ӳкерчĕксенче эпир чылай чухне автор шухăшне курсах каймастпăр. Мĕн каласшăн вăл, мĕне ырлать? <...> Куç умне мĕн лекнине ӳкерсе панипе пĕрлех пирĕн сăвăç шухăшне, ун активлă позицине те курас килет. Ăнăçсăр танлаштарусем те пулаççĕ П. Эйзин сăввисенче: “тӳпе ыйткалакан пек çĕтĕкçатăк”, “çанталăк вăрă” т.ыт.те. Хальхи саманара куç умне пулнă ӳкерчĕксене манăçа тухнă ăнлавсемпе (“ыйткалакан”) çыхăнтарни пачах та вырăнсăр»[38].

Куратпăр, тĕпчевçĕ кунта сăвăсенчи сăнарсене чăн пурнăçрисемпе танлаштарать. Танлаштарать те тӳр килӳсем тупаймасть, вара Эйзин сăввисене тиркесе тăкать. Анчах эпир В.В. Федоров каланине асра тытатпăр: чăн-чăн поэзи тĕнчин хăйĕн саккунĕсем, тĕпчевçĕн çав саккунсене пăхăнмалла[39].

А.В. Васильевӑн чӑваш литература пӗлӗвӗнче тӳпи пысӑк, анчах унӑн сӑвӑ тишкерӗвӗсем пире пур чухне те тивӗҫтерейменҫҫӗ. Унӑн сӑмахӗсем XX ӗмӗр пуҫламӑшӗнче реалист ҫыравҫӑсем символистсене вӑрҫса ӳпкелешнине хытӑ аса илтереҫҫӗ. Тӗслӗхрен, 1909 ҫулта «Биржевые ведомости» хаҫат редакцине янӑ ҫырура автор ҫамрӑк «декадентӑн» сӑввине (А. Блокӑн «Ты так светла, как снег невинный...» пирки сӑмах пынӑ) ӑнланманнине пӗлтерет[40]. С. Городецкий 1913 ҫулта «Аполлон» журналра символизмпа мистикӑна хирӗҫ ҫырнӑ хӑйӗн манифестӗнче Блока тӳрремӗнех вӑрҫать, ҫамрӑк поэтсене уҫӑмлӑрах ҫырма чӗнет[41].

Хӑш-пӗр чӑваш критикӗсем 1970–1980 ҫулсенче те ҫакнашкал шайра шухӑшлани тӗлӗнтермеллипех тӗлӗнтерет. П. Эйзин хӑй саккунӗсемлӗ хӑйӗн тӗнчине калӑплать. Мӗн тесе Эйзин тӗнче курӑмӗ Л. Волков критикӑннипе пӗр килсе шайлашса тӑмалла? Асӑннӑ критик «Анне пехилӗ» кӗнекене (ячӗшӗн виҫ ыр сӑмах калать те) айӑн та ҫийӗн хурласа пӗтерет: «Кулленхи хӑнӑхнӑ япаласем ҫинченех тӳп-тӳррӗн те ыт ахальтен тенӗ пек ҫӑмӑллӑн, йӗркипе каласа панӑран вӗсем ытла та йӳнелнӗ»[42].

Л. Волков П. Эйзинӑн «Пиҫен» сӑвви ҫинче уйрӑммӑн чарӑнса тӑрать. Эстетикӑлла илеме «ял хыҫӗнчи ҫара та пушӑ вырӑнта» ӳсекен йӗплӗ пиҫенре курма пултарнишӗн поэтран тӑрӑхлать: «Ҫапах та пиҫенре те пысӑк поэзи паллисем курма ӑнтӑлни автора ун ҫинчен ытлашши хавхаланса тем те пӗр каласси патне илсе ҫитернӗн туйӑнать. Ҫакна пулах, тӗслӗхрен, сӑвва «Епле-ха сурӑхсем ку таранччен те ҫиеймен ӑна е урӑх выльӑх таптаман?» евӗр пӗлтерӗшсӗр сӑмахсем кӗрсе кайнӑ – пиҫене сурӑх ҫиме мар, ытти выльӑх пекех унран пӑрӑнса иртсе каять мар-и-ха? Пуш-пушӑ вырӑна илем кӳрсе («пушӑ илем кӳрсе» теес килет ман) ларакан пиҫене идеализацилет сӑвӑҫ, ҫапла тума вара кирлехчӗши?»[43]. Анчах П. Эйзин поэзийӗн тӗп паллисенчен пӗри вӑл – ытарлӑ, символсемпе шухӑшлама пултарасси. Ку тӗслӗхре пиҫен ахаль ӳсен-тӑран ҫеҫ мар – лирика субъекчӗ, пуш-пушӑ та хаяр тӗнчере кӗрешекенскер. Сӑвӑра вӑл – «ял хыҫӗнчи ҫара та пушӑ вырӑн». Ку тӗнчере йӑпӑлтилӗх, пӗрнепӗри сутни, икӗпитлӗх, сӗмсӗрлӗх, пуҫлӑхсене юраслӑх хуҫаланать. Кунашкал ҫынсене Эйзин геройӗ сурӑхсемпе танлаштарать. Вӑл хӑйӗн чун тасалӑхне упраса хӑварассишӗн

кĕрешет. Çав пушлăхра пурăнса та чун-чĕрине вараламаннишĕн, хуçăлманнишĕн хăйĕнчен хăй тĕлĕннине куратпăр.

«Пиçен» сăвва анчах мар, Эйзинăн нумай хайлавне («Юр», «Музыка», пĕчĕк этюдсем т.ыт.те) символсем витерсе тăраççĕ. Çапла А.П. Хусанкай Эйзин пирки калани («говорит прямой речью, и слова значат то, что они значат»[44]) пур чухне те тӳрĕ килмест. Сăвăç пултарулăхĕнче, халь çеç палăртрăмăр, символсем пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнса тăраççĕ. Анчах, шел пулин те, паян кунччен те ку ыйтăва никам та туллин çутатман.

М.А. Ставский витĕмлĕрех калать: «Пĕр-пĕр çыравçăн пултарулăхри сăн-сăпатне ӳкерме шутласан кирек хăш критик та, паллах, унччен çавна ыттисем мĕнле тишкернипе интересленет. Ку енчен илсен П. Эйзин пултарулăхне чăваш критикĕсем темшĕн асăрхасах кайман. Мĕн асăрхаканĕ те поэт пултарулăхне вырăсла хаклянă. П. Эйзин пултарулăхне хаклама чăваш чĕлхинче тивĕçлĕ сăмах çитсех каймасть тенĕ пулĕ ĕнтĕ. <...> Литература каçалăкĕнче вăтăр çул ытла тар юхтарса чăвашла 7 кĕнеке пичетлесе кăларнă авторшăн ку, паллах, çителĕксĕр, тен, кӳренӳллĕ те-и»[45].

М.А. Ставский Эйзин пултарулăхне асăрхаса (1992 çулччен) иртекенсен шутне Марина Трофимова ятлă шкул ачипе «Анне пехилĕ» кĕнекене хак панă Л. Волкова çеç кĕртет. Кунта А.П. Хусанкайăн «Поиск слова» (1987) кĕнекере, «Хыпар» (23.10.1991) тата «Аван-и» (1991. 27 №) хаçатсенче пичетленсе тухнă статйисене асăнмаллах пулнă пек. Вăл ĕçсем калăпăшĕпе пысăк мар пулсан та Эйзинăн сăвă тĕнчинчи тĕп шăнăрсем унта уçăмлă курăнаççĕ. Çапах П. Эйзин пултарулăхне тарăнрах тĕпчеме вăхăт çитнех.

Л. Мартьяновăпа П. Яккусен (Яковлев) пултарулăхне чăваш критикинче, çителĕклех тĕпчемен пулсан та, пачах асăрхаман теейменĕпĕр. Çав вăхăтрах А. Аттил, Г. Федоров, М. Сунтал, Н. Сельверстрова пирки пĕрер-икшер çĕрте асăнкаласа иртнине кăна куратпăр. Çавăн чухлĕ кĕнеке кăларнă хыççăн М. Карягина поэтикине те урăх куçпа пăхни кирлех.

Тишкерӳллĕ статьясем, паллах, асăннă сăвăçсен пултарулăхне пур енлĕн çутатса параймаççĕ. Тата вĕсенче ытларах содержани тĕпчевĕ çеç, сăвă хапи пирки калаçни курăнсах каймасть. Ытларах чухне поэтăн хăй евĕрлĕхĕ е çит-

менлĕхĕ пирки калани сăмах вĕççĕн анчах юлать, тĕслĕх илсе ĕнентерни çук.

Акă В.С. Юмарт (Чекушкин) П. Яккусенĕн «Тăм тăвайкки вăййисем» ятлă кĕнекине ырласа йышăнать. Çав вăхăтрах ыт ахальтен тенĕн (асăрхаттарса хăварма кирлĕрен): «Кĕнекере, алла хăнăхтармалла çырнă пек, этюдсемпе эскизсем майлă туйăнакан сăвăсем те çук мар (тĕслĕхсем илсе кăтартмасть. – *Н.И.*). Унăн геройĕ – хальхи совет çынни, шанчăклă, пиçĕ, ăшă кăмăллă, тӳрĕ чунлă этем»[46].

Пачах урăхла: пĕрре пăхсах П. Яккусен лирика геройĕ ун чухнехи «совет çыннинчен» хăйĕн тĕнче туйăмĕпе, тĕнче курăмĕпе уйрăлса тăни курăнать. Вăл – романтик, хăй шутласа кăларнă илем тĕнчинче пурăнать. П. Яккусенĕн çак енне тĕпчесе калăплă ĕç çырни хальлĕхе çук. Çавăн пекех сăвăсенчи «пĕчченлĕх» кĕвви-туйăмĕ еплерех улшăнни çинчен, поэзири «вертикальлĕх» пирки те никам та нимĕн те каламан-ха.

Чăваш критикĕсенчен нумайăшĕ XX ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсем таранччен хăйсен шухăш-кăмăлне авторсене йышăнтарасшăн пулни çинчен çӳлерех палăртнăччĕ. А.В. Лукин Л. Мартьянова сăввисене тишкерсе мĕнле пĕтĕмлетӳ тăвать-ха? «Çапах та, ман шутпа, поэтăн малашне ку (традицилле. – *Н.И.*) формăпа тăрăшарах ĕçлес кăмăлĕ пулсан, вăл çакна шута илтĕрччĕ: сăвă йĕркисем çирĕпреххĕн кĕвĕленсе пыччăр, рифма хĕмĕ те ялтăрарах тăтăр. <...> Пирĕн паянхи хĕрӳ те кăткăс пурнăçра кĕрешмелли те сахал мар. Апла тăк çакăнта хăватлă сасă, вилĕмсĕр Ç. Мишшин вĕрилĕх витĕмĕ кирлĕ. Темшĕн (именерех тăрать-ши) кун пек сăвăсем курăнсах каймаççĕ Л. Мартьяновăн»[47].

Л. Мартьяновăн та, кашни талантлă çыравçăн пекех, хăйĕн çыру еккийĕ, хăй саккунĕсемлĕ тĕнчи пур. Вăл састашсен туллилĕхĕ, ритмика вылявĕ патне ăнтăлмасть (ăна кирлĕ те мар). Мĕншĕн тесен унăн тĕп тĕллевĕ – *туйăм-шухăша вулакан патне çитересси*. Лирика героини вулаканран хĕрхенӳ мар – *ăнлану кĕтет*. Çавăнпа та Мартьянова калаçăвĕ туртăнса карăнтарнă хĕлĕх пек. Çемĕ «такăнни», кĕскен-кĕскен калани, предложени çур сăмахран татăлни – пĕтĕмпех çак сăлтава пула. Кунта эпир содержанипе форма чăннипех те уйрăлми çыхăннине куратпăр.

Пĕр енлĕрех, тӳнтер социологизмлă статьясен йышĕнчен Ю.М. Артемьев, А.П. Хусанкай, В.Г. Родионов, В.С. Чекушкин, М.А. Ставский, В.В. Степанов, С.Н. Сатур ĕçĕсем уйрăлса тăраççĕ. Ку тĕпчевсенче сăвăсен содержанине тĕпчессине маларах лартаççĕ пулин те, вăл е ку поэтăн уйрăмлăхне ăнланса илме тăрăшни лайăхах курăнать: «Поэта пĕр-пĕр темăпа çырма ятарласа хистени те, темăран пистерни те вырăнлă мар; ăна хăй кăмăлланă темăра хăйĕн тĕнчине уçма сунмалла, пулăшмалла. Ун чухне çеç поэзи пуянланать, ун чухне çеç вăл халăхăн нумай енлĕ ыйтăвĕсене тивĕçтерме пултарать. Хăш-пĕр критиксем сăвăçа часрах хальхи пин саслă саманана «пур енчен те» кăтартма хистеççĕ. Ку тĕллев вăл пĕтĕм поэзи ĕçĕ, поэт вара уйрăм çын. Унăн хăйĕн кураслăхĕ, куç хывас йӳтĕмĕ. Хăйĕн вăйлă енĕсене вĕçне çитерем тесе ĕçлекен уçă сасăллă поэт, сас анлăшне (диапазонне) уямасăр, пин-пин кĕвве юрласа сассине тытăнтарнă ăстаран усăллăрах та, илĕртӳллĕрех те»[48].

Пĕр статьяра В.Г. Родионов Ю.М. Артемьева литература спецификине шута илекен аналитик тишкерӳçĕ тесе палăртать[49]. Тĕпчевçĕ шухăшĕпе килĕшмесĕр тăма çук. Чăннипех те, анлă тавра курăм, литература спецификине лайăх пĕлни, çемçен асăрхаттарса калама пултарни Ю.М. Артемьева малти ретри критиксен шутне кĕртме ирĕк парать. Апла пулин те Л. Мартьяновăн «Шăнса кайнă этем хурăна касса ячĕ» сăввине вăл епле тишкерни пире тивĕçтермест. 1980 çулхи «Тăван Атăлта» (12 №) Л. Мартьяновăн пичетленнĕ сăвă ярăмне пăхса тухать те хайлавсене якатса çитермесĕрех е поэзи картне лартмасăрах пичете сĕннĕ тесе пĕтĕмлетет: «Çапах та темиçе сăвăра шухăш тăрăлса çитейменни е ăна çавăрса калама май килтерейменни хытах сарăплать сăвăçа». Тĕпчевçĕ тĕслĕх вырăнне илнĕ сăвă çаврисем çакнашкал:

Шăнса кайнă этем хурăна касса ячĕ.
Унта вырнаçнăччĕ пălан ав пăрулама.
Тарасшăнччĕ. Пултараймарĕ çав. Йăванчĕ...
Халсăрланнă. Ĕлкĕреймерĕ пăрăнма.

<…> Кама кам текен шухăшпа пурнаймастăп,
Ыр кăмăлпах-çке хăш чух хур тăван.
<…> Хушăран умри кăвайтпала ăшăнаймастăн.
Курăнать куç умне çав юнланнă пălан.

Çак хайлавра Ю.М. Артемьев этем йывăç-курăкпа чĕр чунсене шелсĕр, тискеррĕн пĕтернине сивлесшĕн пулнине çеç курать. Ун шухăшĕпе, пăланăн драми-инкекĕ çинчен калани кунта пĕр-пĕр калав е экологи проблемиллĕ очерк валли хатĕрленĕ эскиз пек анчах иккен. «Автор шухăш çунатне сарса эпика енне туртăнасшăн. Материалĕ ку поэма валли те çителĕклĕ пулас, анчах та ăна валли юрăхлă форма тупайман-ха. Çавăнпа та поэзи тени те пит сисĕнесшĕнех мар кунта»[50], – тесе вĕçлет хăй сăмахне критик.

Ку сăвăра пачах урăх шухăш пытарăннăн туйăнать пире, ăна «Ыр кăмăлпах-çке хăш чух хур тăван» текен пĕр йĕркерех тупма пулать. «Пурнăçра тем тĕрлĕ те килсе тухать. Тепĕр чух шутламасăрах, усал тĕллевсĕрех çынна вилмелле кӳрентерме пулать. Вара ун пек чух çитĕнӳ те савăнăç кӳрей-мест («...умри кăвайтпала ăшăнаймастăн. Курăнать куç умне çав юнланнă пăлан»), чунран айăп туйăмĕ каймасть», – тесшĕн пек туйăнать кунта Мартьянова героини. Вăл хăй те çапла такама сисмесĕрех кӳрентерсе курнă пулас.

Ытарлăн, çав тери аякран тепĕр шухăш шахвăртни те пур пек: вĕри туйăмсемсĕр шăнса хытнă савниййĕ лирика героини çумĕнче йăл илнĕ те асăрхамасăр ăна темĕнле питĕ хытă кӳрентерсе хăварнă (тен, унпа пĕрле çемьеллĕ, ача-пăчаллă пулас ĕмĕтне татнă). Анчах Мартьянова героини тавăрас кăмăлпа пурăнмасть («Кама кам текен шухăшпа пурнаймастăп»). Вăл тата çакна пĕлет: таçта çитсессĕн те, такампа пулсассăн та ăна макăртнине савниййĕ хăй те манаймĕ, «умри кăвайтпала» та ăшăнаймĕ.

Куратпăр, мĕн тĕрлĕ шухăш çуратмасть ку пĕчĕк хайлав. «Эп сана саваттăм, çĕрĕпе çывраймастăм – эс мана пăрахрăн, чун-чĕрем çунать», – тесе тӳррĕн лаплаттарса хурсан: «Поэзи картне ларман, юрăхлă форма тупайман-ха», – теме пултараттăмăр. Л. Мартьянова тĕслĕхĕнче вара шăпах чăн-чăн поэзи калаçать, шалти ырату пирки кунтан ытарлăрах, илемлĕрех, çуттăнрах та витĕмлĕрех калаймăн та. «Тарасшăнччĕ», «пултараймарĕ», «йăванчĕ», «халсăрланнă» сăмахсем хыççăнхи тăхтавсем хăйсемех мĕн чухлĕ тарăнлăх çуратаççĕ...

Эппин, пĕр-пĕр сăвăçăн чун тăрăмне, унăн тĕнчине ăнланасси сумлă критиксемшĕн те çăмăл ĕç мар. П. Эйзин, Л. Мартьянова, П. Яккусен тата ытти сăвăçсен пултарулăхне

шкул программине те кĕртнĕ, анчах материалсем çукрах. А.П. Хусанкайăн «Поиск слова» кĕнекине асăнтăмăр, çыравçă пултарулăхĕн тĕшшине тупса палăртма çак тĕпчевçĕ пултарать терĕмĕр. Анчах поэт пултарулăхĕ пирки 2–4 страница çеç калани çителĕксĕртерех. Ку ĕç хăçан тухнине те манмалла мар – 1987 çулта. Унтанпа çирĕм çул ытла иртнĕ: авторсем çĕнĕ сăвăсем хайланă (вăхăтсăр çĕре кĕнĕ А. Аттил пирки, шел пулин те, апла калаймастпăр), кĕнекесем кăларнă. Уйрăм ятсем çинче чарăнарах тăма, чăваш лирикине тарăнрах тĕпчеме мехел çитнĕ-тĕр...

# II. ЧĂВАШ СĂВĂÇИСЕН ПУЛТАРУЛĂХĔ

## 2.1. *«Сукмакăм ман – тасалăх айĕнче» (1950–1960 çулсенчи сăвăри çĕнĕлĕхсем тата П. Эйзин пултарулăхĕ)*

1950–1960 çулсенче совет литературинче пысăк улшăнусем пулса иртрĕç. Унччен темиçе вунăçуллăх хушши сăвăсенчи сăнар ытларах чухне хастар хавallă класс кĕрешӳçи пулнă пулсассăн, 1950 çулсен вĕçĕсенчен этемĕн шалти тĕнчипе кăсăкланасси, онтологи ыйтăвĕсене хускатасси вăй илет. Вăл вăхăтра вырăс поэзийĕн хутлăхĕнче Р. Рождественский, Е. Евтушенко, А. Вознесенский, Б. Ахмадулина, Н. Рубцов, тутарсен – Р. Файзуллин, Зульфат, Г. Рахим, пушкăртсен Р. Бикбаев тата ытти сăвăçсен ячĕсем палăрнăччĕ. Çын чунĕн илемлĕхĕпе тарăнлăхĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Коммунистсен правительстви мĕн сĕннипе килĕшсе майлă шăлма мар, юхăма хирĕç ишме, кашнине хăй пек пулма, иксĕлми-кивелми кăмăл-сипет виçисем патне таврăнса чун хушнă пек пурăнма вĕрентнĕ вĕсем вулакана.

Тутар тĕпчевçи М.В. Небольсина та çакнах çирĕплетет. Ун шухăшĕпе, кашни çын пĕлтерĕшне пысăк хак параси, ун харпăр тивĕçлĕхне хисепе хурасси çав вăхăтри поэзин тĕп хавхи пулнă[51].

Çакнашкал улшăнусем чăваш литературинче те 1950 çулсен вĕçĕнче – 1960 çулсен пуçламăшĕнчех палăрнă. Çĕнĕ варкăш кĕртекенĕ Г. Айхи пулнă пирки пирĕн критиксемпе ăсчахсем тавлашсах каймаççĕ. «Пĕтĕмпех Айхирен пуçланнă. Саманташа лайăхрах пĕлес-ăнланас ĕçĕн кăткăслăхĕпе тарăнлăхне уçса паракан сăмах патне хыпашла-хыпашла çулйĕр шырани пултарулăх аталанăвĕнче сăвăçшăн пĕлтерĕшлĕ пусăм пулса тăнă»[52].

Чун-чĕре вăрттăнлăхĕсене уçас çулсен шыравĕ сăвăлла хайлавсен кӳлепинче палăрмасăр юлма пултарайман (ытти литература тĕсĕсемпе танлаштарсан, лирикăра содержанипе форма тачă çыхăнура пулни пирки маларах каланăччĕ). В.Г. Родионов Айхин 1950 çулсенчи çыру ăсталăхĕнче темиçе çĕнĕлĕх тупать: «Акă 1954 çулта Г. Айхи састашсăр (шурă) сăвăсем çырма пуçăнать. Çавăн йышши сăвăра классикăлла тăвата йĕркеллĕ çавра та тĕл пулмасть»[53], – тет. Тĕпчевçĕ Айхи сăввисенче çав вăхăтчен чăваш поэзийĕнче пулман çемĕ пуррине палăртать. Çак çĕнĕ стиль чи малтан интимлă лирикăра вăй илнине асăрхать.

Айхи 1954 çулта хайланă сăввинче тепĕр хăйне евĕрлĕх курăнса каять: поэт йĕркесене яланхилле пысăкран мар, пĕчĕк саспаллисемпе пуçлать. Г. Айхи çавра тăвас ĕçре те ыттисенчен уйрăммăн курăнса тăнă. Акă «Хулари çур кунĕ» (1956) сăвва вăл 2, 7, 8, 15 йĕркеллĕ çаврасем кĕртет, сикчĕсемпе (цезурăсемпе) интонаци тăвас ĕçре ăнăçлă усă курать. 1957 çултан пуçласа Г. Айхин «ирĕклĕ сăвăсем» те шăранса тухаççĕ («Пĕрремĕш юр каçĕ»).

Г. Айхи чăваш сăввин синтаксисне, унăн интонацийĕпе çеммине куçарусене пула та («Франци поэчĕсем» антологине куçарнă чух) улшăнусем кĕртнĕ тесе шутлать В.Г. Родионов. Айхи витĕмĕ чăваш поэзийĕнче 50-мĕш çулсен вĕçĕнченех палăрма пуçлать иккен. В. Тимаков, М. Сениэль, А. Аттил, П. Эйзин тата ытти çамрăк сăвăçсем Айхилле çырма тăрăшаççĕ, поэзире хăйне евĕрлĕ юхăм пуçласа яраççĕ. «Г. Айхи поэтикинче тĕрлĕ сăвăç тĕрлĕ енсене курнă. Чылайăшĕ классикăлла йĕркесене картлашкалантарнине, йĕркесене пĕчĕк саспаллипе пуçланине килĕштернĕ. Çаксем çемĕ йĕркеленĕвĕнче пысăк улшăнусемех тума пултарайман ĕнтĕ. Ытти çамрăк сăвăçсен хушшинче П. Эйзин пултарулăхĕ питех те оригиналлă курăннă. Поэт Айхи хыççăн форма шыравĕсен çулĕ çине тăрса тĕлĕнмелле тĕнчене çитсе кĕнĕ»[54].

Мĕнлерех «тĕлĕнмелле тĕнче-ши» вăл? Вăл вăхăтри сăвăçсем хайланинчен мĕнпе уйрăлса тăрать-ха П. Эйзин пултарулăхĕ?

«Халĕ çав пăнтăх тапхăрне пăхатăн та, ун чухнехи юрăсене итлетĕн те хĕрлĕ тĕспе кăвак тĕс ытлашшине куратăн, суя ноткăсене илтетĕн, – тесе çырать 1997 çулхи статьяра вырăс литература тĕпчевçи Л. Костюков. – Ытла

йăлтăр-ялтăр, ытла шавлă. Илемлĕхпе виçелĕх туйăмне, çепĕçлĕхе йăлтах пылчăк ăшне таптанă»[55] . Чăн-чăн поэтсем, Г. Айхи калашле, «çумра çĕр çын суять пулсассăн» та суйма пултараймаççĕ:

Çумра çĕр çын суять пулсан –
Пĕри ан суйтăр. Пуç ан тайтăр.
Тепри те тупăнĕ кайран *(«Хурав»).*

Çавăн пек çын тупăннă, вăл – Петĕр Эйзин. Унăн сăввисене ăнланас, вĕсен тупсăмне палăртас тесен поэтăн малтанхи кĕнекисем хăçан кун çути курнине аса илмелле пулĕ. «Сăвăçăмăр 70-мĕш çулсен пуçламăшĕнче е 60-мĕш çулсен вĕçнелле хăйĕн сассине тупнă. Çав вăхăтрах унăн хытах мар сасси – тантăшĕсемпе танлаштарсан – çирĕп ĕненĕвĕпе, çынлăхĕпе уйрăлса тăракан (ун чухне те, халĕ те) вăрттăн сасă. Хура тухатмăшсем тухатнă тавралăхри çутă пайăрки.

Тухатнă тавралăх тенĕрен, вăл ӳсĕнӳсĕр, пăнтăх тапхăра пĕлтерекен Эйзинла сăнар пулать ĕнтĕ. Эпир – çав тĕксĕм витĕр тухнă çынсем. Ун чухне чĕрĕлӳ вăй-хăвачĕ пурнăçра чакса пычĕ, çынсем пĕр-пĕринчен ютшăнса-пăрăнса çӳретчĕç, пăчă сывлăшра сăмахпа ӳнер хавшаса пыратчĕ»[56].

Çак сăвăçăн литературăри тӳпине И. Дмитриев тата витĕмлĕрех палăртнă: «Ун чухне эпир коммунизмăн тĕп лозунгĕсене – «пĕртанлăх, ирĕклĕх, тăванлăх» тенисене ĕненмесĕр тăма пултарайман. Анчах та пурнăçра вĕсене курман, хăйне, халăхне суяс темен поэтсем идейăсене мар, пурнăçа сăнланă, пурнăç хурлăхне, этем асапне кăтартнă. Çавăн пек поэт – П. Эйзин. Тĕрĕссипех каласан, ***пĕрисем айванла сăвăсем çырнă тапхăрта илем тĕнчине асап тĕнчипе çыхăнтарса этеме хӳтĕлекен, чуна тасатакан сăвă çыраканни вăл çеç пулнă***»[57] (уйăрни пирĕн. – *Н.И.*).

«Вара сăвăçăн хăйĕн чун ыратăвĕсене пĕтерме ятарлă ăслай шутласа кăлармалла пулнă. Çакăн йышши сăвăсен ярăмне „Айванлăх кĕввисем" тесе ят хурать, халăхăн авалхи юрăçин питлĕхĕпе витĕнсе киревсĕр япаласем çинчен тӳррĕн калаçма пуçлать. <...> Ятран никама та питлемест вăл (ку вăл поэзи тĕллевĕ мар), анчах ун пек чунсăр, хăрушă пурнăç йĕркине йышăнма пултарайманнине уççăн палăртать»[58].

Ҫак ҫӗр ҫинче камсем телейлӗ тетӗр?
Суккӑррисем ҫак ҫӗр ҫинче телейлӗ –
Вӗсем ҫак пурнӑҫ мӗнлине курмаҫҫӗ.
Эпир куратпӑр та...
Куҫ хуралса килет.
*(«Ҫак ҫӗр ҫинче камсем телейлӗ тетӗр?»)*

Чӑваш литературинче шухӑша аякран, ытарлӑн ҫавӑрса калама кӑмӑлланин сӑлтавӗсем халӑх сӑмахлӑхӗн хӑйне евӗрлӗхӗпе тачӑ ҫыхӑнса тӑраҫҫӗ. «Чӑвашӑн сӑмах культури авалтан шухӑша ытарлӑ палӑртасси патне туртӑннӑ»[59].

П. Эйзинӑн «Юр» сӑввине илес пулсассӑн, вӑл йӑлтах символсем ҫинче йӗркеленнӗ:

Юр
ҫырма хӳттине
пытанса выртнӑ –
чирленӗ динозавр пек
йывӑррӑн сывлать.
Ҫил те ҫиет ӑна.
Хӗвел те хӗрхенмест.
Ҫӗрле ҫеҫ
сурса ыратакан шӑм-шакӗ лӑш пулать.
Выртать юр,
ӗмӗрӗ иртнӗскер,
ниҫта кайса кӗме пӗлмесӗр.
Сип-симӗс курӑк ун тавра,
сар чечек,
шыв шӑнкӑртатать,
ҫӳлте тӑри хӗпӗртесе юрлать.

Юр – ют пуриншӗн те.

Пусӑрӑннӑҫемӗн пусӑрӑнать вӑл,
хавшанӑҫемӗн хавшать,
йӑшать,
пӗтсех пырать,
вилет *(«Юр»)*.

Ҫиелтен пӑхсан нимех те ҫук йӗркесенче тарӑн шухӑш, чун-чӗре ыратӑвӗ пытарӑннӑ. «Юр» сӑвӑ – символсем ҫинче йӗркеленнӗ хайлав. «Юр» – ахаль юр мар, вӑл лирика геройӗ хӑй пулас, «сип-симӗс курӑк», «сар чечек», «ҫил», «хӗвел» те – символла сӑнарсем. Ҫав сӑнарсем урлӑ лирика геройӗ ҫак тӗнчере хӑйне пӗр-пӗччен туйни пирки (ахальтен мар «Юр – ют пуриншӗн те» текен йӗркене уйӑрнӑ),

унӑн таса чунӗ никама та кирлӗ марри ҫинчен калать Эйзин. Пирӗн пурнӑҫ малашне те ҫаплах пулсан илем, динозаврсем пек, ҫӗр ҫинчен вуҫех ҫухалма пултарасси пирки систерни те пур.

«Шурӑ юр», «юр», «юр пӗрчи» сӑнарсем П. Эйзин пултарулӑхӗнче пысӑк вырӑн йышӑнаҫҫӗ. Тӗрлӗ сӑвӑра тӗрлӗ енчен уҫӑлаҫҫӗ пулин те, пӗлтерӗшӗ улшӑнсах каймасть: вӑл тасалӑх символӗ. «Шурӑ юр» сӑвӑра малтанхи йӗркесенчех хӗллехи ӳкерчӗк — юр ӳкни — тухса тӑрать:

Лапка-лапка
шап-шурӑ юр ҫӑвать,
лӑпка-лӑпка
чуна лӑплантарать.

Анчах:

Сукмакӑм ман —
тасалӑх айӗнче.
Пӗр паллӑ та тӑрса юлман халь.
Шур ҫиттипе витӗннӗскер,
те такӑр пулнӑ вӑл,
те тумхахлӑ?

текен йӗркесене вуласассӑн сӑмах шурӑ юр ҫинчен кӑна пыманнине, кунта тарӑн шухӑш пуррине сисетпӗр. Тен, лирика геройӗн (е общество) пурнӑҫӗнче темӗнле улшӑну пулса иртнӗ:

Ёнер
хура чӗлхипеле
пуплетчӗ пылчӑк:
«Эс манӑн пул.
Эп санӑн пулӑп.
Ан имен.
Куратӑн-и,
ав сар хӗвел —
кӳлленчӗке кӗрсе выртма
пӗрре те хӑрамасть вӑл.

«Ёнер» — совет саманинчи «пӑнтӑх» тапхӑрӗ, ҫав тапхӑрта этем «пысӑк механизмӑн» пӗр пайӗ («винтик») пулни ҫинчен ҫырнӑн туйӑнать: «Эс манӑн пул. Эп санӑн пулӑп».

Нумайăшĕ вăл вăхăтра чунпа кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен хуçăлнă: «...сар хĕвел – кӳлленчĕке кĕрсе выртма пĕрре те хăрамасть».

Суяс, йăпăлтатас, çăхав çырас мар текенсем – «йывăçсем» – хӳтлĕхсĕрччĕ, «çара уран та çара пуçăн». Çакнашкал тӳрĕ чунлă çынсене коммунизм тăвакан обществăра сума сумастчĕç: «шăнса кӳтнĕскерсем çул хĕрринче тăратчĕç».

Ĕнерхи каç тӳпе хураччĕ.
Çăватчĕ тĕттĕмлĕх –
çулсем çине,
чӳречесен çути çине.
Юр пĕрчисем ăна пĕлмеççĕ.
Вĕсем
тасалăх илсе килнĕ.

Хуралăх, икĕпитлĕх лачаки витĕр тухнă лирика геройĕ чунĕпе хуçălман, анчах питĕ ывăннă, аманса пĕтнĕ. Халĕ çеç тăнăçлăх патне çитнĕ:

Лапка-лапка
шап-шурă юр çăвать,
лăпка-лăпка
чуна лăплантарать *(«Шурă юр»)*.

Çак çаврана виçĕ хутчен калани, ыйтуллă, кăшкăруллă предложенисем çукки, интонаци лăпкăлăхĕ тата йĕркесем вĕçĕнче вăрăм тăхтавсем (паузăсем) пурри пуплев еккине калуллăрах тăвать, лирика субъекчĕ аса илнине, шухăша путнине ĕнентерет. Эппин, йывăр вăхăтсем чăннипех те хыçа юлнă, лирика геройĕн чунри çăмăллăхĕ те ăнланмалла.

Тепĕр сăвăлла хайлавра та – пурнăçри ахăр самана (е Сталин кульчĕ?) хыçа юлнине, «çĕрĕпе улакан, уракан, алăка пыра-пыра лăскакан, чӳречерен шаккакан тăвăл ир енне лăпланнине» куратпăр:

Тăтăм.
Тухрăм.
Тĕнчере
тĕлĕнмелле тӳлеклĕх.
Çил лăпланнă,
алăк умĕнче выртать вăл –
шăппăн,
урай çĕтĕкĕ пек,
хутланса *(«Çĕрĕпе уларĕ тăвăл...»)*

Лирика геройĕ кунта ĕнерхи хăратакан тăвăлăн – унчченхи «чаплă» влаçăн – пĕлтерĕшне кăтартать: тĕрĕссипе алăк умĕнчи ура шăлли çеç вăл.

П. Эйзинăн «Тĕрленчĕксем» тесе палăртнă кĕске сăввисенче уйрăмах символла сăнарсем нумай. Вĕсем урлă лирика геройĕ каллех никама та кирлĕ маррине, вăл пуриншĕн те ют пулнине куратпăр:

Кĕркунне.
Улăхра
пыл хурчĕ
чечек шыраса вĕçет *(«Кĕркунне...»).*

Тавралла чунсăрлăх, суялăх пуç пулса тăнă вăхăтра пурнăç «кĕркуннинче» лирика геройĕ («пыл хурчĕ») тасалăх, илем (тен, чун савнине) шырать.

Çак чăтлăхра –
таçта шалта –
çăлкуç пур.
Шыра.
Туп.
Ăш каниччен
ĕç *(«Çак чăтлăхра»).*

Çак чăтлăх евĕр тĕттĕм пурнăçра лирика субъекчĕн сăмахĕ («çăлкуç» – таса лирика) пур. Çавна шыра, туп, вуласа чунна лăплантар («ăш каниччен ĕç»). Эйзинăн геройне çынсене çăлма килнĕ Иисуспа танлаштарма пулать: йывăрлăха кĕрсе ӳкнĕ, тĕллев çухатнă, шанчăксăр юлнă çынсене ăшă туйăм тупма чĕнет вăл. Тепĕр сăвăра та çак шухăшах:

Каç.
Сивĕ.
Инçетре –
кăвайт –
кăчăк туртса чĕнет
çул çӳрене *(«Каç...»).*

Е тата:

Хура та пĕчĕк папкасем...
Çурхи тĕнчен мĕн пур илемĕ
пытарăннă вĕсенче *(«Хура та пĕчĕк папкасем...»).*

«Папкасем» – çиелтен пăхсан ыттисенчен нимĕнпе те уйрăлса тăман, анчах чунлă, пурнăçне тĕрĕс пурăнса ирттернĕ çынсем.

Шухăша ытарлă, аякран çавăрса каласси паянхи чăваш лирикинче ытти сăвăçсен те пур, çапах Эйзин поэтикине символсем уйрăмах витерсе тăраççĕ. Унăн тăтăш тĕл пулакан символла сăнарĕсен шутĕнче çаксене асăнма пулать: *юр, хурăн, тумлам, кăвайт, çил-тăман, мăкăнь, пĕлĕт, уйăх, курăк, çиçĕм, çулçă, хĕвел, юпа, чечек, сурăх, сивĕ, сукмак, эрешмен, пахчаçă, чул, тӳпе, çумăр* т.ыт.те.

Поэтăн символĕсене виçĕ ушкăна уйăрма пулать:

1) тĕттĕмлĕхе, усаллăха пĕтĕçтерсе тăракан сăнарсем – *пылчăк, сурăх, çумăр, тĕттĕм, сивĕ, пăр* т.ыт.те;

2) çутта, илеме, ырра калăпласа тăраканнисем – *чечек, уйăх, юр, кăвайт, тумлам, тӳпе, курăк* т.ыт.те;

3) хутăш, усалпа ырă хушшинчи, сăнарсем. *Хĕвел,* сăмахран, хăш чух çутă, ăшă кӳрет, тепĕр чухне *юра* (тасалăх символĕ) вĕлерет, «кӳлленчĕке кĕрсе выртма пĕрре те хăрамасть». *Çил* – йывăр самантсенче лăплантаракан сăнар («çил ачашлăхĕ вĕçсе çӳрет»), тепĕр тĕслĕхре юлашки *çулçа* та (шанчăка?) вăтăрса каять.

Лирика геройĕн пуплевĕ Турă Ывăлĕ вĕренекенĕсемпе калаçнине аса илтерет: малтан шухăшне ытарлă палăртать, никам та ăнланманнине кура юлашкинчен тӳсеймест, тӳррĕн каласа хурать. Тĕслĕхрен, «Аркану» сăвва илес пулсан, малтанах лирика геройĕн сăмахĕ пытарăнчăклă («тӳпе», «каç», «çиçĕм», «тĕттĕм», «çумăр» сăнарсен пĕлтерĕшĕ уçăмлах мар). Унччен ытарлă каланине кайран уççăн пĕлтерет:

Кăнтăрла
сирĕн мăнаçлăхăр çине
пырса тăрăннă çын
каçхи урамра
хăйне хăй шыраса çӳрени
сирĕншĕн пурпĕрех.
Эп кăшкăртăм:
– Ăçта чунăр?!

Тĕпчев пуçламăшĕнче (I сыпăкра) эпир хайлавсенчи содержанипе форма çыхăнăвне тимлеме тĕллев лартнăччĕ. «Аркану» сăвва пăхсассăн мĕнлерех ӳкерчĕк курăнса каять-ха?

Çак хайлавра та П. Эйзин поэзийĕнчи «тĕнче йышăнманни» текен тĕп кĕвĕ-çемĕ илтĕнсе тăрать. Лирика геройĕ сĕмсĕрлĕх, чун пушăлăхĕ, ултав-суя хушшинче пач пĕччен. Ăна сывлăш çитмест, хупăрласа тăракан тĕнче хĕсĕнсе те хĕсĕнсе пырать («тăвăрланать тĕнче»). Чуна пусаракан, ăсрантăнран яракан шăплăх. Ку тĕслĕхре шăплăх вăл «каç шăплăхĕ» кăна мар – общество чĕмсĕрлĕхĕ, усал умĕнче чĕнмесĕр пуçа пĕксе тăни. Тулаш тĕнче чун-чĕрене пăчăртать – шалта пăлхав çĕклеттерет. Сăввăн шухăш аталанăвĕ кăна мар çакă, вăл хайлавăн янăравĕнче, тытăмĕнче (композицинче), çемĕ йĕркеленĕвĕнче ӳкерĕннĕ.

Шăплăх...
Шаккать.
Шаккать,
аллинче
хура мăлатук.

Шăплăх...

Тăнлав сунталĕ çинче
Сăмахăма туптать шăплăх.

Тĕттĕм.

Тĕпсĕр мачча,
Хура çăварлă мачча
Кĕç-вĕç кăшкăрса ярас пек,
Кĕç-вĕç ишĕлсе анас пек.

Тĕттĕм.

Шăплăх хăрать.

Шăплăх
чан çапать
хăлхара.

Йывăр...
Йывăр...
Тăвăрланать тĕнче.

Сӳнетĕп.

Çунатăп.
Ванатăп.
Пĕччен.

Пĕр составлă предложенисем («Шăплăх», «Тĕттĕм», «Йывăр», «Сӳнетĕп» т.ыт.те), çурма сăмахран татăлакан çаврăнăшсем нумаййи талккăш хĕсĕнсе те хĕсĕнсе пынине витĕмлĕн сăнарлать, мăй çинчи мăйкăч туртăннă пек. Пĕр сăмахах темиçе хут калани шухăша пусăмлама кирлĕ: «шăплăх» – пилĕк хутчен, «тĕттĕм» – икĕ хутчен, «йывăр» – икĕ хутчен тĕл пулаççĕ.

Ĕç-хĕлсем (глагол) пĕрин хыççăн тепри мĕнле сыпăнса-аталанса пыни те («шаккать» – «туптать» – «чан çапать») лирика геройĕн шалти тăрăмне уççăнрах куç умне кăларать: ĕç-пуç хĕрсе пынăçем ăна сывлама, пурăнма йывăрланса та йывăрланса пырать.

Сăвăри сасăсем пирки В.В. Кожинов çапла калать: «Сасăсем нумай пĕлтерĕшлĕ: кашни сăвăра вĕсем уйрăм сĕм йышăнаççĕ. Унсăр пуçне, тĕрлĕ сасă вылявĕ сăввăн кĕввийĕпеле çураçулăхне йĕркеленĕ çĕрте хутшăнать»[60]. Ку тĕслĕхре «т», «к», «п», «с», «ш» хупă сасăсем час-часах илтĕнни темле хупăлăх, питĕрĕнчĕклĕх, çул çуклăх патне илсе пынăн туйăнать – лирика геройĕн унччен палăртнă шалти тăрăмне тата та вăйлатать тейĕн. Чун чĕлĕхĕсем татăлса кайни тăватă йĕркеллĕ строфоидра («Тĕпсĕр мачча...») пулса иртет.

Каллех сасăсен сĕмĕ улшăнать: «ч» тата «ç» (нейтраллă хупă сасăсем) малти вырăна тухаççĕ, «ч» – тăватă хутчен, «ç» – пилĕк хутчен тĕл пулать. Çине-çинех «пек»* сăмаха калани лирика геройĕ темĕнле чикĕре пулнине, вăл хăйне хăй алра аран тытнине ĕнентерет.

Пĕрремĕш кульминацилле строфоид хыççăн ĕç-пуç вĕçленмест – интонаци чакать те çĕнĕрен вăйланса тепĕр карт таран хăпарать. Строфоид мĕнлерех вырнаçнине схема тăрăх пăхар.

Кульминацилле строфоидран çӳлерех вырнаçнă сăмахсем, куç кĕски çине пăхнăн, аяларахри сăмахсемпе пĕр – çапла виçĕ хут ункă пулса тăрать.

Пĕлтерĕшлĕ шухăш пытаннă сăмаха е сăмах çаврăнăшне П. Эйзин уйрăм йĕркене лартать; вăл анчах мар, çӳлтен те, аялтан та пуш вырăн хăварса уйăрать.

---

* П. Эйзин пултарулăхĕнче «пек» сăмахпа усă курни палăрăмлă ен: лирика геройĕ ялан темĕнле чикĕре пулнине кăтартса парать вăл. III сыпăкра «чикĕри тăрăм» пирки калаçу пулĕ.




Кунта «йывăр», «сӳнетĕп», «çунатăп», «ванатăп» сăмахсенчен тăракан пĕр составлă предложенисене юпа пек вырнаçтарни туйăм улшăнăвне, ĕç хăвăртлăхне – сăвă экспрессилĕхне – ӳстерет. Çапла лирика геройĕ темĕнле ахрата ӳкнĕ евĕрех туйăнать.

Юлашкинчен каллех уйрăммăн «пĕччен» сăмах тăрать. Вара эпир лирика геройне мĕншĕн çав таранах йывăррине ăнланса илетпĕр: вăл – тăр пĕччен. Кунта, паллах, тăванпĕтен, юлташ çуккипе çыхăннă пĕчченлĕхпе асапланнине мар, тĕрĕслĕхе, чăнлăха калакансем çумра çуккишĕн чун ыратнине курмалла. Сăвă малалла аталанать:

Пӳлĕм çывăрнă.
Эп кăна.
Мăйран
çĕклемĕн-çĕклемĕн
тĕрлĕ йывăрлăх
килсе уртăнать.

Акă каллех сасăсем улшăнаççĕ. Сонорлă хупă сасăсем «купаланаççĕ»: «л» – пилĕк хутчен, «н» – ултă, «м» – тăватă, «в» – икĕ, «р» – пилĕк хутчен тĕл пулаççĕ.

Çиçĕм çиçет, «кантăк витĕр ялтăртатса кĕрет» – лирика субъекчĕ ункăсене тататъ, чун ирĕке тухать те, «алăсем, куççем таçта ывтăнаççĕ», «урасем тухса тараççĕ», «тулта каç айкашма, ташлама» тытăнать.

Шалкăм çумăр тăкнă пек йăлт тулса тăкăнса кайни содержанире çеç мар, формăра та ӳкерĕнет. Предложенисем вăрăмланаççĕ, поэзи шухăшĕ сăмаха та, йĕркене те, строфоида та вырнаçаймасть; пусăмсем кайри сыпăксем çине ӳкме пуçлаççĕ (тулаша тухни мар-и). «Каç», «каç», «каç» тени çеç илтĕнет. Ку сăнар «тĕттĕм» сăнарĕпе пĕр мар, çур çĕр çитнĕ вăхăт пулас. Каçпа ир, тĕттĕмпе çутă чикки... Лирика геройĕн чунĕнче пысăк улшăну, унччен çывăрса ларнине аркатнин вăхăчĕ...

Икĕ хутчен «тулта» тесе калать автор. Предложенисем вĕçĕнчи сикчĕсем вăйсăр пулни мĕн каланине пĕр сывлăш хумĕпе кăларнăн туйăнать:

Тулта
аслатипе ыталашса
айкашакан каç.
Тулта
çуртсем тавра
пăлхавçăсем пек тĕпĕртетсе
ташлакан каç.
Лăпкăлăха
уртарса янă каç.

_ _′
_ _ _ _′ _ _ _ _′
_ _ _ _ _′ _′
_ _′
_ _′ _ _′
_ _ _ _′ _ _ _ _ _′
_ _ _′ _′
_ _ _ _′
_ _ _′ _′_ _′

Интонаци 14 йĕркеллĕ строфоид таран хăпарать. Кунта каллех кульминаци пулать те, сасă вăйсăрланать:

Кăнтăрла
сирĕн мăнаçлăхăр çине
пырса тăрăннă çын
каçхи урамра
хăйне хăй шыраса çӳрени
сирĕншĕн пурпĕрех.
Эп кăшкăртăм:
– Ăçта чунăр?!
Чул хӳме
Сăмаха

тапса ячĕ калла.
Юлашки сисĕмлĕхĕм
хурçă хĕлĕх пек туртăнчĕ,
улама тытăнчĕ йытăлла.

Тепĕр 10 йĕркеллĕ строфоидра «тӳпе каçса кайсах кулнине» куратпăр. Тӳпе кулни анчах мар, вăл каçса кайса ахăлтатни çемĕ вылявне пăхсан та курăнать:

Тӳпе кулать.
Тӳпе
каçса кайсах кулать,
măн сассипе янăратса
пĕлĕт ĕçкиллĕ кĕрекине.
Тӳпе кулать.
Тӳпе
ман евĕрлех кулать
пĕрремĕш çумăртан та
киле тарса кĕрекенрен.

1) - -′ - -′
2) - -′
3) - -′ - -′ - -′
4) - - - -′ - - - -′
5) - - - -′ - - - - -′
6) - -′ - -′
7) - -′
8) -′ - - -′ - -′
9) - -′ - - - -′ -
10) - -′ - -′ - - - -′

Ямб сăвă виçи «ха-ха′», «ха-ха′» тесе кулнăн илтĕнет. Пусăм ӳкмен картсем те (4-мĕшпе 5-мĕш, 9-мĕшпе 10-мĕш йĕркесенче) сывлăш çавăраймасăр антăхса ахăлтатнине евĕрлеççĕ тейĕн. 8-мĕш йĕркере (1 карт) пусăм малалла сикет – лирика геройĕ «ман» сăмаха пусарах каланипе: «Тӳпе мар, эп хам çапла кулатăп» – тесе вулакана систерет.

Çапла «Аркану» сăвăра эпир лирика субъекчĕ сывлама, пурăнма чарса-пусарса тăракан ункăна (ункăсене) татса тухнине сăнарăмăр. Хайлав вĕçĕнче лирика геройĕ хăйне хăй çĕнтернипе хавхаланнин, хăпартланнин сцени – ку вăл, тĕрĕссипе, вĕçлев мар, тепĕр шая çĕн вăйпа çĕкленмелли тапхăр.

Вулав тăршшĕпех интонаци улшăнса пырать: лирика геройĕн чун-кăмăл тăрăмĕ мĕнлерех пулнине кура вăл пĕр

вăйланать, пĕр чакать, час-часах пăшăлтатупа чикĕленет. Çакна пĕтĕмпех çемĕ вылявĕ, тĕрлĕ йĕркеллĕ строфоидсем, сасăсен (уйрăмах сонорлă ытти хупă сасăсен) черетленĕвĕ лайăх кăтартса парать. Содержанипе форма пĕрлĕхĕ хăй хальлĕнех ирĕклĕн пулса пырать.

Эйзин лирика субъекчĕ яланах çул çинче, тăршшĕпех ырăпа усал чиккинче. Сăвăсенче тасалăхпа çутăшăн тунсăхлакан черченкĕ чунăн ыратăвĕ сисĕнет, тепĕр чух вăл темĕнле читлĕхе лекнĕ пек те туйăнать. Анчах герой, маларах палăртрăмăр ĕнтĕ, яланах ункăна татса тухать. Çапла Эйзинăн нумай сăввинче кĕрешĕве асăрхатпăр. Тулаш вăйсемпе кĕрешни мар вăл, чун çывăрса, нишленсе каясран хăйпе хăй кĕрешни, хăйнех çĕнтерни.

* * *

Петĕр Эйзин поэзийĕшĕн виçе пуянлăхĕ кăтартуллă. Унăн пултарулăхĕнче классикăлла формăсемпе пĕрлех *верлибр* («ирĕклĕ сăвă») тĕп вырăн йышăнать.

Паянхи кунччен «верлибр» текен сăвă хывăма литература пĕлĕвĕнче тĕрлĕрен ăнлантараççĕ. Çавăнпа та Эйзин верлибрĕ пирки сăмах пуçличчен çак ыйту çинче кăшт чарăнсарах иртсессĕн те ытлашши пулассăн туйăнмасть.

Литература энциклопедийĕнче «ирĕклĕ сăвва» çапла ăнлантарнă: «...верлибр (франц. Vers libre) – термин, определяющий широкий круг явлений в стихосложении XX в. Основным признаком всех типов свободного стиха является членение на строки, графически расположенные как стихотворение, и их ритмико-звуковая соотнесенность»[61].

Ю. Орлицкий тĕпчевçĕ шучĕпе, «ирĕклĕ сăвва» ăнлантарнă çĕрте сахалтан та виçĕ расна курăм пур.

*Пĕрремĕш* курăмĕ, чăн маларах пулса кайни. Верлибр шутне силлаботоника виçипе пĕр килмен хуть мĕнле сăвă пулăмне те кĕртнĕ (тĕслĕхрен, В. Маяковский рифмăласа тоникăпа çырнă сăвăсене те «ирĕклĕ сăвă» тенĕ).

*Иккĕмĕш* курăм. «Ку чухне хайлав тытăмĕ коллаж евĕрлĕ: кашни пайне литература пĕлĕвĕнче унччен çырса кăтартнă пĕр-пĕр сăвă виçи шутне кĕртме пулать. Çапла тĕрлĕ виçе пĕр текстрах черетленсе пыни верлибр пулать»[62].

*Виççĕмĕш* курăм. Ирĕклĕ сăвă харкам, хăй хальлĕ виçе. «Вăл наци сăвă виçине те, сăвă хывăмăн традицие меслечĕ-

сене те хирĕçлет, çавăн пирки наци сăвă культурин аталанăвĕн уйрăм тапхăрĕнче çеç çуралма пултарать»[63].

Пирĕн литература пĕлĕвĕнче верлибр фольклортах тĕл пулать текен шухăш пĕрре мар курăнать. Тĕслĕхрен, чăваш халăх сăмахлăхĕнче, Г. Юмарт шухăшĕпе, «ирĕклĕ сăвă» тахçанах тымар янă[64].

Н.И. Иванов çапла калать: «Сăвă теорине ирĕклĕ сăвă XX ĕмĕр пуçламăшĕнче кĕнĕ. Паллах, çакă вăл ирĕклĕ сăвă унччен пулманнине пĕлтермест. Сăвви чăн та пулнах ĕнтĕ. Ăна асăрхамасан та пултарнă. Çирĕп йĕркене пăхăнман çыруллă сăвăра урăхла япаласем палăрма тытăнсан кăна «ирĕклĕ сăвă» («свободный стих») теме пуçланă. Халăх сăввинче мĕн пуррине шутламан та. Ăна самана виçипе виçсе картмасăр тăнă»[65].

Г. Айхи шухăшĕпе, «ирĕклĕ сăввăн» хăйне евĕрлĕ паллисене кирек мĕнле халăх сăмахлăхĕнче, кирек мĕнле аваллăхра çителĕклех тупма пулать. «Пирĕн măн кĕрў такмакĕ, сăмахран, “ирĕклĕ сăвă” виçисемпе виçсен “ирĕклĕ сăввах”. Анчах та эпир ăна литературăри паянхи пĕлтерĕшпе ”ирĕклĕ сăвă” теме пултараймастпăр. Ку япалана халăх хăех ”такмак” тесе палăртнă: унăн форми – речитативлă такмак сăмах форми. Ирĕклĕ сăвă традицилле сăвă тытăмĕсемпе уçăмлăн ”кĕрешсе” пуçланать»[66].

В.Г. Родионов курăмĕ çўлерех палăртнă тĕпчевçĕсен шухăшĕсенчен раснарах: «Çĕнĕлĕх-и е традицине аталантарни» статьяра çĕнĕлĕх тени хăйне хăй пулманни, çав ăнлавра таçта традици пурри туйăнса тăни пирки калать. Тĕпчевçĕ шухăшĕпе, çĕнĕлĕх тĕрлĕрен пулма пултарать. «Поэт еплерех майпа – пĕтĕмĕшле традицие хирĕçлесе е унăн хальхи вăйлă енĕсене сивлесе – новатор пулса тăрать? Эйзин поэзийĕ çинченех калар-ха. Вăл пĕтĕм литература традицине мар, классикăлла поэзи традицине çеç йышăнмасть, çав хушăрах халăх поэзийĕн традицийĕсене ăша хыватъ. Паллах, çĕнĕлле пăхать вăл фольклор çине. Анчах та классикăлла традицие аталантараканĕсем те традици çине çĕнĕлле пăхаççĕçке! Çавăнпа та Эйзина традицие çĕнетекенĕ тесех калас килет. Вăл ыттисем пек классикăлла поэзие мар, халăх поэзине çĕнетет. Çакăнта уйрăмлăхĕ. Çапла вара, классикăлла поэзи енчен пăхсассăн, Эйзин – новатор, халăх поэзийĕ енчен пăхсан – традицие аталантаракан»[67].

Чăваш поэзийĕнче сыпăклă-пусăмлă хывăм (силлаботоника) виçине никĕслекенĕ Çеçпĕл Мишши пулни пуриншĕн те паллă (1920 çулта вăл «Сăвă çырассипе ударени правилисем çинчен» ятлă статья пичетлесе кăларнă). Апла литературăри эпир пĕлекен верлибр та çак самант хыççăн çеç çуралма пултарнă. Чăн-чăн «ирĕклĕ сăвă» тĕслĕхĕ шăпах Çеçпĕл пултарулăхĕнче тĕл пулать те («Кĕпер хывăр!», «Выç псалом»).

Каярахри тапхăрта, 1950 çулсен варричченех, пĕтĕм совет литературинче, вăл шутра чăваш поэзийĕнче те, верлибр çукпа пĕрех. В. Рогов тĕпчевçĕ шухăшĕпе те, 1920 çулсем хыççăн вырăс совет поэзийĕнчен верлибр хĕрĕх çуллăхах çухалать, куçаруçăсенче çеç тĕл пулкалать[68].

Çав вăхăтра «ирĕклĕ сăвă» Г. Айхин çеç «курăнкаласа илнĕ» («Вăранас умĕнхи тĕлĕксем», «Пĕрремĕш юр каçĕ»). Анчах «чăваш поэзийĕнче вăл пуринчен те маларах П. Эйзин пултарулăхĕнче палăрчĕ»[69].

Ирĕксĕрех ыйту çуралать: çак формăна суйласа илесси мĕнпе çыхăннă-ши, хăш çулсенче вăй илет-ха вăл? Тимлĕрех пăхсассăн *верлибр сăвă виçи мала тухни лирика геройĕн чун шыравĕпе тӳрремĕн çыхăннине куратпăр.* Обществăра кисренӳсем пулса иртнĕ, хаклăхсем айăн-çийĕн ылмашăннă вăхăтра вăй илет вăл: 1920 çулсем – революци хыççăнхи тапхăр, 1950 çулсен вĕçĕ – Сталин культĕ вăйсăрланнă тапхăр, 1990-мĕшсем – çĕн йĕркелӳ (перестройка) хыççăнхи тапхăр.

Асăннă сăвă виçине суйласа илесси геройăн шалти тăрăмĕпе çыхăннă тенине ĕнентерме Çеçпĕлех илме пулать. Поэт хăйне халăхăн уйрăлми пайĕ пек йышăннă чухне, хĕвеллĕ ырана çирĕп шаннă вăхăтра – сăвăсем сыпăклă-пусăмлă хывăм виçипе çырăнаççĕ. Лирика геройĕ хăйне тăр пĕччен туйнă самантра, депресси вăхăтĕнче калаçу екки урăхла хывăнать: ритмика çыпăçулăхĕ, рифма туллилĕхĕ çухалать, «ирĕклĕ сăвă» çуралать. Ирĕкли ирĕклĕ те – шалта туртăнса карăннă чун хĕлĕхĕсем кĕç-вĕç татăлса каясла янăрани илтĕнсе тăрать Çеçпĕлĕн... Айхин верлибр сăвă виçипе çырасси лирика геройĕ тунсăхланă, хăйне никама кирлĕ мар пек туйнă чухне пулса иртет. Тĕнче ăна ăнланманни, йышăнманни – Петĕр Эйзин пултарулăхĕнче тĕп кĕвĕ-çемĕ. Çавăнпа унăн пултарулăхĕнче «ирĕклĕ сăвă» малти вырăна

тухни тĕлĕнтермест те. Мĕнре-ши Эйзин верлибрĕн хăйне евĕрлĕхĕ? Наци сĕмĕ палăрать-и унта?

Çак сăвăçăн поэзи тĕнчинче ытларах «тап-таса верлибр» пуррине куратпăр: кунашкал текстсенче (уйрăмах тĕрленчĕксенче) сыпăклă-пусăмлă хывăм виçипе çырнă йĕрке тĕл пулманпа пĕрех:

| | |
|---|---|
| Ура айĕнче | – –* – – –* |
| пурăнать | – – –* |
| курăк – | –* – |
| çилпе çеç | – – –* |
| пăшăлтатса *(«Курăк»)*. | – – – –* |

Çав вăхăтрах Эйзинăн сыпăклă-пусăмлă хывăм виçипе шăрçаланă «ирĕклĕ сăвăсем» те тĕл пулаççĕ (ку тĕслĕхсене полиметри факчĕсем теме пулать):

| | |
|---|---|
| Юр кĕрет вĕреме. | – – –* – – –* |
| Чашкăрать, | – – –* |
| кĕрлет, | – –* |
| сипĕнет мĕнпур лăпкăлăх. | – – –* – –* –* – – |

Тата çакна палăртмалла: поэт уйрăм пайсене (фрагментсене) сăвă йĕркинчен сылтăмалла куçарса уйăрать:

Лапамра
пĕчченлĕхе юлнă юр çути.
Йĕри-тавра апрель
тата
лапра *(«Лапамра...»)*.

Тепĕр тĕслĕх:

«Айванлăх», –
тетĕп пек.
Эп ĕсĕклетĕп пек.
Вĕт çулçăсем те
темле пысăк пек... *(«Сывлăм тумламĕ»)*.

Çак пайсем пĕр-пĕрне хирĕçлемеççĕ. Тепре палăртар: лирика субъектне тĕнче йышăнмасть, ăнланмасть. Апла йĕркесене çапла икĕ юпан уйăрни тĕп шухăша пусарарах калама, чунра йывăррине илттерме кирлĕ пулас.

Пĕрре пăхсассăн, Петĕр Эйзинăн «ирĕклĕ сăввисем» ытлашши прозăлла пек туйăнаççĕ.

Эп çăвăнтăм,
тасалтăм.
Шаланкă пек вĕçсе хăпарчĕ чун
кăн-кăвак уçлăха –
тĕлĕннипе...
чĕлхесĕрленчĕ те...
чул муклашки пек персе анчĕ *(«Çырмара»).*

Анчах текстра тӳрех курăнакан çак прозăлăх чăн-чăн прозăри мар. Сăвăлла хайлава проза пек йĕркелесе çырсан çакнашкал ӳкерчĕк пулать: «Эп çăвăнтăм, тасалтăм. Шаланкă пек вĕçсе хăпарчĕ чун кăн-кăвак уçлăха – тĕлĕннипе... чĕлхесĕрленчĕ те... чул муклашки пек персе анчĕ». Пĕр сăмах улăштармарăмăр пулин те, поэзи техĕмĕ çухалчĕ. «Истинно поэтические произведения в манере верлибра никакой другой формой не передашь»[70].

Геннадий Айхи те çакнах калать, «ирĕклĕ сăвă» та ирĕклĕ мар, унăн хăйĕн канонĕ пур тесе çирĕплетет[71].

Аллитерацисемпе ассонанссем, анафорăпа эпифора, рефрен, йĕркелев, тĕрлĕ йышши параллельлĕх т.ыт.те Эйзин сăввисене чăвашлăх сĕмĕ кĕртеççĕ. Эппин, çак поэт пултарулăхĕ урлă наци верлибрĕ пирки те калаçма пулать.

Çапла вара пирĕн ума халăх сăмахлăхĕпе анлă усă курса кĕске формăллă «ирĕклĕ сăвă» çыракан автор тухса тăрать.

«Поэт нимех те каламасть пек çак çаврăмсемпе. Шутлатăн та: ”Пурнăç тытăмĕ вĕт ку”, – тетĕн. Поэт хăйĕн сăввисенче пĕчĕкшерĕн-пĕчĕкшерĕн пурнăç философине уçса парать... Хăйĕн пултарулăхĕпе П. Эйзин чăваш поэзийĕн хăйне евĕрлĕ енне уçать. Ку енчен ăна новатор теме те юрать. Поэтăн хăйĕн пултарулăх çулĕ, хăйĕн сăвă тытăмĕ, хăйĕн сăвă виçисем»[72].

Çапла Эйзин сăвви, чăваш поэзине усă варкăш пек вăркăнса кĕнĕскер, сывлăм тумламĕ пек таса, юр пĕрчи пек ачашскер пулнă. Эйзинăн хăйĕн тĕнчи, унти пулăмсем хăйсен чĕлхипе пуплеççĕ. Сăвăç çав чĕлхене ăнкарать, пире валли те куçарса парать: лăпкă та таса савăшу чĕлхине, çут çанталăк чунне туйма унăн сăввисене вуласа вĕренетĕн.

«Пăнтăх» тапхăрĕн социаллă-психологиллĕ пусăрăнчăк лару-тăрăвĕнче чăн сăмаха тӳрĕ пуплевпе калама пултарнă Петĕр Эйзин. Тăван халăха шеллесе, хӳтĕлесе этем асапне кăтартнă.

Чăвашăн шăпи çинчен шухăшласа, ăна ирĕклĕ, телейлĕ пурнăç пӳрменнишĕн хуйхăрса нĕрсĕр пурнăçа хăй йышăнма пултарайманнине пĕлтерет пире сăвăç. Пуян, чаплă çынсенчен пăрăнать вăл. Ĕмĕртен пыракан чăн-чăн поэт йăлипе – чухăнсемпе, мĕскĕнсемпе пĕрле пуласшăн:

Пуяннисем
кĕрекере шавланă чух
эп – чухăнскер –
тăратăп алăкран пăхса *(«Мăнаçлисем...»)*.

«Усала таса хăват çĕнтеретех. Петĕр Эйзин пултарăвĕ ăна хăйне, унăн чун ăшшине, Турă панă хĕмне упраса хăварма май панă.

Хăйĕн поэзири тивĕçне вăл Митта халалĕпе ытти аслă ӳсĕмри поэтсем умĕнче тĕрĕслесе тăрать, йĕри-тавралăха вĕсен куçĕпе сăнать, чăн хак парать. Хăй калашле:

....асаттесен вилĕмсĕрленнĕ куçĕсем
çиçе-çиçе илеççĕ те
чуна
ӳт витĕр шăтарса кĕреççĕ пек.

Эйзин сăмахĕ такамăн ури айĕнче вилмен, çилпе вĕçсе кайман, тухатнă тавралăхран ирĕке тухса халĕ те пире тĕрек парса тăрать. Хăйĕн вăрттăн вăй-хăвачĕпе, çĕнĕ илемлĕхпе. Шăплăхпа»[73].

### 2.2. *«Калла эп çаврăнса пăхатăп – Мĕн чухлĕ йышăнман сăмах!»* *(Любовь Мартьянова пултарулăх тĕнчи)*

«Хăш-пĕр критиксем Л. Мартьяновăна П. Эйзин шыраса тупнă çулпа каякансен шутне кĕртеççĕ. <...> Л. Мартьянова пултарулăхне П. Эйзин ячĕпе ахальтен çыхăнтармаççĕ пулĕ. Мĕнре-ши çак поэтсен пĕрпеклĕхĕ? Тата пур-ши вăл?» – тесе ыйту лартать С. Сатур. Çавăнтах хуравне те тупать: «Эппин, икĕ поэт хушшинче пĕрпеклĕх вĕсем иккĕшĕ те сăмах перекетлĕхĕпе унăн пĕлтерĕшĕн йывăрăшне шута илсе ĕçленинче анчах мар-ши?»[74]

Тĕпчевçĕ тунă çак пĕтĕмлетӳпе килĕшмесĕр тăма сăлтав çук. Çапах икĕ сăвăç хушшинчи çывăхлăх «вĕсем сăмах пе-

рекетлӗхӗпе унӑн пӗлтерӗшӗн йывӑрӑшне шута илсе ӗҫлениче» ҫеҫ мар пулӗ (тӗрӗссипе, ҫак пахалӑх вӗсен иккӗшӗн ҫеҫ мар, кашни чӑн-чӑн сӑвӑҫ ҫапла ҫырать, ҫапла ҫырма тивӗҫ те).

Поэтесса пултарулӑхӗнче, уйрӑмах малтанхи тапхӑрта, Эйзинӑнне аса илтерекен сӑмах ҫаврӑнӑшӗсемпе сӑвӑ хаписем, ӑслай-меслетсем пуррине хирӗҫлеме ҫук. Тӗслӗхрен, Эйзинӑн:

> Сана
> никам та
> юратми пулсан –
> кил ман пата *(«Сана никам та юратми пулсан...»).*

Л. Мартьяновӑн:

> Сана ман юрӑ кирлӗ мар пулсан –
> Кай.
> Сана ман ӗмӗт кирлӗ мар пулсан –
> Кай *(«Кай»).*

Анчах тӳрӗ, кӑнттам стилизаци мар кунта. Лирика героини тулса-капланса ҫитнӗ шухӑш-туйӑма тулаша кӑларма меллӗрех майсем шырать пулас. Ӑн айӗнчи шайра шырать. Ку чухне чуна чи ҫывӑххи вара уншӑн П. Эйзин тӗслӗхӗсем пулса тӑраҫҫӗ. Мӗншӗн-ши?

Ма тесессӗн Л. Мартьяновӑн, Эйзинӑнни пекех, пӗтӗм пултарулӑх хавхине витерсе тӑракан кӗвӗ-ҫемӗ пур. Вӑл – *лирика героинине тӗнче ӑнланманни.* (П. Эйзинӑн – тӗнче йышӑнманниччӗ). Ҫакна пулах малти вырӑна *сӑмах* тухать:

– йышӑнман пуш сӑмах;
– ӑнланман сӑмах;
– сивӗ сӑмах;
– йӳҫӗ сӑмах;
– каласа пӗтермен сӑмах т.ыт.те.

Тӳрех асӑрхар: ҫак икӗ кӗвӗ-ҫемӗ хушшинче ҫывӑхлӑх питӗ нумай пулсан та уйрӑмлӑхӗ те ҫук мар. Эйзинӑн «тӗнчи» хыҫӗнче общество тӑрать. Общество йышӑнманни – трагедин тӗп сӑлтавӗсенчен пӗри. (П. Яккусенӗн вӑл каярахри тапхӑрта палӑрать, А. Аттилӑн трагеди патне илсе ҫитермест. Ку ыйтусене каярах пӑхса тухӑпӑр.) Любовь Мартьянова пултарулӑхӗнчи «тӗнчене» вара, ытти «хӗрарӑм поэзийӗнчи»

евĕрех, арçын калăпласа-тытса тăрать. Пĕтĕмпех тенĕ пек «*лирика героини – арçын*» ятлă çыхăнăва пăхăнать: лирика объекчĕ çумра пулсан тавралăх та çураçура, килĕшӳлĕхре; вăл пулмасан – «ĕмĕлке юлать».

Çук, эсĕ кайсан,
Эсĕ манран пăрăнсан,
<...> Эп кăна пулмастăп,
Ĕмĕлке – юлать *(«Эс шутлатăн пулас...»).*

Поэтессăн лирика субъекчĕ хăйĕн савнине хăш чух идеал шайне çĕклет, чунне пама та хатĕр вăл çак самантсенче: калаçăвĕнче ачашлăх, çепĕçлĕх хуçаланать:

Сана телей çеç кирлине туйса
Эп хурлăхсем çӳретĕп пуçтарса.
Сана вĕсем нихçан та ан хуплаччăр.

Сана ачашлăх кирлине туйса
Сив туйăмсем çӳретĕп пуçтарса.
Сана вĕсем нихçан ан чăрмантарччăр
*(«Сан ыйхă килнине туйса...»).*

Анчах час-часах çепĕçлĕх хаярлăхпа (курайманлăхпа мар), сивĕлĕхпе, мăнкăмăллăхпа чикĕленме пултарать:

<...> Каяс текен – кайтăр,
Чĕнмес каялла.
Тĕнче-и мĕн ансăр –
Сулатăп алла *(«Каяс текен – кайтăр...»).*

Çак шалти хирĕçӳ тата хăйне ăнланччăр (шеллеччĕр мар!) тени Мартьяновăн лирика героинин шухăшлав еккинче ӳкерĕнет: вăл хире-хирĕçле аталанать, шухăш кĕтменлĕхĕ (парадоксĕ) те палăрать:

Куласшăн эп – эсĕ йĕретĕн,
Йĕресшĕн эпĕ – эс кулан,
Манмаллине – кĕтетĕн,
Кĕтмеллине – манан! *(«Ах, шухăшăм, эс – шухăш»).*

В.Г. Родионов каланă тăрăх, чун-чĕре гамми Л. Мартьяновăн пуян. «Анчах тĕсе куçнă чух вăл шурăпа хурана пайланса яланах контраст ӳкерчĕк туса хурать. Çакна палăртмалла: ун пек чухне лирика геройĕ яланах шурри енче

юлать»[75]. Малтанхи сăвăсенче асăннă ен чăннипех те палăрать: лирика героини «яланах шурри енче юлать». Тата лирика субъекчĕ çак тапхăртах хăйне май кăмăл-сипет суйлать, çав виçесенчен ĕмĕр тăршшĕпех пăрăнмасăр пурăнма хăйне сăмах парать: «Илемшĕн кăна килмен çĕр çине, çапах та илемлĕ пурнасчĕ» («Тĕтре витĕнсе тĕлĕрет măн çаран»); «Таса юласчĕ ĕмĕрех...».

Çирĕп кĕвĕсем илтĕнеççĕ ку чухне, лирика героини хăйне хирĕçлени курăнмасть. Апла пулин те каярахри тапхăрта çав тимĕрле çирĕплĕх, чăтăмлăх инерципе çеç пырать пулас. Мартьяновăн лирика субъекчĕ хăйне тăн-тăн тыткалани çиелти хупă çеç пулмалла. Шалта – кĕç-вĕç йĕрсе ярас пек аманчăк та черченкĕ чун. Тĕрĕссипе, хушăран-хушă çиеле те тапса тухать ырату: халтан кайнин, ывăнса çитнин кĕввисем илтĕнеççĕ. Ăшри хирĕçӳ, кĕрешӳ вĕт халĕ пушшех хаяр:

1) пĕр енчен, лирика героинин юратас, савăшура манăçас килет, тепĕр енчен, çапла хăтланма ăна чун мăнаçлăхĕ чарса тăрать;

2) лирика субъекчĕн вăйлă, çирĕп пулмалла (пурнăç çулĕ пуçламăшĕнче вăл тĕллевсем лартнăччĕ-çке-ха: «Сăмах патăн пулсан – пурнăçла»), анчах пур чухне те çапла килсе тухаймасть çав.

Пĕр çул çеç пулсан – йывăр пулĕччĕ,
Тăватă çул выртать тăват енне.
Найкăшап пулсан – йыт та кулĕччĕ,
Тăватă çул чĕнет тăват енне.

Авăтать куккук, авăтать куккук,
Хăмăшлăхра хăмăш авăнать.
Ав таçта, лере, вăрттăн, пĕччен чух,
Çĕр çурăласла кам-ши макăрать?
*(«Авăтать куккук, авăтать куккук...»)*

Ку сăвăра лирика героинин чĕринче икĕ хире-хирĕçле туйăм кĕрешни витĕр сăнарланнă: халтан кайса тӳнес, ĕсĕклес килни тата çынсен (ытларах хăйĕн) умĕнче мĕскĕнленес килменни.

Тăватă енне выртакан çулран пĕр еннелле илсе каяканни, хуть мĕн каласан та, лирика героинишĕн çăмăлрах пулмалла. Çапах вăл çак чăнлăха тăвать (каллех хăйне хи-

рĕçлени мар-и?). Кунта йăкăл-йăкăл курнăç çук: çӳлерех каланăччĕ ĕнтĕ, Мартьянова героини яланах çирĕп те вăйлă пулма хăйне хăй сăмах панă-çке.

Çакна палăртмалла: шалти хирĕçӳ, кĕрешӳ лирика субъектне ывăнтарса, айăн-çийĕн лăскаса пĕтернĕ кăна мар, вăл ăна хăратать те. Çапла «Эп – хăратăп» сăвăра унăн пĕтĕм шиклевĕ сисмесĕрех çиеле тапса тухать:

Эп – хăратăп.
Хăратăп.
Хăратăп.
Этемпе этемле пулаймасăр...
<...> Çухалса çĕтесрен те хăратăп.
<...> Уссăра каясран та хăратăп.
<...> Чулланса хытасран та хăратăп *(«Эп хăратăп...»).*

Тахçан малтан суйласа илнĕ кăмăл-сипет виçисене пурнăçлайманнинчен те, юратнă çын каллех ăнланмасăр иртесрен те, «хăрамасăр чăтма та» хăрать Мартьянова героини. Çавăнпах пулĕ вăл хăйĕн кашни утăмне сăнать, каличчен кашни сăмаха виçет, сăнать, пĕтĕмлетӳсем тăвать:

Пурнăçра шăплăхсем те-мĕн пулаççĕ урăхла.
Вĕсене те пĕлмелле-мĕн уйăрма
*(«Эп паллаймастăп ку ют шăплăха....»).*

Е тепĕр тĕслĕх:

Эп çеç ятлă тесе,
Эп çеç чаплă тесе
Усал шухăш пуçна
Ан та хур *(«Хура акăш пур...»).*

Çакăн йышши сăвăсем халăхра вĕрентсе, ăс парса каланисене – ваттисен сăмахĕсене – аса илтереççĕ. Анчах ăса вĕрентни Мартьянова тĕслĕхĕнче (Эйзинăн та, Яккусенĕн те çаплах) объекта пырса тивмест. Хăйне валли тунă шухăш пусăмĕ ку, çавна пулах дидактика пĕтĕмĕшле фон çинче куçа тăрăнмасть, вулакана чăркăштармасть.

Шалти хирĕçӳ тата хărав пысăк пулнăран пулĕ Л. Мартьянова сăввисем юхса-шăрансах пымаççĕ. Ритмика вылявĕ пуян: ăна тума пĕр çаврарах умлă-хыçлă черетленекен икĕ тата виçĕ картлă сăвă виçисем те пулăшаççĕ. Çапах

çак пуян ритмика та сăвăсен кĕвĕлĕхне ӳстерейместь. «Автор сăвăсен тытăмне çын хăйпе хăй калаçнă пек, хăй тĕллĕн шухăшланă пек йĕркелет»[76], – тет В. Тимаков.

Объектпала çыхăну тупас тени Мартьянова лирика героинине сăмаха кĕскен те вирлĕн калама хистет. Çакă сăвăсен калăпăшĕ тата вĕсене еплерех йĕркелени çинче ӳкерĕнет: текстсем ытларах виçĕ, тăвата е пилĕк çавраран тăраççĕ (ултă, çичĕ çавраллисем питĕ сахал тĕл пулаççĕ).

Нумай чухне сăмахсем пĕр-пĕринпе пĕрлешсе-хутăшса каймаççĕ, «сĕртĕнсе» çеç илеççĕ. Сăмахсем çапла пайăррăн тăнă чух вĕсен пĕлтерĕшĕ, йывăрăшĕ куçăмлăрах. Калаçăва хăват кĕрет: лирика героини хăйне ăнланман е ăнлансах çитереймен «тĕнчепе» калаçать-çке, унăн ăна ӳкĕте кĕртмелле.

Л. Мартьянова калас тенине тӳрремĕн пĕлтерме тăрăшать пулин те, унăн сăмахĕ ытарлă та хывăнать. Кăсăкли – уйрăм сăнар çеç мар, жанр та (такмак) ытару мелĕ вырăнĕнче:

Атя пĕрле тухар-и,
Атя пĕрле ташлар-и?
Эпĕ илтнĕ сăмаха
Иккĕн пĕрле пайлар-и? *(«Эй, юрлаттăн юррине!»).*

Тепĕр тĕслĕх:

Яштак каччи япăх-им?
Сарă хĕрĕ ятсăр-им?
Тăрăс-тăрăс тапар-и?
Çĕн мăшăра мухтар-и? *(«Сĕтел ури авăнать...»).*

Тăрăс-тăрăс тапăртатса, шăхăрса ал çупнинче, ташланинче кулă витĕр ĕсĕклени çеç мар, ăсран-тăнран тухас пек йывăр ахлату та сисĕнет.

Юлашки пĕр-икĕ вунăçуллăхра чăваш поэзийĕнче сăвă, сăвă хывăм никĕсĕсем пирки ним чухлĕ те тĕшмĕртмен «поэтессăсен» шучĕ палăрмаллах ӳсрĕ. В.Г. Белинский сăмахĕсем ку тĕлĕшрен халĕ те вырăнлă: «Тем пек хитре шухăшсемпе эрешлесен те, тем пек çивĕч ыйтусене хускатсан та, сăвăра поэзи çук пулсассăн – унра хитре шухăш та, çивĕч ыйту та çук. Мĕн пурри те – япăх пурнăçланă ырă тĕллев»[77].

Ĕмĕр юратушăн тĕмсĕлсе, макăрса ларакансен йышĕнче Мартьянова ĕнентерӳлĕхпе çеç мар, ыйтусен тĕрлĕ

енлĕхĕпе уйрăлса тăрать. Поэт тата поэзи, юратупа çут çанталăк, пурнăç тата вилĕм, вăрçăпа мир ыйтăвĕсене хускатать вăл, çынпала общество хушшинчи çыхăнусем канăçсăрлантараççĕ ăна. Çапла этемлĕхе авалтанпа пăшăрхантаракан, шутлаттаракан проблемăсем Мартьянова пултарулăхĕнче пĕр-пĕринпе çыхăнса-тĕвĕленсе тăраççĕ.

Çакна та каламалла: Л. Мартьянова поэт чăваш хĕрарăмĕн сăнарне калăпласа тăрать. Çакă вăл чăн малтан туйăмсене ирĕке яманнинче, çиеле кăларманнинче палăрать («Куççуль витĕр, шăла çыртса, ахăлтатса кулатăп»). Вырăс хĕрарăм сăвăçсем (уйрăмах М. Цветаева) вара «юрату авăрне» пуçĕпех чăмаççĕ, вĕсене вут-хĕм сирпĕтсе тăракан вулканпа танлаштарма пулать, Л. Мартьянова – кĕç-вĕç вутлă шĕвек персе ывăтас вулкан пек: çиелтен пăхсан лăпкă, унтан-кунтан вĕри пăс пăшлатса илет, шалта вара тамăк хуранĕ («Хам чĕртнĕ вучах»).

Пĕтĕмлетсе каласассăн, Л. Мартьяновăн лирика субъекчĕ, чунĕнче çил-тăман ахăрать пулин те, хăйне хăй алра тытать, ăш-чикне сайра хутра кăна кĕрткелет. Çавăнпа та савнă çынни ăна ăнланманнинче хăйĕн те «айăп» пуррине сисет-тĕр.

Çапла вара яланхи шалти хире-хирĕçлĕхе, суйлава, шырава пула лирика героинин чĕре хĕлĕхĕсем вĕçĕмех туртăнса-карăнса тăраççĕ. Çакă вăл пĕтĕмпех сăвă техникинче ӳкерĕнет: шухăш контрастлă аталанать, текстсем кĕске, пуплевре хăват сирпĕнсе тăрать т.ыт.те.

Эмоци тĕлĕшĕнчен пуян калаçу тума усă курнă меслетсем ятарласа шыраса тупнă ăслайсем мар. Ку вăл сăвăри пурнăç. Тĕлкĕшсе-сурса тăраççĕ чун суранĕсем. Суранран пăчăртанса, сăрхăнса тухакан вĕри тумламсемпе çырать Любовь Мартьянова хăйĕн сăввисене...

### 2.3. *«Çăлтăрсен хĕлхемне çĕр çинче чĕртнĕскер» (П. Яккусен сăввисенчи лирика геройĕ)*

«Кама мĕнле те, мана поэтсем карапсене аса илтереççĕ. Пĕрисем поэзи тинĕсĕ тăрăх ирĕклĕн, чăрсăррăн вирхĕнсе çӳреççĕ, ытларах чух çиле май – ыран ăçта пырса тухассине пĕлмесĕр. Теприсем, туллиех нефтьпе тултарнă танкер евĕр, йывăррăн портран порта шăваççĕ (кусем ытларах совет тап-

хăрĕнче нумайччĕ, «соцзаказ» лавне туртатчĕç). Виççĕмĕшсем, пăр çĕмренсем, никама та, ниме те уямасăр малалла, хисеплĕ ятсем валеçекен çыраналла талпăнаççĕ. Петĕр Яккусен ятне асăнсан вара куçăм умне уйăх çутинче шыв тăрăх шăппăн та лăпкăн шăвакан кимĕ тухса тăрать. Никампа ăмăртмасăр, никама пӳлмесĕр ишет те ишет вăл хăй çеç пĕлекен çулĕпе»[78], – çырать Олег Кульев сăвăçа хак парса.

П. Яккусенĕн лирика геройĕ пĕчĕк чухнех черченкĕ, аманчăк, ырă чунлă пулнине, питĕ ĕмĕтленме юратнине куратпăр. Уншăн тухайман чĕпсене вĕлерни те тĕнче пысăкăш трагеди:

Ăшшипехчĕ
Пĕчик йăвари çăмарта.
Вăй çитсессĕн – чараттăм,
Çитмесен – ӳкĕтлеттĕм
Тантăшсем вĕсене
Çĕр çине пенĕ чух.
Тухайман чĕпсене
Ун чухне хĕрхенеттĕм, –
Хĕрхенме нихăçан
Пăрахассăм та çук... *(«Ват йăмра тăрринче...»).*

Мĕн пĕчĕкрен усала чĕрипе витĕр туйса илсе П. Яккусенĕн лирика геройĕ ачаранпах пурнăç улшăнасса, çĕр чăмăрĕ çинче юмахри пек хитре çĕр-шыв пулса тăрасса шанма тытăнать. Çав тĕнчере мул мар, илем хуçаланать, чун илемĕ:

Хĕвелĕ ăмăрт кайăкла ансан
Çав каçхине сĕм урăхланнă пурнăç.
Амăш çумне йăвашшăн таянса
Пĕр пĕчĕкçĕ тиха сар тĕлĕк курнă.
Чупса çӳренĕ пек вĕççĕрлĕхре...
Çав тĕнчере, ятарлă тĕнчере
Пĕлмен никам та: мĕн вăл – сив хаярлăх.
Тиха сăнанă ирĕк вĕçевре
Телейлĕ тĕнчине
Нихçан манмаслăх *(«Хĕвелĕ ăмăрт кайăкла ансан...»).*

Анчах вăхăт иртнĕçем тавралăх хитрелĕхĕпе киленме пĕлекен вĕри чĕреллĕ çамрăк хăй турăш вырăнне хуракан çут çанталăк илемĕ, чун тасалăхĕ ыттисемшĕн çӳпĕ пек те мар иккенне, хăй никама та кирлĕ маррине туйса илет:

Эп йĕместĕп. Темскершĕн хурлантăм.
Ăнланас теменрен-ши çынсем?
Ăнланма та мана йывăр мар та –
Эп пыл хурчĕ – пухатăп илем
*(«Аçтан килтĕн, унтах кай, салхулăх...»).*

Е тата:

Çын хушшинче телей тупайманне
Ăна шырарăм йывăç хушшинче
*(«Пĕлетĕн-и, мĕскер вăл – кĕркунне»).*

«Çанталăк-аннемĕр пирĕншĕн тасалăх çăлкуçĕ те-çке-ха. Кичемлĕх пуссан, ырса çитсен ун чĕрçи çине пуçа хурса канса илетпĕр, вара юн тымарĕсем чĕрĕ сĕткенпе тулса тапма тытăннине çĕнĕрен туйса илетпĕр»[79], – тесе тĕрĕсех палăртать Ю.М. Артемьев.

Лирика геройĕ çакна ача çулĕсенчех туйса илнĕ-тĕр. Пурнăçĕнче чи пысăк та чăтма çук йывăр хуйхă пулсан – амăшĕ вилсен – чунне лăплантарма тăван-пĕтен патне мар, уя каять:

Ĕненместĕп. Аннене пытартăм.
Ăшăм-чунăм килчĕ те çунса,
Макăрма уя ача пек тартăм,
Таврăнтăм калла мăн çын пулса
*(«Улăх. Лĕпĕш. Шыв хĕрри те мечĕк»).*

«Ытла та кĕтмен çĕртен çавăрса хунă юлашки йĕрке чĕрене чĕпĕтсе ыраттарса ярать. Çавăн пысăкăш çухату çинчен, аннесĕр пурнăçăн йÿççи çинчен çакăнтан ĕненмеллерех калама та çук пулĕ. Мĕн чухлĕ шухăш пытарăннă çак икĕ йĕрке хыçĕнче»[80].

П. Яккусен сăввисенче кашни сăмах хăй вырăнĕнче, нимĕн хушма та, кăларма та çук, пуш сăмах çапни, ултавсуя уншăн ют. Çакă та ун поэтикин хăй евĕрлĕхĕн пĕр енĕ.

Çынсем хушшинче ăнлану тупайман лирика геройĕ час-часах çут çанталăкпа куçа-куçăн юлать тесе маларах каланăччĕ ĕнтĕ. «Уй варрине тухатăп çутă курма мар, уй варринче куратăп эп витĕрех хама», – тет вăл. Çынсене хурласа, тиркесе тăкмаваскамать, чăн малтан хăйĕнчен çирĕп ыйтать: «Чуна кирĕк ларман-и, кулленхи тĕркĕшÿре вĕтелсе-вакланса кайма пуçламан-и эс?»

Хӑйне ҫветтуй тесе те шутламасть лирика геройӗ:

Манӑнах ҫылӑхсем,
Умӑнти йывӑр айӑп... *(«Ҫуркунне ҫеҫкисем...»).*

Е тепӗр тӗслӗх:

Ҫылӑхсем тӗлӗнсе пӑхаҫҫӗ.
Ыйтаҫҫӗ манран: «Кам эс?»
*(«Ҫылӑхсем тӗлӗнсе пӑхаҫҫӗ...»).*

«Ҫапла чуна яр уҫса, ҫынсене шанса, ырра ӗненсе калаҫни тепӗр чух ҫӳҫентерсе те илет, ҫапах та кун пек тума чӑн-чӑн поэт ҫеҫ мехел ҫитерет»[81]. Чӑн-чӑн поэт хӑйӗн хуйхи-суйхи тавра «ҫавӑрттармасть» тӗнчене – вӑл халӑх, общество инкекӗ-синкекӗ ҫинчен шутласа чӗрине ҫунтарать, халӑх нушипе пурӑнать:

Пӗччен хуйхи –
Пӗр хуйхӑ –
Килен ҫулпах каять.
Тӗнче хуйхи те пур-ха:
Ҫаплах шутлаттарать *(«Пӗр ҫын хуйхи»).*

«П. Яковлев философилле шухӑш калӑплас тесе кирлӗ-кирлӗ мар ҫӗре чакаланса кӗмест. Уншӑн ку йӑла – ют. Чӑн-чӑн пурнӑҫ аллипе калӑпланать автор шухӑш-кӑмӑлӗ»[82].

* * *

Петӗр Яккусен поэзийӗнче чи ҫивӗч ыйтусенчен пӗри – чӑвашлӑх, тӑван халӑхӑн иртни, хальхи тата пуласлӑхӗ унта тӗп вырӑнта.

«Мӗн чухлӗ чӑвашлӑх илтӗнет П. Яккусен сӑввисенче. Чӑнах та, поэт хӑй калашле, чӑвашла урӑх ҫавӑн пек ”ҫуттӑн, ҫӑмӑллӑн тек никамах та юрла пӗлес ҫук” пулӗ»[83], – тесе ҫырать С. Сатур сӑвӑҫӑн пултарулӑхӗнчи ҫак уйрӑмлӑха палӑртса.

Халӑх теми юлашки вӑхӑтра «модӑра». Хӑшӗ-пӗришӗн халӑх инкекӗ (тен, вилӗмӗ те) – пултарулӑх анинчи пусман ҫерем анчах. Петӗр Яккусеншӗн вара халь ҫеҫ йӑлана кӗрсе чӑрсӑррӑн пуҫ ҫӗклекен тема – ӗмӗрхи ыратӑвӗ, унӑн тӗнчи. Юмахри пек чӑвашлӑх варкӑшать сӑвӑсенчен, сисмесӗрех туя пуҫлатӑн: поэт халӑх ячӗпе калаҫать, халӑхӑн сасси унра[84].

Критиксем тăтăшах вăл е ку çыравçă пирки фольклорпа ăнăçлă усă курать, сăнарсене çапларах калăплать тесе палăртаççĕ. Çапах та халăх сăмахлăхĕпе усă курни вăл пĕр япала, авалхи халăх ăс-хакăлĕпе шухăш-кăмăлне ăнланса илсе унăн куçĕпе тавралăха, тĕнчене сăнани вара – пачах урăх. Сăмахран, «Акăр çулне çутатса» сăвăра чăваш ялĕ пĕтни çинчен çӳçентермелле каласа панă. Ыйха путнă кичем ял çийĕн шупка уйăх тухсассăн халиччен илтмен хĕрхӳ сасă илтĕнет: ку йĕрĕх çĕрĕшен ампарне шеллесе йĕрет иккен. Ав управçă хĕрт-сурт та ырханкка хулĕ урлă кĕлмĕç хутаçне çакса янă, ялтан каять, «пирĕштисем пӳрт тăрне ларса тухнă пит хурлă»...

Поэтăн сăввисем нумай сийлĕ. «Çиçĕм çиçрĕ ялтлатса» (1982) сăвăра поэт пултарулăхĕн мĕнпур енĕсене куратпăр. Çиелтен çеç вуласан аслатиллĕ çумăр çуса иртнин ӳкерчĕкне çеç асăрхатăн. Тарăнрах тишкерсессĕн, тĕшшине ăнкартсассăн пачах урăхла ăнлану çуралать: уй варринчи пĕччен хурама – чăвашлăх палли, чăвашăн пурнăç йывăççи – çĕрпе тӳпе хушшинче ларать. Саманисем кансĕр килчĕç, чăвашăн пурнăç йывăççийĕ халь-халь аçа çапасла нушаланать. «Пĕртен-пĕр совет халăхĕ» туса хунă тапхăрта поэт аça-çиçĕм пек пропагандăна пăхмасăр: «Эп хам та – Турă!» – теме хăять, хăйне (эппин, хăйĕн халăхне те – чăвашсене) упраса хăварма пултараять. Вăл никампа та хирĕçмест пулин те, хăйĕн çирĕплĕхне пула çĕнтерет: тарăхса та шăмарса хăрушă пĕлĕтсем сирĕлеççĕ.

Ĕмĕртен пыракан çыхăнăва паянхи ăру çухатса ямĕши, аваллăхран килекен тымар татăлса юлмĕ-ши? Çак пăшăрханăва Яккусенĕн нумай сăввисенче куратпăр е сисетпĕр:

Чăваш чăвашах. Харсăр мар.
Юлать ачисемсĕр – чĕнмесĕр.
Пире пĕтерме кирлĕ мар,
Эпир хамăрах пĕтетпĕр

*(«Ай, утмăлтурат. Утма çул...»).*

Пурнăç юххине-пăтравне тишкерекен философ чăваш вулаканне хăратас тесе çырман «Ана çинче виççĕн вырĕç...» сăвва. Сăвă-ши ку е чун ыратăвĕ пăчăртанса тухни? Ял урамĕнчи çерем çинче сиккелекен вĕтĕр-шакăр та вырăсла пуп-

лет пулсан – халăх хăй чĕлхине (хальлĕхе чĕлхине) вуçех çухатас хăрушлăх пысăк. Те хăйне хăй лăплантарма тăрăшса, те вулакан шанчăка ан çухаттăр тесе пĕр сăввинче вăл çапла ыйтать: «Чăваш хăçан пĕтет?» – «Тĕнче пĕтсен», – пулать хурав[85].

Пин-пин йывăрлăха çĕнтерсе тăван халăхне савма хăват çитерекен сăвăç хăйĕн ĕненĕвĕнчен, юратăвĕнчен ĕмĕр вĕçне çитичченех пăрăнмасть. «Сумлă поэтăмăр пире пурнăç хевтине тăван халăхра шырама хистет, чĕнет.

Кун-çул пуçламăш, вĕçĕ –
Халăх.
Эп халăхпа çеç вилĕмсĕр, –

çирĕплетсех калать вăл хăйĕн пĕр сăввинче»[86]. Тепĕр тĕслĕхре асăннă шухăш тата та лайăхрах палăрать:

Çавра çиллĕ, тăвăллă çанталăк
Чун ăшне киревсĕр тустарсан,
Сивĕ хаяра хирĕç тăмалăх,
Пурăнмалăх вăй та юлмасан –
Тыт
Хăвна кун панă халăхран *(«Çавра çиллĕ, тăвăллă çанталăк...»).*

Çакна та палăртмалла: «халăхсăр, чăваш идеалĕсĕр пуçне поэтăн индивидуализм тата пысăк космос вăйлăн палăрса тăраççĕ»[87]. Петĕр Яккусен ĕмĕртен килекен, нихăçан кивелмен, этемлĕх умĕнчи чи кирлĕ философилле ыйтусене, уйрăмах – этемĕн пурнăç тĕллевĕ мĕнре текен йышши проблемăсене хускатать. Ăна уйрăм çын шăпи, пурнăçпа вилĕм, чăнлăх ыйтăвĕсем канăç памаççĕ:

Пур-и, çук-и кунта пĕлекен?
(Пурнăçа эп ăнлантăм! – текен.) *(«Шурăях та хута сăрласа...»).*

* * *

– Ма этемĕн чун пушанчĕ?
*(«Чунсем пушă, ай ма пушă...»).*

* * *

Чăнни мĕскер? Кун-çулăм – тарлă
*(«Пире кун-çул шеллес темерĕ»).*

* * *

Пурнăç тупсăмĕ мĕн? Кам пĕлет?
*(«Ăмăрт кайăк шăна тытмасть...»).*

Кунашкал тĕслĕхсем темĕн чухлех илсе кăтартма пулать. П. Яккусен лирикин тĕп шăнăр-туртăмĕ ырăпа усал кĕрешĕвĕнче. Анчах та яланах тенĕ пек шалта, чун-чĕрере вăл çак тытăçу.

Чи усал тăшман хамри –
Çĕнтерме пултараймарăм *(«Ӳхĕ мĕн ӳхлетнине...»).*

«Пĕрремĕш вырăнта уншăн – кăмăл-сипет ыйтăвне татса парасси. Е ун пек, е кун пек? Яланах пĕрне суйласа илмелле. Сăвăç пултарулăхĕнче питĕ пĕлтерĕшлĕ шалти çапăçу пулса иртет»[88].

Чăннипех те, хăйпе хăй кĕрешни, мĕн вĕçне çитиччен этемех юласчĕ тени П. Яккусенĕн пĕтĕм пултарулăхне витерсе тăрать. «Сар кун илемĕпе, çынсем, киленĕр, / Хытса ларма ан парăр чунсене», – тесе чăн малтан хăйне хăй асра тытма хистет. Лирика геройĕ пурнăç тăршшĕпех çынсене мар, хăй чунсăрланса каясран шикленсе кашни пусăмне сăнаса-асăрхаса пурăнать, кăшт йăнăш тусассăнах хытă ӳкĕнет, намăсланать. Вăл тĕрĕс е тĕрĕс мар пурăннине хак параканĕсем – таса уй, уйри юман, çӳл тӳпе, юр çути. Хаклав витĕр тухсассăн пĕтĕмлетӳ тăвать:

Пур-ха мехел тĕлĕнсе савăнмашкăн,
Пур-ха ача пек ачашлăх чунра, –
Пĕр ирхине, ыйхăран вăрансассăн,
Эпĕ саламлăп тин çунă юра
*(«Пур-ха мехел тĕлĕнсе савăнмашкăн...»).*

Малалла тӳрĕ çулпа утмалăх хытарса хурать:

Чун-чĕрере ан пултăр пушă.
Пуш вырăнта пурнать усал
*(«Илемлĕхе савса мухтатăп»).*

(Аса илер: П. Эйзинăн та, Л. Мартьяновăн та çак ен палăратчĕ. А. Аттилăн лирика геройĕ те тĕнчене çутă чунпа килсе таса чунпах каять. Ку вăл – «ята ярас марччĕ» текен чăвашла тĕнче курăмах. Çапла сăвăçсен пултарулăхĕнче тăван

халăхăн тĕп хаклăхĕсем уçăлаççĕ. Кун пирки виççĕмĕш сыпăкра калаçăпăр.)

П. Яккусенĕн лирика геройне тасалăхпа килĕшӳлĕх тăвĕ тăррине вĕçĕмсĕр чакаланакан çынпа танлаштарма пулать. Чăнкă ту тăррине хăпарса çитме пуçлать те вăл – каялла персе анать, унтан каллех çĕнĕрен, татах çӳлелле... Тен, çак вĕçĕмсĕр чакаланура пурнăç чăнлăхĕ?

Ах, чунăмçăм, чунăм – тăри!
Çӳлтен – çĕрелле. Е çĕртен
Çӳле! *(«Ах, чунăмçăм, чунăм – тăри!»).*

А. Хусанкай П. Яккусенĕн пултарулăхĕнче романтика паллисене асăрханă. Сăвăç çак хитре те хаяр пурнăçра темле «ăшри вутпа» çунни, унăн чунне темскер ыраттарни пирки çырать. «Кунта эпĕ критик куçĕпе, калăпăр, хальхи вăхăтра модăра мар романтика паллисене куратăп»[89].

Мĕнле паллăсем-ха вĕсем? Литература энциклопеди словарĕнче романтика паллисем тесе çаксене асăннă:

1) индивидуализм философийĕ (романтиксемшĕн çын вăл – микрокосм, романтикăлла хайлаври тĕп герой – обществăра пуç пулса тăракан кăмăл-сипет виçисене йышăнман, ун саккунĕсене пăхăнман вăйлă çын);

2) иктĕнчелĕх паллийĕ (романтиксем тĕнчене икке уйăраççĕ; пĕри – çĕр çинчи пурнăç, тепри – хăйсем шутласа кăларнă илем тĕнчи, чăнлăхлă тĕнче, çак тĕнчесем пĕрне-пĕри хирĕçлеççĕ);

3) «вырăн колоричĕ» текен паллă (обществăпа хире-хирĕçле тăракан лирика геройĕ çут çанталăкпа çирĕп çыхăнура; романтиксем никамран малтан тăван халăхĕн пултарулăхĕ, чун пуянлăхĕ патне туртăнаççĕ, унăн аваллăхĕпе кăсăкланаççĕ[90]).

Çапла вара Яккусенĕн лирика геройĕ пĕчĕккĕ чухнех ыттисенчен уйрăлса тăни, çут çанталăкпа çывăх пулни, халăхăн кун-çулĕ çинчен шухăшлани, ытларах вăл хăй шутласа кăларнă илемлĕх тĕнчинче пурăнни, çын шăпине космоспа çыхăнтарни т.ыт.те (ун пирки кăшт маларах калаçу пулнăччĕ) – пĕтĕмпех романтика паллисем.

«Романтиксем ытларах чухне çамрăксем пулаççĕ. Мĕнпур тĕнче ун пек çынсемшĕн пурăннăн, вĕсем тавра

ыттисем ҫавӑннӑн, хӑйсем вара «ҫӗр кӑвапи» пулнӑн туйӑнать романтиксене»[91], – тесе ҫырать В.Г. Родионов. Анчах та Яккусенӗн лирика геройӗ халӗ сӑнласа панӑ романтиксенчен раснарах. Пӗр вӑхӑтрах ыттисем пек те, ыттисем пек мар та вӑл:

Ытти пиншер чӑваш ачи пекех –
Вылянӑ, кулнӑ, макӑрнӑ та пулӗ.
Анчах та туйнӑ мӗн ачаранах:
Кашни ҫӑлкуҫӑн урӑхрах сим пылӗ
*(«Мӗскер курма эп килнӗ ҫӗр ҫине...»).*

Лирика субъекчӗ хӑйӗнче «эпӗ» текеннине мала хуни, ҫынсене пӑхӑнса, пуҫ ҫапса пурӑнманни вӑл ухмахла мӑнкӑмӑллану мар, хӑйне «тӗнче кӑвапи» пулнӑн туйни мар – хӑй этем пулнипе ачалла мӑнаҫланни. Урӑхла пулса тухсассӑн мӗн патне килсе ҫитессе вӑл лайӑх пӗлсе тӑрать:

Чӗр ҫынна:
– Эс – турӑш, – тенӗрен
Турӑсем пире пӑхми пулаҫҫӗ... *(«Чӗр ҫынна»).*

Ҫеҫпӗл Мишши те романтик, анчах икӗ сӑвӑҫӑн расна курӑм. Ҫеҫпӗлӗн ӗмӗтри хитре тӗнчипе ку тӗнче (вӑл вӑхӑтри пурнӑҫ) хушшинче нимӗнле ҫураҫу та ҫук пулсассӑн, Яккусенӗн «икӗ тӗнчи» те юнашар, пӗр-пӗринпе килӗшсе тӑма пултараҫҫӗ.

* * *

Романтик яланах пӗччен. Ҫавӑнпа та Яккусен лирикинче пуҫ пулса тӑракан кӗвӗсенчен пӗри – *пӗччен-лӗх* кӗввитуйӑмӗ. Ҫак кӗвӗ сӑвӑҫ пултарулӑхӗнче яланах пӗр пек-ши е урӑхла сӗм те йышӑнать?

Тинкererех пӑхсассӑн П. Яккусен пӗччен-лӗхӗ икӗ тӗрлӗ пулнине асӑрхатӑн: *ирӗклӗх кӳрекенни* тата *пусарса тӑраканни*. Малтанхи тапхӑрти пӗччен-лӗх лирика геройӗшӗн «чун минаречӗ» пек тухса тӑрать, тулаш тӗнчере тата ҫак тӗнчере хӑйӗн вырӑнне тупас, ӑнланса илес ҫӗрте вӑл темрен ытла кирлӗ. П. Яккусенӗн лирика субъекчӗшӗн пӗччен-лӗх аристократла мӑнаҫлӑхӑн, ыттисенчен ҫӳлерех тӑнин паллийӗ те пулӗ:

Эп – сирĕн пекех – çĕр çинче утаканĕ,
Эп – сирĕн пек мар – юрпала çĕкленни
*(«Мана çавăрать туйăмсен çил-тăманĕ...»).*

Малтанах лирика геройĕ ыттисенчен ютшăннинче кăмăл лăпланăçĕ тупнине куратпăр эпир. Уншăн, тен, çак *хăй суйласа илнĕ* тăрăм – пурнăçăн вак-тĕвек хĕвĕшĕвĕнчен çăлăнмалли тата ирĕклĕхе упраса хăвармалли – чĕрĕ юлмалли – пĕртен-пĕр çăлăнăç çулĕ...

Ирĕклĕх, ирĕклĕхе нимĕнрен ытла юратни, «çĕр çумĕнчине» пăхăнас теменни (хăй пăхăнтарас тени кунта çук!) – шăп çакăнта пытанман-ши П. Яккусенĕн лирика геройĕ пĕчченлĕх енне ăнтăлнин сăлтавĕ? Пĕчченлĕх яланах ирĕклĕх урлă палăрать. Этем хăйĕнче нимĕнрен ытла «эпĕ» текеннине хисепленĕ чухне, личность пулас тенĕ çĕрте пĕчченлĕх çеç тулли майсем парать. Çавăнпа та чунпа ирĕк çын пĕчченлĕх енне ăнтăлмасăр пурăнма пултараймасть.

П. Яккусенĕн пĕчченлĕхĕнче, пирĕн шутпа, тулашри тăрăмран («внешнее состояние») ытла субъективлă хумхану («субъективное переживание») маларах тăрать. Çапла майпа çамрăкрах герой-романтик çак пĕчченлĕхе хăй суйлать теме пулать. Çавăнпа вăл ăна пусарса тăмасть, чĕрине ыраттармасть – ирĕклĕхĕн çĕнĕрен çĕнĕ енĕсене уçмалли мел кăна пулса тăрать.

Анчах та каярахри тапхăра илес пулсассăн пирĕн ума урăхла ӳкерчĕк тухать: ку чухнехи пĕчченлĕх патне лирика геройĕ ирĕксĕртен тенĕ пек çитсе тухать.

Паллах, «ирĕксĕртен» тени остракизмпа – вăйпа хĕсĕрленипе – пĕр мар. Лирика субъекчĕн каярахри пĕчченлĕхĕ вăл – çынсенче чун-чĕре ăшши, ăнланулăх, шеллев туйăмĕ иксĕлсе-тамалса пынăран çуралнăскер. Яланах лăплантаракан, çĕнĕ вăй кӳрекен çут çанталăк-анне те ĕнтĕ ун хуйхи умĕнче чĕмсĕр. Ытла та йывăр, ытла та хăрушă кунашкал пĕчченлĕх:

Ăнланчĕç пуль терĕн-и (юмансем. – *Н.И.*), кăмăл кӳтсессĕн
Выртсах ĕсĕклерĕн – чарăнайми...
...Пăхаççĕ – курмаççĕ, итлеççĕ – илтмеççĕ,
Чунна уçни çеç ĕнтĕ.
Улталанни
*(«Кас-кас ачашлать, хыпашлать çил-вăрманçă...»).*

П. Яккусен пултарулăхĕнчи пĕчченлĕхĕн çак тĕсне кăмăл-сипет, мораль ютшăнăвĕ тесе ят пама пулать. Мĕншĕн тесен кунта çынсемпе çураçайманнинчен ытларах лирика геройĕ обществăра пуç пулса тăракан хаксене, виçесемпе идеалсене йышăнаймасть-çке-ха:

Тем пулмĕ-ха тетпĕр. Çынсем те ав тетпĕр,
Сутаççĕ чунне, намăсне-симĕсне...
Пиртен пулаймасть: çĕрĕпех ӳкĕнетпĕр.
Ĕçетпĕр каçсен йӳçĕ наркăмăшне
*(«Тем пулмĕ-ха тетпĕр. Çынсем те ав тетпĕр»).*

Çапла юлашки çулсенче çырнă сăвăсене чун илемĕ никама та кирлĕ мар, йăлт арканать-ишĕлет-ванать, пурнăç тĕллевĕ çухалчĕ текен пафос витерсе тăрать.

Кунта сăмаха кăшт аяккалла пăрса маларах каланине аса илер: поэзире, ытти литература тĕсĕсемпе танлаштарсассăн, содержанипе форма уйрăмах тачă çыхăнура тăраççĕ. Енчен те сăвăç содержание çĕнĕлĕх кĕртрĕ пулсассăн, çав улшăну формăра палăратех; форма улшăнăвĕ те содержанире йĕр хăвармасăр иртмест. П. Яккусен поэзийĕнче те çак çыхăну тĕлĕнмелле вăйлă палăрать: малтанхи тапхăрти лирика геройĕн чĕрине пĕчченлĕх пусармасть, ирĕклĕх çеç кӳрет терĕмĕр. Çак вăхăтра герой сăмахĕ те хăй тĕллĕнех юхсашăранса пынăн туйăнать, час-часах юрра та ĕнерĕнет. «Хĕвел», «чечек», «юр пĕрчи», «çăлтăр» тата ытти сăнарсем сăвăран сăвва куçса аталанса пыраççĕ. Тулли рифмăсем, хăйне евĕр илемлĕх мелĕсем куçа шартаççĕ...

Анчах та каярахпа – чун пушăлăхĕпе сахал мар куçакуçăн тĕл пулса шаннă-ĕмĕтленнĕ ĕмĕтсем «шырлана тăрăннăçем», чĕрене пĕр-пĕчченлĕх амакĕ хĕстере-хĕстере килнĕ май – лирика геройĕн калаçăвĕ те улшăнать.

Малти вырăна «пуш хир» сăнар тухать (тата *хура* тĕс тăтăшах мĕлтлетет). П. Яккусенĕн лирика субъекчĕ çак пуш хирте пĕчченлĕхре асапланнине, кăмăлĕпе кӳтсе çитнине тата чун хавалĕпе такамран темĕн ыйтнине, кăшкăрнине сăвăсерен тенĕ пек тĕл пулакан ыйтуллă, кăшкăруллă, хистевлĕ предложенисем витĕмлĕ сăнарлаççĕ (уйрăмах «Çавра кӳлĕ» ятлă кĕнекере).

Нумай пăнчăпа паллă тунă предложенисем вара сăвăллă хайлавсене темле хурлăхлă туйăм кĕртеççĕ, чун кăшкăрăвĕ

«пыр тӗпӗнчен тухиччен хура хум хушшинче ҫӗтнине», каламалли шухӑш нумаййине ӗнентереҫҫӗ. Интонаци пӗр ӳсет, пӗр анать, ритмика такӑнать...

Лирика геройӗ хӑйне ҫынсем ӑнланманнине (е ӑнлансах пӗтерейменнине) сиссе-тӗр пысӑк шухӑш-ырату пытарнӑ сӑмахсене час-часах вӑрӑм йӗрпе (тирепе) уйӑрать.

Юлашки ҫулсенче ҫырнӑ сӑвӑсем калӑпӑшӗпе пӗчӗкленнине, шухӑшӗпе чылай тарӑнланнине куратпӑр, тап-таса афоризмла йӗркесем те сахал мар тӗл пулаҫҫӗ:

Раҫҫейре кашни ӳсӗмӗн – хӑй тӗрӗслевӗ.
Вӑрҫӑпа, выҫлӑхпа, суяпа, эрехпе.
Пирӗн ӳсӗм куҫне ӗненӳсӗрлӗх сӗмӗ
Тӗксӗмлерӗ. Эпир – кӗлетри кирлӗ мар йӗрӗхсем
*(«Раҫҫейре кашни ӳсӗмӗн – хӑй тӗрӗслевӗ»).*

Хӑш-пӗр тӗпчевҫӗсем сӑвӑҫ пултарулӑхӗнчи ҫак ене ӑнлансах пӗтерейменни те пулчӗ. Тӗслӗхрен, В.Г. Родионов: «Ман пӗр сӗнӳ ҫеҫ: тепӗр чух, сӑвӑ ҫуралас тапхӑр вӑраха кайнӑран, нумай чух ӑспа ҫырать пек туйӑнать, чӗрене ытларах ҫунтарса ӗҫлеме сӗнес килет»[92].

Анчах, пирӗн шутпа, «ӑспа ҫырнӑ» йӗркесем «сӑвӑ ҫуралас тапхӑр вӑраха кайнипе» (урӑхла каласан, туйӑм ҫуккипе тесшӗн ӗнтӗ) ниепле те ҫыхӑнман. Пачах урӑхла: ҫав пӗтӗмлетӳ патне ҫитиччен Яккусен геройӗ ытла та нумай асапланнӑ-тӑр, ҫунса кӗлленнӗ. Тӗрӗссипе, ҫав афоризмла йӗркесем калӑпланӑ вӑхӑтра та терт-асапӗ пӗр чӗптӗм иксӗлмен унӑн – тапса тӑракан туйӑмсене шаларах, ҫын асӑрхасран аяккарах пытарнине ҫеҫ курмалла кунта.

Паллах, асапланӑвӑн тӗп сӑлтавӗсенчен пӗри – пӗчченлӗх, хӑй суйласа илмен, пурнӑҫӑн хаяр чӑнлӑхӗ кӑларса тӑратнӑ пӗччӗнлӗх.

Ҫапах ҫакна палӑртсах каламалла: П. Яккусенӗн лирика субъекчӗ пӗччӗнлӗх вут-ҫулӑмӗ, асапӗ витӗр тухса та хӑй чысне ҫухатмасть, чун-чӗрипе тискерленмест. Ӑна ҫӑлӑнӑҫ кӳрекенни – поэзи:

Эс ҫеҫ, поэзи, ман хӑват –
Ҫул чӑлхансан ална тӑсатӑн,
Вара каллех тӳпе – кӑвак,
Каллех мӑн тинӗс евӗр – Атӑл
*(«Тӳпе инҫечӗ хӗсӗнет...»).*

Е тепĕр тĕслĕх:

Ку – манăн çул, ку – ман кун-çул.
Тавах Турра: ман айăп çук –
Поэзирен чăнрах тĕнче
Эп тупаймарăм çĕр çинче
*(«Çынсем хĕрсе туй тунă чух...»).*

«Романтиксемшĕн поэзи чи пысăк чăнлăх шутланать»[93].

* * *

Романтика искусстви стиль тĕлĕшĕнчен метафора поэзийĕ пулать, мистикăлла туйăмсене чĕртсе вăйлатни çинче никĕсленет. Романтиксем хăйсем шутласа кăларнă илем, çураçу тĕнчинче пурăнаççĕ, юнашар яланах темĕнле хăватлă сывлăш пуррине туяççĕ тесе маларах палăртнăччĕ ĕнтĕ. Çакнашкал тĕнчене ӳкерсе кăтартма метафорăсем пулăшаççĕ – вĕсем поэзи шухăшласа кăларни мар, ӳнерçĕн ятарлă вăйĕи те мар. Ку – япаласен, çут çанталăкăн, Турă юратăвĕн асамлă пĕлтерĕшне ăнкарса илни.

Яккусен поэтикине ытти чăваш поэчĕсенчен уйăрса тăракан чи пысăк паллă вăл – çак сăвăç чăваш поэзийĕнче унччен пулман илемлĕх мелĕсемпе усă курнинче. Уйрăмах *метафорăсен* хăй евĕрлĕхне палăртмалла:

*чун тӳпи*
*лаштра юман чĕлхи*
*вăхăт тилхепи, çăварлăхĕ*
*туйăм тутăхĕ*
*юрату сенкерĕ*
*сенкер асамлăх*
*пăрлак чун*
*ачалăхри сенкер кăвакăм*
*кăмăл турачĕ*
*асаплăхăн йĕрри*
*ачашлăх хĕлĕхĕ*
*канăçлăх çурăкĕ*
*пылак кăвар*
*каç çеçки*
*тунсăх чатăрĕ*
*шăрчăк вучĕ*
*çут çанталăк ӳпки*
*шăпчăк сассиллĕ ăшă*
*канăçлăх карри*
*симĕс çемĕ*
*юрату мĕлки (инçечĕ, вĕçевĕ)*
*хĕм сĕткенĕ*
*симĕс канлĕх*
*тӳпе хĕлĕхĕ*
*ӳтленекен шуçăм*
*кĕр каçĕн çăварĕ*
*тӳпе шăнкăравĕ*
*сукмак шăмми-шакки*
*тĕнче суранĕн хĕлĕхĕ*
*хула сунтăхĕ*
*сĕм каç хӳхлевĕ*
*тăнăç шевли*
*туйăмсен фейерверкĕ*

Кунашкал пайрăмсем Яккусен пултарулăхĕнче питĕ нумай. Вĕсене пула темĕнле тĕлĕнмелле асамлă тĕнче куç умне чĕррĕн тухать. Метафорăсем нумай пулни вулакана тарăхтармасть, шухăшран пăрса ямасть. Мĕншĕн тесен вĕсене пĕр харăсах ансат та вичкĕн чĕлхепе йĕркеленĕ. Çавăнпах пулĕ Петĕр Яккусен поэзийĕ чуна тыткăнлать, илĕртет – темле эпир пĕлмен хутлăхсене çавăрса-туртса илсе каять. Сăвăç чунчĕм тата ӳт-пĕвĕн тĕрлĕ облаçĕсене метафорăсемпе тӳр килтерсе пĕр-пĕрин патне çывхартать: çут çанталăкри уйрăлми çыхăнусен мистикăлла тупсăмне шахвăртать.

Метафорăсем символсемпе тачă çыхăннă. Çеçпĕлĕн сăввисенче метафора-символсем клише пекрех, «хускану-сăртарах» (ытарлă каланин тупсăмне çăмăллăнрах тĕшмĕртетĕн) пулсассăн, Яккусен (Эйзинăн та) пайрăмĕсенче тем чул вăрттăн шухăш пытанса тăрать, аталану-хускалу пуррине асăрхатăн.

Чун тĕнчипе çут çанталăк тĕнчин сăнарĕсене пĕрлештермелли тепĕр мел вăл – *танлаштару*. Унăн пултарулăхĕнче пĕр-пĕр абстрактлă ăнлава тепринпе танлаштарни питех те кăсăклă (Çеçпĕл Мишшин, П. Хусанкайăн, И. Ивникăн, А. Аттилăн, Н. Теветкелĕн т.ыт.те тĕл пулаççĕ унашкал тĕслĕхсем, анчах Яккусенни пек пĕтĕм поэзие витерниех курăнмасть). Сăвăç кашни пĕчĕк пайрăма асăрхаса, астуса – чунри тăрăмпа пĕр килтерсе – хăйĕн туйăм хускалăвĕсене лайăхрах уçса пама усă курать танлаштарусемпе. Тĕслĕхрен:

Пуç тĕлне анатчĕ кĕмĕл ĕмĕт
Ярăнса хур акăш тĕкĕ пек.

* * *

Пуç урлă таптаса каçаççĕ
Чунри салху пек пĕлĕтсем.

* * *

Чуна çунтарать ырату пек ыйту.

* * *

Вăрман кăваклăхĕн карри
Ачалăх тĕлĕкĕ пек маншăн.

* * *

Ĕмĕт пек çĕмĕрт таса.

* * *

Шурă юрăн пир чаршавĕ
Канăçлăх карри пекех.

* * *

Уйăхлă каçăн ачаш çутинче
Сан тунсăху пек çӳретĕп.

* * *

Сĕм вăрманти илĕртӳллĕ асам
Килĕ ачалăх çутиллĕн.

* * *

Сан куллу ачалăх пек хитре.

* * *

Тӳпере тăри юрри хумханĕ
Чунăмри хавха саманчĕ пек.

* * *

Кăвак çунатлă лĕпĕшсен вĕçевĕ
Кăвак çеçке пек тăкăнать çĕре.

«Поэт чĕлхи сăнарлă тени ним каламанпа пĕрех пулĕччĕ – Петĕр Яккусен ыттисем курманнине курать, вулакана çут тĕнче çине çĕнĕлле пăхма, шухăша кайма хистет. Тĕслĕх вырăнне пĕр танлаштарăва çеç илер:

Хура тӳпери ылтăн уйăх
Çут шăтăк пекех туйăнать.

Сăвăçсем уйăха мĕнпе кăна танлаштарман пулĕ – çут шăтăкпа танлаштарнине астумастăп. Анчах поэт çакăнпа çырлахса лармасть, вăл хăйĕн сăнарне, шухăшне малалла аталантарать

Куратăп: выртать уйăх витĕр
Эпир каймалли аслă çул.
Куратăп: чипер сарă хĕр те
Çав аслă çулсем хĕрринчех, –
Ан тив, куçа курăнтăр тем те –
Вут-çулăм ан курăнтăр çех.

Çапла чылай сăввине поэт пĕр пĕчĕк сăнлăхран, пулăмран пуçлать те ерипен шухăш çăмхине сӳтсе пырса вĕçĕнче, пĕтĕмлетӳ тунă пек, тĕвĕлесе хурать»[94].

Пĕр япалана тепринпе танлаштарса поэт тĕнчере пурте уйрăлми çыхăнура пулнине тата та витĕмлĕрех ĕнентерет, философилле тарăн шухăш патне илсе çитерет.

*Сăпатлантарусем* те хăйне май П. Яккусенĕн. Каллех абстрактлă япаласене сăпатлантарнине куратпăр:

Тунсăху сасартăк ялт! çуталĕ
Тăкăнса кайсассăн шурă юр.

* * *

Анчах килет пек яшлăх улахран.

* * *

Тен, чĕрĕлет хуçăк кăмăл турачĕ, сĕткен илнĕçем.

* * *

Канăçлăху сан шарттăн çурăлать,
Çурăкĕнчен тухса ларать хула...

Абстрактлă сăмаха тепĕр абстрактлипе çыхăнтарса çĕнĕ ăнлав йĕркелесси те питĕ курăмлă çак сăвăçшăн. Чăваш лирикинче çакăн пек хăйне майлă ăнлантарусем çук тесен те юрать. Эпир вĕсене икçĕре яхăн тупса палăртрăмăр.

Халăх сăмахлăхĕн витĕмĕпе çĕнĕ синтаксис конструкциллĕ предложенисем йĕркелесси те ют мар поэтшăн. Вĕсенче подлежащи – нумайлă, сказуемăй – пĕрреллĕ хисепре:

Фольклорта:

Хура шывсем юхать ай явăнса,
Хура хур çунатне сайратса.

Яккусенĕн:

Те улшăнать саманисем.

* * *

Йывăç хушшиллĕн куçать авалхи мĕлкесем.

* * *

Хальлĕхе: пуçăмсем çурăлать,
Шанчăксем çухалать – чун илтермĕш.

*Састашсене* тĕпчесе-тишкерсе тухнă хыççăн çакă паллă пулчĕ: П. Яккусен сăввисенчен 95–98 проценчĕ тăвата йĕркеллĕ çаврапа çыраннă, вĕсене хĕресле (*абаб*) састашпа йĕркеленĕ. Састаш тĕсĕсене илес пулсассăн, çак поэт сăввисенче ытларах ар састашпа ама састаш юнашар килĕшсе пырать.

Унсăр пуçне хайлавсенче сасă артикуляциийĕ витерсе тăнине асăрхатăн. Поэт кунта питĕ сисĕмли хăй чăн пурнăçра фонетика тĕпчевçи пулнинчен те килет пулас.

Ка**с**-ка**с** ача**ш**лать, хыпа**ш**лать **ç**ил вăрман**ç**ă,
**Ç**ӳрет йывă**ç**ран йывă**ç**а юмласа...
Итле**çç**ĕ – илтме**çç**ĕ, пăха**çç**ĕ – курма**çç**ĕ
Этем тĕнчине ка**ш**лакан юман**с**ем
*(«Кас-кас ачашлать, хыпашлать çил-вăрманçă...»).*

Сăвă çаври (пĕтĕм тексчĕ те) пĕр пек сасăсемпе, сыпăксемпе эрешленсе пырать. Вăл çеç те мар – пулу мелĕпе пĕр пек (хĕсĕнчĕк) «ш», «ç», «х», «с» фонемăсем çине-çинех илтĕнни чăннипех те çил вĕрнĕ сасă кăларать. Мĕн сăвă тăршшĕпех çак çил вĕрни чунра хурлăхлă çемĕ вăратать.

Тĕнче супнине ыр çынсем ан курайччăр
Тесе ыр çынна час илет-ши Турри?
Хаярлăх, тискерлĕх, ултавлăх кăвайчĕ
Çĕре çунтарать. Кĕлленет чун пурри
*(«Тем пулмĕ-ха тетпĕр. Çынсем те ав тетпĕр...»).*

Кунта вара «ыр», «ур», «ыр», «урр», «эр», «ĕр», «ар», «урр» сасăсем çине-çинех илтĕнни арпашулăх, пăтранулăх туйăмĕ вăратать, лирика субъекчĕн чĕринче чăннипех йывăр пулнине ĕнентерет.

Яккусен поэтикине уйăрса тăракан паллă вăл, Эйзинăнни пекех, – ытарлăх, сăнарсен символлăхĕ. Символ философилĕхпе çыхăнать.

Нумай сăвăра «юр», «тӳпе», «çул», «чечек», «папка», «çуркунне» сăнарсене асăрхама пулать, тасалăха палăртакан символсем вĕсем. «Шурлăх», «пылчăк» – пурнăçри, çынсен чунĕнчи тасамарлăх. «Шартлама» – общество сивĕлĕхĕ. «Çуркунне» – ĕмĕтри хитре, çураçуллă тĕнче. «Çумăр» – куççуль, хуйхă. Çиелтен пăхсассăн нимех те курăнман йĕркесенче тарăн шухăш пытаннă:

(Пĕр телейӳ те варкăшла вĕçет...)
Мăн Уçлăхра – сан уçланку çиçет,
Унта çырла – Хурăн çырли – пиçет.
Çут тĕнчере тек ним те çук пекех...
*(«Çут тĕнчере тек ним те çук пекех...»).*

«Хурăн çырли» – лирика геройĕ. Унăн килĕ, уçланки – Мăн Уçлăхра.

* * *

Петĕр Яккусен поэзийĕнчи вертикальлĕх пирки калаçмасăр иртме çук: унăн нумай сăввинче вертикальтен хăпаймастăн. Çак поэт пултарулăхĕнче горизонталь паллисене – çĕр çинче лирика геройĕ çĕнĕрен те çĕнĕ лаптăксем шыраса вырăнтан вырăна куçса çӳренине – тупса палăртма çук. Чăн та, темиçе сăвăра горизонталь палли майлăрах япаласем пур, анчах сăвăсен содержанийĕ эпир калакан шухăша хирĕçлемест, çирĕплетет çеç:

Хуларан хулана
Сĕтĕрнет тăлăх пуйăс,
Вăл ниçта та каймасть,
Çутăсем сана – суйрĕç *(«Ан сивле тĕнчене»).*

Куратпăр, горизонтальпе каякан йĕр – «ниçта та каймасть». Ăçта пурăнать-ха эппин лирика геройĕн чунĕ, мĕнре тĕрев шырать? «Тĕнче варрийĕ» пур-и поэтăн? В.С. Юмарт çак сăвăç хăй евĕрлĕхне пултарулăх пуçламăшĕнчех асăрхама пултарнă. Вăл Яккусен пултарулăхĕнче тĕп тема «кил» пулнине палăртать, «кил сăввисем» чуна тасатса, сывлăша уçса, чĕре таппине вăй кĕртсе яраççĕ тесе шухăшлать[95].

Эй, тем те куртăм, тем те мантăм –
Чĕре варне вырнаçнă пуль.
Çав кил. Çав пӳрт. Çав пилĕк кантăк.
Кăштах сарално шурă тюль
*(«Эй, тем те куртăм, тем те мантăм...»).*

Лирика геройĕ пурăнакан вырăн – тăван кил, анчах вăл унта нумайлăха чарăнса тăмасть: е каять, е таçта çĕтсе çӳренĕ хыççăн ӳкĕнсе таврăнать:

Унпа (ыраш витĕр сукмакпа. – *Н.И.*) эп килтен тухса кайрăм,
Кайма кăмăл пурччĕ инçе,

Вĕçленчĕ-шим ĕнтĕ ман çаврăм,
Е çаврăм тени темиçе? *(«Килте»).*

Поэт хăйĕн килне çĕрпе пĕлĕт, ырăпа усал, чун тĕнчипе тулаш тĕнче, ку тĕнчепе урăх тĕнче тата пурнăçпала вилĕм хушшине лартнă.

Унăн сăввисем хĕвелпе уйăх çутипе кăна мар, темле урăх тĕнчери асамлă çутăпа ялкăшаççĕ. Пирĕншĕн, çĕр çинче пурăнакансемшĕн, икĕ тĕнче хушшинче шырлан-стена пулсассăн, Петĕр Яккусеншĕн – чӳрече кантăкĕ кăна, вăл иккĕшне те кураять. Сăввисем те, тĕрĕссипе, икĕ тĕнче хушшинче хайланаççĕ.

Тулашра тĕнче те, ăшăмра – тĕнче, –
Ик тĕнче хушшилĕх – çутă кĕленче.
Уйăх çутатсассăн кĕçĕр каçхине
Сăвă сăвăланĕ чӳречем çине
*(«Янкăрах çанталăк, кăн-кăвак тӳле...»).*

Çапла сăвăçшăн çĕр çинчи *кил* тĕнче тĕрекĕ пулайманни куç кĕретех («Мана кирлĕ мар суя канлĕх» сăвă). Çĕр çинчи киле поэт ĕмĕрлĕх çирĕп тĕрек тесе шутламасть, кунашкал шухăшран кулса та илет («Этемĕн пур-ха пĕр пахча!» сăвă).

Петĕр Яккусен поэтăн килĕ вулаканшăн кашнин тăван килĕпе çыхăннă. Анчах сăвăçăн килĕ пĕренерен хăпартса лартни мар. Уншăн *кил* – ку тĕнчери пĕр тăнăç лаптăк, тĕл, асри, чунри сăнар; унта çеç поэт тĕнчепе калаçма пултарать. Тĕнчепе, тӳпепе калаçнине кĕлĕ теççĕ.

«П. Яккусен поэзийĕн тĕнчи... пĕтĕмпех чунлă, чĕрĕ. Чăваш тĕнчи çапла, чăвашăн пурте чунлă: хурăнĕ те, пĕчĕк курăкĕ те; ун пирки чăваш тавлашмасть те, çӳлтен панă пĕлӳпе пĕлет. Яккусеншĕн те вăл факт, поэзи мелĕ мар. Вăл çапла йышăнать тĕнчене. Анчах Яккусен тата ирĕклĕрех, унăн поэзийĕ уçлăхран пулас, çӳлтен пăхма пултарнипе пуль вăл эпир, çĕр çинче çӳрекеннисем, пĕлменнине пĕлет, пире пĕлтерет, тепĕр чухне хамăр нĕрсĕрри çине пире сăмсапа тăрăнтарать. Ме, кур, этем, эс мĕн хăтланатăн тесе»[96].

Мĕншĕн лирика геройĕ пирĕн çак пурнăç çине çӳлтен пăхаfive? Мĕншĕн эпир курманнине кураять? Хуравĕ П. Яккусен сăввисенче пур:

Ӳпкевӗм ҫук. Нумай ыр ҫын эп куртӑм,
Анчах сахал ыр турӑм пулӗ, тен <...>
Чунра хӑпартнӑ ырӑлӑхлӑ ҫуртӑм
Ҫӗре лармарӗ, ларчӗ пӗлӗте...
*(«Ӳпкевӗм ҫук. Нумай ыр ҫын эп куртӑм...»).*

Акӑ ӑҫта иккен поэтӑн пӗтӗм пултарулӑхӗ витӗр сӑрхӑнса тӑракан тунсӑхӗ! Вӑл хӑйӗн ырӑлӑхлӑ килне тӳпене лартнӑ, вӑл, хӑй калашле, кунта ют. «”Утравра” (1992 ҫулта «Чӑваш Ен» хаҫатра пичетленнӗ сӑвӑсен ярӑмӗ. – *Н.И.*) эпӗ символла сӑнара та асӑрхарӑм. ”Утрав” – этем пурӑнакан ҫӗр. Кунта вӑл хӑналӑха ҫеҫ килнине те курать сӑвӑҫ»[97], – тесе хӑй шухӑшне палӑртать Вячеслав Круглов.

Петӗр Яккусен тӗнче ҫине, пирӗн ҫине ҫӳл тӳперен пӑхать. Ытти пулӑмсемпе япаласем пекех сӑвӑҫ пултарулӑхӗнчи *тӳпе* нумай пӗлтерӗшлӗ. Тӳпе – кӑмӑл-сипете хак памалли тасалӑх: хӑйӗн туйӑмӗсемпе утӑмӗсене поэт тӑван кил, тӳпе умӗнче тӗрӗслет, влаҫсемпе ҫынсем умӗнче мар.

Сӑвӑҫӑн малтанхи тапхӑрти пултарулӑхӗнче тӳпен урӑх пӗлтерӗшӗ те вӑй илме пуҫлать: тӳпе – лирика геройӗ ярӑнса вӗҫсе иртес вырӑн. Унта хӑлатла хӑватпа ҫӗкленсе вӑл ҫак ҫӗр ҫинчи ҫылӑхлӑ пурнӑҫӑмӑра сӑнать:

Ҫав хӑлат хӑватне туйса илӗп,
Ҫӗнӗ вӑй килсе кӗрӗ тинех.
Ярӑнса-ярӑнса ҫӗрӗм ҫийӗн
Вӗҫсе иртӗп вара ирхине.
*(«Эп канас пурнӑҫпа пурнаймарӑм...»).*

Ҫапла хӑй те, вулакансем те виссе юличчен сӑвӑҫ сукмакӗ тӳпенелле хывӑнать, ун йӗрне сӑнанӑҫемӗн ним пулман пекех ҫӗрпе тӳпе пӗрлешсе каять. Сӑвӑҫа тӳпене ҫӗр ҫинчи усаллӑх, курайманлӑх, хаярлӑх хӑваласа хӑпартнӑ; уншӑн ҫак ҫул чи асапли, поэт ӑна катарсис урлӑ тупнӑ.

Ай, пӑхрӑм та – айра шырлан мӗлки,
Пуҫхӗрлӗн чӑмрӑм эп унта сасартӑк, –
Эй, тӗлӗнтермӗш пурнӑҫӑн йӗрки:
Пурнас килнипеле вӗҫсе хӑпартӑм *(«Вӗҫев»).*

Малашне ҫак вертикаль поэт сӑввисенче тӗп вырӑн йышӑнать: сӑмах ӑсти пирӗнпе юнашарах пурӑнать пулин те, «ҫӗр ҫинчиех мар». Вӑл вӗҫме те пултарать, куҫҫулӗ те унӑн пит ҫине мар, чунпа тӳпен урӑх тӗнчине тумлать.

П. Яккусен сăвăçăн Уçлăхри уçланки, тӳпери килĕ – пирĕн килĕмĕр. Çавăнпа поэтăн сăввисем пире те çывăх. Шухăшласа та шухăшламасăр, ăнланса та ăнланмасăр çак туйăм пирте пуринче те тĕлкĕшет. Çĕр çинчи пурнăçа чăваш яланах хăналăх вырăнне хунă. Христианлăх киличченех чăвашăн вăл пĕртен-пĕр Турри те, çăтмахĕ те, тамăкĕ те пулнă. Эпир çĕр çинчи киленĕçпе киленетпĕр, анчах ĕç-пуç та, ят-сум та, мул-тупра та, савăшу та, сăри-эрехĕ те пирĕн чуна вĕçне çитиччenех кантармасть. Унтан та ытларах, мĕн чухлĕ ытларах пылакраххишĕн тăрăшатăн, çавăн чухлĕ пылакки йӳççе куçса пырать. Чăвашсем калашле, мăнтăр чирĕ пуçланать, куçăмăрсене тунсăх пусать. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен пирĕн *кил* кунта мар. *Тӳпе эпир çĕр çинчен кайсан пурăнас вырăн мар, вăл – пирĕн кил,* унта çеç эпир хамăр кам пулнине чăннипех те пĕлетпĕр, чун килĕшĕвне тупатпăр. Ăшри иксĕлме пĕлмен вăрттăн тунсăх – *тӳпери тăван килшĕн тунсăхлани* – Петĕр Яккусен пултарулăхĕнче тĕп тема пулса тăрать те ĕнтĕ. Тен, чăваш ăнĕнче тени тĕрĕсрех те пулĕ...

### 2.4. *«Çунать шап-шурă çутă...»*<br>*(Алексей Аттил тĕнчи)*

Кашни вулаканах А. Аттил пултарулăхĕнче чăн малтан тĕлĕнсе каймалла тасалăх тата çутă асăрхать. Çак çутă куçа йăмăхтараканскер мар – таçта шалтан-шалтан пĕр вĕçĕм тӳлеккĕн сăрхăнса тăрать вăл.

Тасамарлăхра, арканура пулас-çуралас илеме курса тăрать А. Аттилăн лирика геройĕ. Кунашкал тĕнче курăм, тĕнче туйăм ун пултарулăхне витерсе тăрать.

Чун-чĕре уявĕ, пурнăç анлăшĕ патне ăнтăлас тĕлĕшрен ăна вырăссен паллă сăвăçипе Н. Языковпа çума-çумăн тăратса танлаштарма пулать. Унăнни пекех, А. Аттил пултарулăхĕнче пурнăçпа тĕлĕнсе антăхни тĕп вырăн йышăнать.

Анчах та чăваш сăвăçин пĕтĕмĕшле пафосĕ Языков поэзийĕнчен раснарах. Н. Языков пултарулăхĕнче вырăс чунĕшĕн palăрăмлă пуççăрлăх, çул çинче мĕн пур çавна пĕтĕмпех аркатса-юхтарса каясла чарусăрлăх иксĕлми тăрать, янкăр çутă, вут-хĕм сирпĕнет...

Алексей Аттилăн вара темле чăвашла пуçтарăнулăх, çыпăçулăх сисĕнет. Шалта тапса тăракан кăмăл-туйăмне «ĕрĕхсе» каясран вăл вĕçĕмех «тилхепине» туртăнтарса,

хытарса пырать пек. Чăваш çыннин чун çирĕплĕхĕ те пур кунта:

Ачам – ачашланаймăн.
Вăл – çутă. Эсĕ – чун.
Лăплан, пуçа пин майлă
пин шухăш хĕснĕ чух.

Тавра пăхса эс хаклă
ăслăлăха вĕрен:
чунра çăтмах та, тамăк та –
алра тыт чĕлпĕре
*(«Çунать шап-шурă çутă...»).*

А. Аттил илем, çураçулăх, пурнăç çĕнтерĕвĕ пирки çеç калаçмасть. Çак илем – пурнăçа юратни, ырă усала çĕнтерни – унăн пултарулăхĕнче чăнлăх пек тухса тăрать. Вăл çак çураçулăха калăплать, унпа пурăнать. Аттил сăввисем малтанах ахаль калаçу екки евĕр çеç туйăнаççĕ. Çав вăхăтрах пуплев формипе содержани уйрăлми çыхăннине куратпăр. «Акăш» сăвва пăхар:

Чупать хум хыççăн хум, чупать, чупать –
Васкать хум хыççăн хум çыран енне.
Хум çапăнать те ĕмĕрхи чулпа –
Пĕле тăркач татать хăй ĕмĕрне.

_ _′ _ _′ _ _′ _ _′ _ _′
_ _′ _ _′ _ _′ _ _′ _ _′
_′ _ _ _′ _ _′ _ _′ _ _′
_ _′ _ _′ _ _′ _ _′ _ _′

Хальхи вăхăтри ĕç-хĕлсемпе («чупать» – 3 хутчен, «васкать») усă курни ĕç хăвăртлăхне сăнарлать. Малтанхи ик йĕркере «хум» сăмаха тăватă хут калани («хум хыççăн хум», «хум хыççăн хум») тата çирĕп ритмика тинĕс ўкерчĕкне куç умне кăларать. Вĕççĕр-хĕрсĕр хумсем килни чăнлăха куçать пек... Хум ĕмĕрхи чулпа çапăнни çинчен калакан йĕркере, пĕрремĕш картра, пусăм тăрук малалла сикет – «хум» сăмаха малти вырăна кăларса автор чулпа хум çапăннин сассине каллех сăнарлăн евĕрлет.

Арпашăнса кайнă çемĕ вылявĕ иккĕмĕш çаврара та йĕркене кĕрсе пĕтмест. Тĕрĕссипе, йĕркене кĕмелле те мар унăн, мĕншĕн тесен татах кĕтменлĕхпе, тĕлĕнтермĕшпе тĕл пулатпăр:

Сасартăк çак хумсен ушкăнĕнчен
Шап-шурă хум килсе тухать ума.
Мĕн-ма кунта вăл шурă пĕр-пĕччен!
Мĕн-ма чупмасть ытти пиншер хумпа?

- -′ - - - -′ - -′ - -′
- -′ - -′ - -′ - -′ - -′
-′ - - -′ - -′ - -′ - -′
- -′ - -′ - -′ - -′ - -′

Малалла, виççĕмĕш çаврара, кĕтмен çĕртен сиксе тухнă шурă хум хум та мар, шурă акăш пулнине куратпăр. Кĕтменлĕх çинчен калани содержанире çеç мар, çемĕ такăнăвĕнче те (урăхла каласан, формăра) ӳкерĕнет:

Ку – акăш.
Чул пек – вăл та авалтан.

-′ -′-
-′- -′- - - -′

Унтан акăш ташши пирки калать Аттил лирика геройĕ. Акăш ташшийĕ илемлĕ юрра куçать:

«Эп, акă – акăш –
Шурă акăш эп.
Пике пек тейĕç
Ман çинчен кĕçех.
Эп,
Акăш пек.
Шыв çийĕпе ишеп...
Эп, акă – акăш.
Шурă акăш çех!
Ман юрату та – акăшах.
Çынсем!
Эсир телейлĕ хăвăр çĕр çинче.
Ман юрату çухалчĕ те –
кунсем,
çĕрсем
тата
Çак кӳлĕ те – кичем...».

Сăвă схеми çапларах курăнать:

1) - -′ - -′ -
2) -′ - -′ - -′
3) - -′ - -′ -
4) -′ - -′ - -′

5) -
6) -′ - -′
7) - -′ - -′ - -′
8) - -′ - -′ -
9) -′ - -′ - -′
10) - -′ - -′ - -′ - -′
11) - -′
12) - -′ - -′ - -′ - -′ - -′
13) - -′ - -′ - -′ - -′
14) - -′
15) - -′
16) - -′
17) - -′ - -′ - -′

Тĕлĕнтермĕш мар-и? Схемăна пăхсассăн верлибр виçине куратпăр: пусăмсем хăйсен вырăнĕнче мар, рифма туллилĕхĕ çук – анчах таçтан татăлми юрă илтĕнет («а» сасă çине ӳкекен пусăмсем ăна тата чĕрĕрех тăваççĕ). Предложенисем кĕске, вĕсем вăрăм йĕрсемпе, хӳреллĕ пăнчăсемпе, нумай пăнчăсемпе «тулса» ларнă. Кашни чарăну паллине шута илсе вуласассăн нимĕнле юрă та илтĕнмест пек. Çапах юрă юхать. Ăçтан сăрхăнать вăл? Мĕн çуратать-ха ăна? Тупсăмĕ ансат иккен. Йĕркесене умлă-хыçлă çыпăçтарса пĕр татăлми вырнаçтарсассăн – пĕр сывлăш çаврăмĕпе каланса тухакан пуплев пулса тухать:

- -′ - -′ **- / -′** - -′ - -′ / - -′ - -′ **- / -′** - -′ - -′ / **- / -′** - -′ /- -′ - -′
- -′/ - -′ - -′ **- /-′** - -′ - -′ /- -′ - -′ - -′ - -′ / - -′ /- -′ - -′ - -′
- -′ - -′/ - -′ - -′ - -′ - -′ / - -′ /- -′ /- -′ /- -′ - -′ - -′

Йĕркесем кунта картсен пĕтĕмĕшле юхăмне, пĕтĕмĕшле ярса илекен ташă кĕввине пăхăнаççĕ. Çапла «Ташшийĕ ун – пурнăçпала пĕр тан. / Ташшийĕ ун – пуласлăха куçать» тени чăн пек туйăнать.

Картсен вĕçĕ-хĕррисĕр юхăвне чăрмантараканни, пăсаканни нимĕн те çук. Юрату çухални пирки калакан вун виççĕмĕш йĕркере те çемĕ татăлмасть. Чун ыратăвне интонаципе логика сикчĕсем (паузăсем, вĕсем тăваттă) систереççĕ. Сикчĕсем сăмахсене уйрăм йĕркене вырнаçтарнипе пулаççĕ. Унсăр пуçне çак сăмахсем («кунсем», «çĕрсем», «кичем») пĕрешкел сыпăксемпе вĕçленни пĕркĕвĕлĕх тăвать, йывăрлăх-кичемлĕх туйăмĕ çуратать. Анчах, маларах палăртрăмăр, пуплев екки сĕмсĕррĕн татăлмасть, лирика геройĕ трагеди пирки систерсе çеç хăварать.

Çак сăввăн тепĕр çавринче сăнчăра татса тухнин кĕвви-не асăрхатпăр (П. Эйзиншăн кăтартуллăччĕ):

Çĕкленчĕ шурă акăш сывлăша,
Вăл халĕ шурă пĕлĕтпе пĕр пек.
Ăш çил ăна вĕçмешкĕн пулăшать.
Вĕçет вăл тепĕр акăш çулĕпе.
Чупать хум хыççăн хум, чупать, чупать,
Васкать хум хыççăн хум çыран енне.
Хум çапăнать те ĕмĕрхи чулпа –
пĕле тăркач тататъ хăй ĕмĕрне *(«Акăш»)*.

Эйзин, Яккусен сăввисенче «ш», «ç», «с» сасăсен аллитерацийĕ тунсăх кĕвви çурататчĕ, тĕнче хĕсĕнсе те хĕсĕнсе пынине сăнарлатчĕ пулсан – Аттилăн пултарулăхĕнче урăх-ла сĕм йышăнать: «ш», «ç» черетленĕвĕнче кайăк çуначĕсен сассине илтетĕн, çӳлелле вĕçнине куратăн.

Сăвă вĕçĕнче çавра повторĕ хирĕçлетӳ (контраст) тума питĕ кирлĕ. Икĕ тĕнче хире-хирĕçлĕхне, вĕсен уйрăмлăхне уçăмлăрах кăтартать вăл.

Юлашки икĕ çавра хушшинчи пуш вырăна «çухатни-не» те асăрхар: пурнăç хавалла сăвă çаври çӳлерех вырнаçни шур акăш ăçтан çăлăнса тухса ирĕкелле мĕнле вĕçсе кайнине лайăхрах сăнарлать: унта, аялта, тинĕс кĕрлет, чул çырана çапăна-çапăна хумсем (туйăмсем) вилеççĕ – ăна унта вилĕм те кĕтетчĕ пуль. Анчах акă акăш «шурă пĕлĕтпе пĕр пек», «ăшă çил ăна вĕçмешкĕн пулăшать», пурăнма хавал хушать. Çапла вара Аттилăн пултарулăхĕнче каллех пурнăç тĕттĕме, сивве, вилĕме çĕнтерет.

Паллах, акăш сăнарĕнче, унăн ташшипе вĕçевĕнче эпир лирика геройне, унăн синкерлĕ юратăвне тата илем-пурнăç çĕнтерĕвне сĕмлетпĕр.

Тепĕр тĕслĕх илер:

Тĕлсĕр çул евĕрех ăнман пурнăç:
утатăн, утатăн, утатăн,
утатăн та – анăç е тухăç
ăçта пулнине те манатăн.

Çӳлте – кайăксен патефонĕ,
умра – çут çанталăк чĕрçи.
– Итле! – тет, кĕрлет симфони,
çырла йăлăнать: тат – çи!

Йăван икĕ çул юппине
çитсе хутаçне хунă пек,
тухатпăр эпир тĕнчене
чунри мĕнпур ыр ĕмĕтпе
*(«Тĕлсĕр çул евĕрех ăнман пурнăç...»).*

Тимлĕрех пăхсассăн ĕç-пуç аталанăвĕ «саккун тăрăх» виççĕмĕш çавраран пуçланса пĕрремĕшĕпе вĕçленмелле пекчĕ. Çакнашкал тунă пулсассăн сăвă трагедипе, пессимизмла туйăмсемпе вĕçленесси куç кĕретехчĕ. Анчах автор ĕç-пуç, шухăш еккине хирĕçле çулпа ярать: çапла вара «ăнман пурнăç», «йывăр шăпа» сисĕнсе çеç тăрать, ырату çиеле тухса синкерлĕх çĕнтермест. Сăвă ырра шаннипе вĕçленет. Лирика геройĕ хăйне хăй улталани, асапа курмăш пулни çук кунта – вăл чăннипех те хăй сăмахне ĕненет.

«Ман шутпа, çак чăваш поэчĕн тĕнче туйăмĕн синкерлĕхĕ, хăй ăрăвĕнчи ытти поэтсемпе танлаштарсассăн, чи тарăнни тата чун-чĕрене тасатаканни пулнă. Çак катарсиссăр А. Аттил сăввисенче пурнăçа антăхса йышăнни те пулмĕччĕ», – тесе çырать А.П. Хусанкай[98].

Чăннипех те А. Аттилăн пурнăç трагедийĕ, ытти чăваш сăвăçисемпе танлаштарсан, чи тарăнни пулĕ:

Шăпчăк та çав анăç. Асăнта
пур тепри – ачалăху тата
ывăлун ачалăхĕ унта,
урăх ним те çук та, пурпĕрех
çакăншăн тав ту тăван çĕре!
*(«Тав сăмахĕ»).* (Паллă туни пирĕн. – *Н.И.*).

Шăпчăксăр, анăçсăр тата хăй ачалăхĕпе ывăлĕн ачалăхĕсĕр пуçне урăх нимĕн те çук унăн пурнăçĕнче. Хăрушă. Çакăнтан та ытла пирĕн чуна кисретекенни пур: Алексей Аттил геройĕ хăй шăпине, тăван çĕре чĕререн тав тума, кӳрентерекене таса кăмăлтан каçарма вăй-хăват çитерет. Вăл хура тĕсре шурă курнинче пирĕштилле тасалăх вĕркĕшет:

Ăсататăн вара каллех
тин кăна ывăлна кӳрентернĕ
тĕлĕнтермĕш тĕнче ытамне
*(«Аннене»).*

Е тепĕр тĕслĕх:

Кунĕ – сулхăнрах уяр.
Кунта пасар кăнтăрлаччен шавларĕ.
<...> Вараланчăк, пушă.
Ман çак самантра
пĕр ĕмĕт çеç – тухса тарас килет.
<...> Çак саманта ылхантăм эп чунра,
анчах мĕн тăвăн: çынлăх пур унра *(«Пасар»).*

А. Аттилăн поэзи тĕнчине йăлтах çутăран çыхса, эрешлесе тунă теме пулать. *Çутă* сăнарĕ унăн ахаль çутă çеç мар – темĕскер питĕ пысăккин, чи кирлин пуçламăшĕ. Е, унтан та ытларах, пуçламăшсен пуçламăшĕ. Пуринчен те (усалпа ырăран та) çӳлте тăрать вăл. Тĕрлĕ сĕм йышăнсассăн та («çутă-çутă», «çутă», «сулхăн çутă», «шурă çутă») пĕлтерĕшĕ яланах пĕр юлать: пурте иртет, пурте пĕтет, çутă çеç ĕмĕрех пулнă, пур, пулать те.

Туратсен черчен хура тушьне çĕнсе
юр ӳксе çутатрĕ: çутă-çутă.
Çутăрах та çутăрах çиçеç кунсем.
Хĕл иртет те, çу татах та çутă.

Тертĕм-шухăшăм, санпа эпир паян
çутă куçĕ умĕнче пурнатпăр.
Мĕн ырри е усалли иртет, каять,
çутăра кăна тăрса юлатпăр.

Çутă-çутă тăвансенĕн куçĕсем.
Ачасен сăн-пичĕсем хавас та çутă.
Туратсен черчен хура тушьне çĕнсе
юр ӳксе çутатрĕ: çутă-çутă
*(«Туратсен черчен хура тушьне çĕнсе...»).*

Малтанлăха пирĕн умра юр çунин ялкăшăвĕ çеç пек, анчах каярахпа çав çутă килес кунсем, çу вăхăчĕ çине сапаланнине куратпăр та ăнланатпăр: «тăвансенĕн куçĕсенчи», «ачасен сăн-питĕнчи» çутă ахаль çиçев çеç мар. Вăл çӳл тӳпен, вĕçсĕрлĕхĕн ӳкерĕнĕвĕ...

Çапла А. Аттилăн çутă сăнарĕ сăмаха та, йĕркене те, çаврана та, сăвва та шăнăçаймасть, пĕтĕмĕшле поэзи тĕнчинче те ăна тăвăр.

Çӳлерех илсе кăтартнă пĕр тĕслĕхре çеç вăл вун тăвату хутчен тĕл пулать (çак тымартан пулнă ытти сăмахсене те

кĕртрĕмĕр). Апла пулин те кунта ахаль сăмах вылявĕ çук. Çутăн çак асамат кĕперĕ лирика геройĕн чунĕнчен сăрхăнса тăрать. Лирика субъекчĕ этем ĕмĕрĕ шутсăр кĕске пулнине, вăхăт çиçĕм пек вĕçнине туйса тăнăран-тăр пурнăç кашни самантне илемре ирттерме чĕнет:

Эс манса итле ĕç-хĕл çинчен –
сан валли юрламĕ вăл (шăпчăк. – *Н.И.*) ыран
*(«Тав сăмахĕ...»).*

Кашни çĕнĕ куна та Турă парни евĕр йышăнать сăвăç геройĕ:

Телей вăл – тин вăраннă ир.
Телей вăл – кун, телей вăл – тапхăр *(«Йăмăка»).*

Пурнăçа-илеме-çураçулăха (Аттилăн вĕсем синонимла пĕлтерĕшлĕ) пуç çапса пурăнни сăвăсен тĕп кĕвви-çемми пулса тăрать. Сăвăçăн лирика геройĕ тин кăна тĕнче уçакан ачана аса илтерет. Ахальтен мар йĕркерен йĕркене «чечек», «лĕпĕш», «ача», «юрă», «çуркунне» тата ытти сăнарсем куç-са пыраççĕ (пĕр тӳнтерле сăнар та çук). Сăвă йĕркисем хăйсемех нумай калаççĕ:

Тĕнче тин çеç тасалнă евĕр шурă.
Вăрман юрлать, уй-хир юрлать ăшра
*(«Пин те пĕр юр пĕрчи – пин те пĕр юрă...»).*

* * *

Çĕн кун шаккать чӳречерен.
Кун кунлас шут уçă та сипетлĕ *(«Çĕнни»).*

А. Аттил лирики пирки нумай калаçни кирлех те мар. Ун вырăнне – пĕр чарăнми илтĕнсе тăракан *юрă-кĕвĕпе* вĕçĕмсĕр киленме, ачалла *уçă чунлăхпа тасалăха* чĕрепе вĕçĕмсĕр туйма, тĕрлĕ-тĕрлĕ тĕссенчен çыхса тунă *илеме* вĕçĕмсĕр пăхса савăнма çеç пулать пулĕ...

Унăн сăввисене ăша хывма пĕлсессĕн – *çутă*, тĕнче пысăкăш *çутă* юлать чунсенче.

## 2.5. *«Клавишсем ҫийěпе чěлтěртетрě Чун таси» (Георгий Федоров лирики)*

Г. Федоровăн илемлě тěнчине канон, виҫе тěвěлесе тăрать. Унăн пултарулăхěнче ҫěнěформăлăх, экспериментлăх туртăмěсем ҫěнтермеҫҫě, авангардизмпа модернизм элеменчěсем курăнсах каймаҫҫě. Тěнче классикěсен опытне ăстăна, чун варне пуҫтарса кулленхи ансат япаласемпе пулăмсен вăрттăн нумайпěлтерěшлěхне, нумайенлěхне, курнă чăнлăха вулакан патне ҫитерме сăвăҫ илěртӳллě ăсталăх тупать.

Г. Федоров сăввисенче ытларах классикăлла формăсем. Ăна сонет, октава, рондо кăсăклантарать. 2002 ҫулта тухнă кěнеки те «Рондо» ятлă. «Рондо» французла «ҫавра» тенине пěлтерет. Поэзире вăл XVI ěмěрте, тěпрен илсен, вун виҫě йěркеллě, икě састашлă сăвă ҫаври пулса кěнě. Рондо йěрки тăрăх, сăвăри пуҫламăш сăмахсем сăвă варринче тата чи вěҫěнче тепěр хут тěл пулаҫҫě. Ҫавăн пекех сакăр, вун пилěк тата ҫирěм пилěк йěркеллě рондосем те пулаҫҫě. Форма тěлěшěнчен саккунě вěсен пурин те пěр пекрех. Рондо жанрě Г. Федорова ěмěрсен сывлăшěшěн, жанрăн философилле содержанине калăплама кирлě. Ку вара ун поэзийěн эпикăлăхне кăтартать[99].

Хальхи чăваш лирикинче сăвăҫсен трагеди сăлтавěсем тěрлěрен. Маларах каланине тепре аса илер: П. Эйзин чунě мěншěн ыратнине калать, тепěр чух кăшкăрать – анчах ун сăмахне тěнче илтмест (илтесшěн те, итлесшěн те мар). Л. Мартьяновăн, Н. Сельверстровăн инкеклěх туйăмě юрату объекчěпе ҫыхăннă (вăл ҫумра пулсан – хупăрласа тăракан тěнче те ҫураҫуллă, сивěнсен – хěвел те хура). П. Яккусен геройě чěрине ыраттарса чăнлăх шырать: ăна хăй суйласа илмен пěчченлěх пусарса тăрать. М. Сунталăн чун инкекě пирки те сăмах хускатăпăр-ха – унăн лирика субъекчě чăнлăха пěлет: чăнлăх ăна хăратать.

Г. Федоров пултарулăх тěнчинче ҫакăн йышши, халě ҫеҫ ҫӳлерех палăртнă сăлтавсем ҫукрах пек. Анчах сăввисене пурпěрех темěнле синкерлěх тěтри хупласа тăрать. Сăвăсерен тенě пек тěл пулакан сăмах ҫаврăнăшěсем лирика геройěн тăрăмне хăйсемех уҫса параҫҫě: «тăр пěччен», «вěҫсěр ҫухату», «лăшсăр ырату», «туслашрăм эпě хурлăхпа», «сивě

каҫ – ҫумри малаш», «ҫӳретӗп халь ним тӗссӗр пӳлӗмре», «мана сӑхланнӑ хӑрӑк шӑллӑ манӑҫ», «хуҫаланать чунра хӑр тӑлӑх тӗлӗк» т.ыт.те.

*Кӗр* – Г. Федоров пултарулӑхӗнчи тӗп сӑнар. Лирика геройне сарӑ кӗр «хавхалантарать, ҫунатлантарать, сӳрӗк ӗмӗте хӗм вутлантарать», кӗр вӑрманне кӗрсен ҫеҫ унӑн чӗри «ирӗккӗн те уҫҫӑн тапать», унран тасараххи, кӑварлӑраххи ҫук уншӑн. Вӗрене йывӑҫӗнех мӗн тери пысӑк пӗлтерӗш. Вӑл – ҫул кӑтартать, ҫула ҫутатать, вӑй хушать, упраса тӑракан, йӑнӑшсемшӗн намӑслантаракан темӗнле киремет-чӳк йывӑҫҫи пекех туйӑнать. Вӗрене – ашшӗ-амӑшӗпе пӗрлештерсе, пурнӑҫпа вилӗме ҫыхӑнтарса тӑракан ҫутӑлӑхшанӑҫлӑх символӗ тата икӗ тӗнче чикки. («Рондо» кӗнеке пуҫламӑшӗнче ***«яш вӗренелӗх»,*** вӗҫӗнче – ***тӗттӗме ҫӗнекен, ҫул кӑтартакан ҫирӗп вӗрене:*** эппин, лирика геройӗ те ӳсрӗ, ҫирӗпленчӗ мар-и? Тата кунта рондо ҫавралӑхӗ те пур). Ҫапла кӗр сӑнарӗ аталанать, тарӑнланать – сисмесӗрех «кун-ҫул кӗрне», «этемлӗх кӗрне – пинҫуллӑхсене» куҫать.

Мӗншӗн пӗрмаях кӗр сӑнарӗ патне таврӑнать-ха лирика геройӗ? Тупсӑмӗ сӑввисенчех. Хальхи чун тӑрӑмӗ ӑна, ӳнерҫӗ чунлӑскерне, тивӗҫтермест, туйӑмсен туллилӗхӗ ҫитмест, ҫара ӑспа пурӑнни ывӑнтарса ҫитернӗ. «Соната пек тулли пулинччӗ пурнӑҫ», – тет вӑл ӗмӗтленсе. Тепӗр хайлавра шалта мӗн пуррине пӗтӗмпех уҫса парать:

Йӑлтах эп ҫухатса пӗтернӗ...
Пур туйӑма тӑкса пӗтернӗ.
Яшлӑхӑмран савса вӗҫтернӗ
Ӗмӗтсене сив ҫил ҫӗнтернӗ.
Чӗр туйӑмсемшӗн сив ӑс-хакӑл
Хывать чӑрмавлӑ ту та чакӑл,
Пуплет хавассӑр мӑкӑл-мӑкӑл...
Вӗри хавалшӑн сив ӑс-хакӑл *(«Хӗсмет ярӑмран»).*

Ҫавӑнпах та лирика геройӗ шавах савнӑ юлташӗпе кӗрхи вӑрманта (сайра хутра пас тытнӑ йывӑҫсем хушшинче), каҫхи хула урамӗсемпе ҫӳренисене, юлташӗ хӗрсе искусство ҫинчен калаҫнисене, фортепианопа ҫӑмӑллӑн вылянисене куҫ умне кӑларать, ун чухнехи калаҫӑва тепре аса илсе хӑй ӑшӗнче малалла тӑсать. Анчах темшӗн ҫак ырӑ сӑнар чӗр пурнӑҫриех пек туйӑнмасть, ытларах ӗмӗтри сӑнар пулас:

Чунрине сăнлăха хайлама
Кăвакарчăн пек чун – тупаймарăм
*(«Хĕсмет»* ярăмран*).*

«Хĕрӳ хавалшăн çĕнтерӳллĕн утма, ăнăçлă çул хĕрне тухма» лирика субъекчĕ хăйĕн пурнăçĕнче пулманнине (пулнă пулсассăн та – нумай тарăнлатса, хитрелетсе) шухăшласа кăларать, вăл çакăнпа пурăнать, вăл çакăнпа çеç чĕрĕ. Урăхла каласан, пулассине асаилĕве куçарать, хăй витĕр кăларать те халĕ пурăнмалăх тата ĕмĕтленмелĕх техĕм тупать. Ĕмĕтрен ĕмĕт тăвать, ыранлăх хавал тупать:

Пинçуллăхсем – этемлĕх кĕрĕ –
Килсен ума пĕр вĕçсĕр чĕрĕ,
Ыранхине сăвап тума *(«Хĕсмет»* ярăмран*).*

Е тата:

Ĕнерти Ыранпа эп –
Çырлахрăм *(«Ĕмĕр. Çапла чĕнетчĕç...»).*

Асаилӳсем, лирика геройĕн амăшĕ калашле, «тӳр сукмакпа утас вырăнне çук чăтлăхра çĕтсе çӳрени». Çак «çук чăтлăх» мĕн тума кирлин сăлтавне кăшт маларах ăнлантартăмăр: ăна çивĕч туйăмсем, пурнăç туллилĕхĕ çитмест, мĕн пурри (е пулни) тивĕçтермест. Çавăнпа ĕмĕтри савнă юлташĕн сăнарĕ кăна мар, искусство çыннисем (литература персонажĕсем те) «чĕрĕлсе» куç умне тухаççĕ. Хăйне май театр йĕркелесе ертсе пынăн туйăнать. Ăна, ахăртнех, хăй те йышăнать. Ахальтен мар театр (ĕмĕлке театрĕн, маскăсен театрĕн) сăнарĕ пĕрре мар мĕлтлетет:

Эп кăна вăл –
Ухмах та айванçă,
Пурнăçа сăнарта
Ăнлананçă. <...>
Пĕр сӳнет, çуталать чун хунарĕ
Шурăпа хурана уйăрса.
Ĕмĕлкеллĕ театрĕн сăнарĕ
Хывăнать
Ман ăшра кун курса
*(«Иртейнĕ кунсенчен пĕр çак сăн кăна»).*

Тӳпери «Нарспи» авторĕ çемçен кулнине илтет вăл; арçурирен таракан Хĕветĕр măкăл-măкăл калаçни хăлхана кĕрет, симĕс шавлăн ешерекен çеçен хирте ака тунине курать; Çеçпĕл чĕри трагедиллĕн тапни янăраса тăрать лирика геройĕн пуçĕнче; пӳкле шăпаллă Ю. Скворцов асне килет. Тĕкĕр умĕнче «кивелерех панă фракпа, цилиндрпа, кукăр авăрлă туяпа» тăракан С. Есенина курать.

Çӳлти сасса-ши тăнласа –
Çĕр варринче вăрантăм эп.
<...> Залра ларатчĕ Шостакович.
Тăнлатчĕ Рихтер кĕввине *(«Хĕсмет»* ярăмран*)*.

«Ярса пусатăн та шат урăх тĕнчене лекетĕн, – тесе çырать прозăлла йĕркесемпе Г. Федоров, – унта Бетховен, Шопен, Чайковский, М. Федоров унта... Вилĕмпе пурнăç хушшинчи хутлăхра эп, сăмахпа кĕвĕ хушшинче».

Г. Федоров лирики сисмесĕрех прозăпа ылмашăнать.

«...Çапах та классикăлла формăсен кĕр туллилĕхĕ-кĕрпекĕ хăйне тивĕçлĕ вырăнне тупса пĕтерейместь, тикĕс ритм сасартăк прозăна куçса каять. Сăвва вырнаçман шухăш лирикăран эпика ытамне тарасшăн ăнтăлать. Ку çакна пĕлтерет-тĕр: паянхи ахăр саманара классикăлла формăн пайтитĕрри чакрĕ, вăхăт улшăнать, поэзи çĕнĕ çул, çĕнĕ форма шырать. «Рондо» кĕнеке те, тен, иртнĕ тапхăрпа ыранхи кун чикки пулĕ эппин, икĕ эпоха хушшинчи авăк. Поэзи ни прозăра, ни лирикăра пулнине ăнланни»[100], – тесе çырать И. Исемпек.

Сăвăра вĕçленмен шухăш эпикăна тарать: умĕн каланă шухăша пуянлатать çеç, хирĕçлемест. Лирика геройĕ хăйĕн туйăмĕ-пăшăрханăвĕсене уçса парас тенĕ чух сăмах сăвă формиллĕ хывăнать, шухăш-туйăма вара – прозăлла йĕркесемпе пĕтĕмлетет. Тĕслĕхрен:

Паян ман пӳлĕм – хам пекех хавассăр.
Çăралнă тунсăх тулчĕ сăрхăнса.
Рояль шута кайса ларать пĕр сассăр.
Сăмаххăрсем...
*(«Паян ман пӳлĕм – ман пекех хавассăр»).*

Çак сăвă йĕркисенче поэт хăйне тунсăх пусни çинчен пĕлтерет, рояль те чĕмсĕррĕн шухăша путнă иккен. Çапла

герой чунӗнче темӗнле пусаракан йывӑрлӑх пуррине ҫеҫ куратпӑр, музыка инструменчӗ сас кӑлармасӑр ларнин пӗлтерӗшӗ вӗҫне ҫитиех паллӑ мар. Ҫапах кунта тата темскер пуррине, чун тӗпӗнчине каласа пӗтерейменнине вулакан та, поэт хӑй те уҫӑмлах сисет. Ҫавна пӗле тӑркач сӑмахӗсем валли тата урӑхла форма шыраса пӑхать: малалла прозӑлла йӗркесем ҫырӑнаҫҫӗ. Картина уҫӑмланать те, трагеди хӑратса ярать: кун пек лару-тӑрура сӑмахсем ҫухални мар, чи хӑрушши – *рояль шута кайса пӗр сассӑр ларни*. Чӑн инкекӗ ҫакӑнпа ҫыхӑннӑ.

Апла чӑннипех лирика геройӗн чунӗнче темле ытла пысӑк синкерлӗх саманчӗ, вилӗм (е вилес) умӗнхи сӑнсемсӑнарсем: тӳпене тухнӑ уйӑх «ҫурма вилӗ тӗс» сӑрхӑнтарать, чӳрече умӗнчи йывӑҫ та «инкек палли пек», ҫӑралнӑ тунсӑх таҫта та – вӑл сывлама памасть.

Вулакана ӗнтӗ мӗн пурри-ӑнланни ҫителӗклӗ. Лирика субъекчӗшӗн вара, хамӑрӑн классик калашле, «вӑл тӑшмана пӗтерсен, унтан вӑйлӑ тӑшман пур»: вӑл хӑй сӑмахне каларӗ пулин те чунне ҫӑмӑллатаймарӗ, асап ытамӗнчех юлчӗ. Ҫакна вӑл «Рояль шута кайса ларать пӗр сассӑр» йӗркене тепӗр хут хайлав вӗҫӗнче пусӑмласа систерет.

Ҫапла вара хайлавсене уйрӑмшар тӑракан пайсем теме йывӑр, вӗсен пӗтӗмлӗхне, пӗрлехи чун хавалне шӑнӑрлакан темиҫе йӗр пур: эпос патнелле туртакан проза; геройӑн кӑмӑл тӑрӑмне шӑнӑрлакан кӗр сӑнарӗ; ҫут ҫанталӑк пайрӑмӗсене кӑмӑл суранӗпе ырри тӑвакан этем; малашлӑхӑн драмӑллӑ, кунпа пӗрлех мал ӗмӗтлӗ юртти-чуппи т.ыт.те. Ҫавӑнпа та ку тӗртӗмсене пӗрле илсе поэма теме пулать[101].

Г. Федоров пултарулӑхӗ «ни прозӑра, ни лирикӑра» пулнин сӑлтавӗ пирӗншӗн раснарах курӑнать. Вӑл лирика геройӗн психологийӗпе ҫыхӑнса тӑрать-тӗр. Кӗвӗ-ҫемӗне питех те туяканскер, лирика геройӗ ытла та аманчӑк, сисӗмлӗ, ун кӑмӑлӗ, чун тӑрӑмӗ ытла та вылянчӑк. Объекта каласа ӑнлантарма меллӗрех «чун уҫҫи» меслечӗ, «сӑмахӑн пӗртен-пӗр таса вӑрттӑнне» шырать вӑл.

Вара эп –
Ни кӗвӗ, ни сӑвӑ
Хайламӑттӑм тек нихӑҫан.
Чунпа та эп пулӑттӑм
Сывӑ.
Хам кӑмӑлӑмпа та –
Хуҫа *(«Хӗсмет»* ярӑмран*)*.

Эпикӑна куҫса каякан сӑмах чӑннипех шыравпа ҫыхӑннӑ.

Г. Федоровӑн лирика субъекчӗн трагизмӗ тулса ҫитнӗ туйӑмӗсем-шухӑшӗсем ҫинчен *тӗнчене каласа ӑнлантарайманнинче е – калама хӑяйманнинче, чунне уҫайманнинче* пытарӑннӑ-тӑр. (Чӑн-чӑн поэт сӑмах ҫитменнипе аптрани ахаль те пирӗншӗн паллӑ.) *Калайман сӑмахшӑн пӑшӑрханни* – Г. Федоров пултарулӑхӗн тӗп пафосӗ. Сӑлтавӗ кунта геройра. Ӑна сӑмах ҫитмест (аса илер: Эйзин, Яккусен геройӗсем сӑмаха калаҫҫӗ – анчах вӗсен чӗре кӑшкӑрӑвне тӗнче илтмест е итлесшӗн те мар), хӑй мӗн калани тата мӗнле калани ӑна тивӗҫтермест:

Яланхилле хӗрӳ пулмарӗ
Вара калас сӑмах кӑварӗ *(«Хӗсмет»* ярӑмран*).*

* * *

Ах турах, –
Кӗвӗпе –
Мӗн танлаштӑр?!
Сӑмахсем – танлашаймӗҫ.
Ҫуках! *(«Сасӑсем пӗр ҫӗре тӑкӑнса...»).*

* * *

Пин КӖВӖРЕ хитре хавасӑм...
<...> Чи кирлине кала пӗлмерӗм,
Чун таттине уҫа пӗлмерӗм *(«Хӗсмет»* ярӑмран*).*

Ҫак сӑвӑҫа кӗвӗ-ҫемӗ тӗнчинче ҫеҫ ҫӑмӑл, унта ҫеҫ вӑл чунне ирӗке ярать (рояль пӗр сассӑр ларнӑ чухне ӑна еплерех йывӑррине куртӑмӑр ӗнтӗ: вилесле хӗн; илемсӗр сӑнсем, ӳкерчӗксем куҫ умӗнче выляма пуҫлаҫҫӗ). «Акӑ Чайковский. Пӳрне вӗҫӗсем тӑрӑх ҫӗр-пин шухӑш, туйӑм сӑрхӑнать. Эп сӑвӑра ун пек калаймастӑп...» – тет куҫӑн калаҫура та Георгий Иосифович. Чӑваш юррисем те ӑна вӑй хушаҫҫӗ, пурӑнма хавхалантараҫҫӗ. Ф. Лукин, Г. Лебедев, А. Петров, Г. Хирбю – ун кумирӗсем. Ҫак кӗвӗ ӑстисем тупнӑ янравсенче тӑван улӑхсен, шӑнкӑр ҫӑлкуҫсен, уй варринчи пӗччен хураман, варсен-ҫырмасен сассине илтет вӑл, хӑй юрӑ кӗвӗленӗ чухне те улӑхпа хир сассине итлеме, илтме тӑрӑшать.

Темĕнле авăра туртса кĕрсе каять унăн поэзийĕ. Тĕлĕнмелле: вуланăçемĕн сăвă шухăшĕ çухалать те, лирика геройĕн чун кĕввипе çураçуллă çемĕ çеç тăрса юлать.

Кăмăлĕ кӳтсе çитсен «пин-пин хаярлăх» кĕрет хăлхине (кун пек чухне йĕркесенче сонорлă сасăсем йышланса каяççĕ), хыççăнах – чĕрене «ачашлăх ыталать» (çемçе хупă сасăсем тăтăшланаççĕ). Çапла чун кӳтнине «ачашлăхпа тĕвве çыхса» çĕнтерет. Анчах çав вăхăтрах, «Бетховен сĕннĕ çав юр-варăн сĕткенлĕхне тутаннăçем», чунĕнче нихăçан пулман вут çунать. Ак рояль чĕтрет, умра – мантармăш кĕтрет. Сăмах çитмен чухне, чун тăрăмне уçас килнĕ чухне классикăлла музыка хайлавĕсем патне таврăнать поэт. Кăсăклă ырăн:

Те Блокăн,
Те Есенин каçĕ
Умра тăрать хăлаçланса!
Ах!
Сансăр эп епле çĕр каçăп
Кăвак çутчен асапланса?
Йĕрет пĕр сассăр пианино.
Бетховен каçĕ пек йĕрет...
*(«Те Блокăн, те Есенин каçĕ...»).*

Куратпăр: витĕмлĕрех ăнлантарма илемлĕх мелĕ шырать – малтанхи метафорăсем (Блок тата Есенин каçĕсем) каймаççĕ, юрăхли – Бетховен каçĕ. Ĕмĕтленнĕ чухнехи тăрăм унăн – «е Шопен, е Чайковский шыравĕ», кĕрĕн вуткăварлă, хастарлă тĕнчи – Бетховен мăнаçĕн уявĕ. Савнине ăнланма та ăна Шуберт пулăшать: «Сана эп Шуберт кĕввинче ăнлантăм».

«Клавишсем çийĕпе чĕлтĕртетрĕ Чун таси», тинех лирика субъекчĕ чунне уçаять, тинех – хаваллă, тинех уншăн ыранхи кун хаваслăрах:

Клавишсем çийĕпе чĕлтĕртетрĕ
Чун таси.
Çĕн хăват шăратса.
Сарă çулçă вĕçет
Хум çӳретнĕн.
Яш хаваллăн хастар çуратса.
Хама хам çамрăкрах курăнатăп,
Кĕр кĕвви вырнаçать те чуна.
Кĕр килет те –

чунпа вăранатăп.
Яш хаваллăн утап вăрмана.
Сар кĕрпе пуянрах курăнатăп,
Хавасрах эп кĕтеп –
Ырана *(«Вăй çук, – тетчĕ атте...»).*

Паллах, çавнашкал туйăм-сисĕмлĕ çынна иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенчи йăлт аркатакан-ишекен-ватакан ахăр самана кисретмесĕр, амантмасăр иртмен ĕнтĕ (ку – синкерлĕ тĕнче курăмăн тепĕр енĕ). Укçа-тенкĕ пуç пулса тăнă тапхăрта çынсем пушаннине те кĕвĕ-çемĕ улшăнăвĕпе сăнарлать. Шопен – чунлăха, тарăнлăха, кăмăл ăшшине калăпласа тăрать пулсассăн, рок музыка – çиелти хĕвĕшӳлĕхе, чунсем хытнине, шăв-шава.

Утăм тăваяччен, пуласлăх алăкне уçаяччен хăйĕн чун сассине паллă юрă-кĕвĕ ăстисен музыкипе шайлаштарса виçет Г. Федоров геройĕ:

Нейгауз, Рихтер кăмăлне тăнларăм.
Умри çула, тен, кăлăхах хăтларăм?..
Тупса пулайĕ-ши çул хыттине?..
*(«Пуласлăха, тен, кăлăхран хăтларăм...»).*

Çак поэт пултарулăх тĕшшине ăнкарма филолог пулни çеç çителĕксĕр – музыка ӳнерĕн вăрттăн саккунĕсене тĕшмĕртмесĕр ун тарăнăшне ăса хывма йывăр. Çавăнпа Г. Федоров журналиста панă интервьюна илсе пăхар (ку сăвăç чунне лайăхрах ăнланма май парать):

«Ман ориентирсем – Р. Шумен, Ф. Шопен, П. Чайковский. Виççĕшĕ те çепĕç лириксем, романтиксем. Л. Бетховен тата, вăл та романтик. Анчах ун романтики тĕлĕнмелле тарăн, тулли, философиллĕ. Питĕ тĕлĕнмелле! Вуншар философ каласси ун пĕр хайлавне вырнаçать. «5-мĕш симфони» акă: этем кун-çулĕ, ун трагизмĕпе драмăлăхĕ сăнланнă унта. Питĕ çывăх вăл мана, кашни фраза çаврăмне пĕлсе, сиссе тăратăп пек туйăнать те хама, çук, ун тарăнлăхне виçсе-ыталаса илеймĕн»[102].

Юлашки предложение тӳрремĕнех Г. Федоров лирики çине те куçарма пулать: юхакан-шăранакан çепĕç лирика, пире ют мар пайрăмсем... Мĕн калас тенине те ăнланатăн пек пĕрре вуласан; тепре вулан та – нимĕн те ăнланмастăн, виççĕмĕшĕнче – ун тарăнлăхĕ хăратать, çав вăхăтрах темле

асамлă вăйпа хăй патне туртать. «Лунная соната» евĕр, «ĕмĕрсен сывлăшне çӳл сывлăшлăн çитерет вăл пирĕн пата». Шопенăнни пекех, «кĕç-вĕç татăласла, çурхах çинçĕш хĕлĕх евĕр ачаш» пирĕн геройăн чĕри. Ыратуллă. Çав хушăрах хăватлă та – чунри ĕненӳпе, ĕмĕт тасипе.

Георгий Федоровăн сăввисем тĕрки-тĕркипе мар: тупнă сăнар-шухăша вăл нумай вăхăт якатса, хăт кĕртсе, поэзин ĕмĕрхи саккунĕсемпе «çураçтарса» – сăввăн тивĕç ритмне тупса, строфан илемлĕ содержанийĕпе рифмăсен ытарлăхне, интонациллĕ кĕвĕлĕхне тĕпе хурса ĕçлет[103]. Ку хайлавсенче тарăн шухăшлавпа туйăм пĕтĕçсе тăраççĕ. Пирĕншĕн чи пахи, чи пĕлтерĕшли: вĕççĕр куççульпе хурлăх сăлтавĕ, малаш куншăн пăшăрханни лирика геройĕ пĕр хăйшĕн çеç хыпса çуннипе çыхăнман (ытла та йӳнĕ пулĕччĕ куççулĕ!). Ăна этемлĕх пуласлăхĕ, шăпи канăç памасть. «Ман ăшра кăна ӳтленнĕ этем шăпишĕн эрленсе йĕретĕп», – тет лирика геройĕ. Тĕрĕссипе, вăл мар туйăмсăр, унăн пурнăçĕ мар пушă та кичем – пирĕн. Автор хăйне «Эп поэт мар» теет пулсассăн та шăпах çак самант ăна чăн-чăн сăвăç картне лартма май парать.

## 2.6. *«Хăçан та пулсан пайланать çак планета»* *(Михаил Сунтал сăввисенче пытарăннă чун хăравĕ)*

Михаил Сунтал пултарулăхĕнче тĕрлĕ *сасă* мала тухать: уçлăх сасси, йывăç-курăк сасси, чул сасси, кайăк-кĕшĕк сасси:

Ки-ак! тăвать шаланкă;
Кару! кăшкăрать курак;
Пат! туса улма илет те,
Шăп тăран тĕнче чĕтрет;
Чак-чак! тăватчĕ кайăк;
Чăн-чăнн! тăвать урапа *(«Ки-ак! тăвать шаланкă...»).*

Лирика субъекчĕ хупă ăшĕнче пулнăнах: хăйĕн сасси çеç мар, хупăрласа тăракан тĕнче сасси унăннипе пĕрлешсе хăй патне каялла таврăнать. «Çĕр сас вăрманта» сăвăра лайăхах курăнать: лирика геройĕ нихăçан илтмен кайăк сассипеле, вăрманти çĕр сасăпа пĕрлешсе чунне ирĕке яма пуçăнать çеç – темĕнле вăй «чанкăрр!» кăна каялла çĕр çине

«çавăрса çапать». Пĕрре те мар. Е хăрăк турат хуçăлса шарт сиктерет, е кайăк кĕтмен çĕртен кăшкăрса ярать... Час-часах капланса çитнĕ туйăмсене çиеле кăлараймасть. Сăвă хывăмĕ, çиелтен пăхсассăн, тикĕс йĕркеленет пек. Апла пулин те шалта кĕç-вĕç вут хыпса илесле туртăннă чĕлĕх пурри сисĕнсех тăрать: ялтлатакан, йăлтăртатакан çиçĕм сăнарĕ сахал мар тĕл пулать. Чунра пусарса тăракан хăват мĕн тери капланса çитнин йывăрлăхне лирика геройĕ тумлам ӳкни тăрăх сăнлать.

Тумлам тумлать асăрхануллăн,
Кĕтсе тăрать те пат! тăвать.
Пат! тусанах темле хăрушшăн
Тĕнче кисреннĕн туйăнать.
Çĕре çав ӳкнĕ çут тумламăн
Ванса каять пуль ман чĕре те.
Ха-ха! кулса тăрать тĕнче.
Вăл кулнăçем, пӳрт тăрринчен
Пĕр вăхăт шăп тăрсан-тăрсан
Шапăрр! тусах пăр тăкăнать...
Чĕре вара тем савăна-а-ать!
*(«Тумлам тумлать асăрхануллăн...»).*

Пĕр тумлам, тепре... Туртăнса-карăнса çитнĕ чун чĕлĕхĕ татăлса каять, хăват çиеле тухать. Сас-чĕв вылявне хăйне уйрăммăн пăхсан та çак курăмлă ӳкерчĕк куç умне чĕррĕн тухать: *«тум», «тум», «пат», «пат», «тум», «ван», «ман»,* тăрсан-тăрсан *«шапăрр», «а-а-а!».*

«А-а-а!» тенинче – кăмăл-туйăм ирĕке тухнин çăмăллăхĕ те, ырату та. Çакнашкал «ункăна» татса тухни Сунтал пултарулăхĕнче пĕр-ик-виç хутчен çеç. Ытти чухне, çӳлерех палăртнă пек, медиум тăрăмĕ – хупă ăшĕнче хăйпе хăй антăхса калаçни.

Сунтал лирика субъектне «ыйту», «хурав» кăсăклантармасть. Вăл никам пĕлменнине пĕлет: хăйне, тăван халăха мĕн кĕтнине, тĕнче пĕтмĕшне курса тăрать. Çакă ăна хăратать. Ун çинчен калама та юрамасть пулмалла: «Унтан лăп çеç ӳкĕп. Эп выртăп нумай»; «Хăçан та пулин пайланать çак планета»; «Пĕр ванчăкĕ ӳкĕ таçта тепĕр май».

*Тĕнче пĕтессин* мотивĕ – Сунтал пултарулăхĕнче пуç пулса тăракан кĕвĕ-çемĕсенчен пĕри. Çав вăхăтрах лирика геройĕ хăйне лăпланмалăх ăнкару патне çитет: чун вилĕмсĕр, вăл кунтан кайнипе тĕппипех çухалмасть. Унтан та ытларах,

тепре çĕр çине килес пулсассăн та (çĕр чăмăрĕ арканиччен вăл пĕрре мар килĕ-ха) хăйне урăхла шăпа курмасть:

Кун чакса пынăçем
Кĕчĕ хĕвел пӳлĕме.
Пулчĕ вăл хăй пĕчĕк çемĕ
Тунсăхлă чĕремре...
Эп ĕнтĕ нимех те кĕтменччĕ
Çакă иртен çут кунран.
Никам та кун пек килменччĕ –
Анне те кун пек курăнман!
Ак ĕнтĕ халь пĕчĕк паллă
Пачĕ пуль вăл таçтан...
Туйрăм хама чун хаваллă.
Куртăм хама аякран...
Эп-мĕн пĕччен те пĕчĕк,
Ларатăп пĕр кивĕ пӳртре,
Хĕвел çутипе килетĕп,
Каятăп – хĕвел çутипе!
*(«Кун чакса пынăçем...»).*

М. Сунталăн нумай сăввийĕ Яккусенĕн 1990 çулсенчи поэзине çывăх, пĕтĕмĕшле пултарулăх пафосĕ – пусăрăнчăк, сăввисене вуланăçемĕн пыр тĕпне хытса ларнă ĕсĕклев пуррине ытларах та ытларах туятăн. «Карланкă çăхан сасси кăларчĕ» статьяра Ю. Яковлев М. Сунтала медиум тесе палăртать[104]. Тĕрĕссипех те лирика геройĕ туйăмсен ытамĕнче, вăл хăйĕн тĕнчине путнă. Лирика субъекчĕ пĕччен пулни, унăн чунĕнче хăрав хуçаланни, темĕнле хупăра хăйпе хăй калаçни сăвă чĕлхинче ӳкерĕнет. Интонаци-синтаксис тытăмĕ кăшкăруллă, ыйтуллă формăсемпе пуянах мар (каларăмăр: герой хурав шырамасть, вăл ăна пĕлет), анчах сикчĕсем тăтăшах тĕл пулаççĕ. Ăна нумай пăнчă йĕркелет. Кашни хутсăр предложени уйрăм йĕрке йышăнса хăйне тĕллĕн пайрăм пек курăнса пырать. Çав пайрăмсем умлă-хыçлă купаланни пĕркĕвĕлĕх çуратать. Çапла пусăрăнчăк шухăш-туйăм уçăлмасть, татах та йывăрлатать. Ку ĕнтĕ пĕтĕмĕшле пултарулăхăн содержанипе формăн уйрăлми çыхăнăвĕ. Уйрăм сăвă тĕслĕхĕсене илес пулсассăн та кăсăклă вырăнсем тупăнаççĕ.

«Кун чакса пынăçем» текстăн схеминче содержанипе форма çыхăнăвĕ питех те ăнсăрт. Малтанлăха нимĕнле вăрттăнлăх та, виçе те çук пек (дактильпе амфибрахи виçисем хутшăнса-пăтрашăнса пĕтнĕ, картсем тикĕс мар). Сăввăн

идейи лирика геройĕ хĕвел çутипе килсе хĕвел çутипе каяссине ĕненни терĕмĕр. Схемăна пăхсассăн, 1-мĕш çаврари юлашки икĕ йĕрки 3-мĕш çаврари юлашки йĕркесемпе, 2-мĕш çаврари пуçламăш икĕ йĕрки 3-мĕш çаврари малтанхи йĕркесемпе шăп та шай пĕрешкел (3-мĕш çаврари 3-мĕш йĕркере çеç пĕр карт ытлашши). Акă умра спираль çаврăнăвĕ: лирика субъекчĕн ĕненĕвĕ, пурнăç тĕмсĕлĕвĕ содержанире кăна мар, формăра та чĕррĕн ӳкерĕнет, чăнлăх пек тухса тăрать. Унсăр пуçне, пĕрремĕш çаврара пусăмсем пĕрре чăн малти сыпăк çине, тепре чăн кая ӳксе тата тепĕрункă пулать. 1-мĕш çаврара пусăмсем малти сыпăксем çинче пулни хĕвел пайăрки кĕнине (лирика геройĕ тĕнчене килнине), 4-мĕш çаврара пусăм каялла сикни хĕвел аннине (лирика субъекчĕ кайнине) сăнарлать пек.

Çапах та çĕр çинче утса çӳренĕ чух, пурăннă чух хăв кунтан кайсассăн чăннипех тĕпĕ-йĕрĕпе çухалманнине – вилĕм çуккине – вĕçне çитиччен ĕненсе пĕтме пулмасть пулĕ. Ю. Яковлев хăйĕн статйинче илсе панă Сунтал сăмахĕсем этем чунĕнчи хирĕçӳлĕхе витĕмлĕ уçса параççĕ: «Çак пурнăçра эпир вилме çуралнă. Эп шутлатăп: çын вилĕмрен хăрама пăрахрĕ пулсан – вăл çын пулса çитрĕ. Вилĕмрен хăрамалла мар. Вилĕмрен хăтăлмалли пирки эп пĕрмаях шухăшлатăп. Вилĕм туйăмĕ халăхра вăйлă аталаннă (чăваш хушшинче çынсем хăйсене хăйсем вĕлерес йăла сарăлни, синкер тĕнче туйăм). Çак кăмăл-туйăма хирĕç ялан кĕрешетĕп. Вилĕмпе эп уççăн мар, вăрттăн, çемçен кĕрешетĕп...»[105], – тет поэт.

Тĕлĕнтермĕш: пĕр енчен – вилме çуралнă, вилĕмрен хăрамалла мар тени, тепĕр енчен – унран хăтăлмалли мел шыратăп, ялан кĕрешетĕп тени. Вилĕме йышăннă, унран хăрамасть пулсассăн мĕншĕн-ха хăтăлмалли мел шырать, мĕншĕн унпа кĕрешет? Поэт темĕнле татса тухаймиункăра: «вăрттăн, çемçен» кĕрешет, хăйпе хăй калаçать – чунне пусараймасть, мĕн пулассипе çураçасшăн – вăй-хăват çитереймест. Чĕрери çак çапăçупа хăрав мар-и пырта капланнă ĕсĕклевĕн, сăвă чĕлхи уçăлса-якалса çитейменнин сăлтавĕ? (Çемĕ вылявĕ чухăн мар, ăна тума пĕр çаврарах умлă-хыçлă черетленекен икĕ, виçĕ картлă сăвă виçисем пулăшаççĕ, анчах çак пуян ритмика та сăвăсен кĕвĕлĕхне ӳстермест.) Апла «спираль çаврăнăвĕ» канлĕх кӳмест, чун канăççăрлăхĕ тамалмасть.

Поэт паянхи йывăр тăрăмран тарас-хăтăлас-манăçас тенĕ пекех çине-çинех ача чухнехи самантсене тĕпренчĕкĕн-тĕпренчĕкĕн антăхса пуçтарать («Пăхать-ха хĕвел пĕр хушă» ятлă 2-мĕш кĕнекене пĕтĕмпех çамрăк вăхăта аса илсе çырнă). Ку кĕнекере чăннипех те, кăкăрта темĕн уçăлса кайнăн, пуплев ирĕкленет (пĕр йĕрке çеç йышăнакан кĕске хутсăр предложенисем вăрăмланаççĕ). Çутă сăнсем нумайланаççĕ. Чи палăрăмли: сас-чĕв улшăнать. Унччен шарт сиктерекен сасăсем илтĕнетчĕç, халĕ – «шăкăрт-шăкăрт», «чак-чак», «чăнчăнн! урапа сасси», «шик! тăвакан кайăк» т.ыт.те.

Епле ӳкерчĕк куратпăр-ха, мĕнлерех поэтăн вăрçă хыççăнхи ачалăхĕ? Выçăллă-тутăллă пурăнни, çарран чупса çӳрени, алран кашăк тухса ӳкмеллех ывăниччен тырă вырни, кирпĕч тума сивĕ тăм çăрни, шур пит тăрăх тар юхтарса çухалнă ĕнене каçпа хăра-хăра шырани, лесникрен шиклене-шиклене курăк татни, йывăр çĕклем çĕклени...

Çиме çукки лирика геройĕн чунĕнче нихăçан манăçми йĕр хăварнă пулас: вăл хăй сисмесĕрех хырăм выççи çинче час-часах сăмаха пусăмлать. «Юлашки чĕл», «пĕр çăмах», «çырла техĕмлĕхĕ», «мăйăр катни» тата ытти пайрăмсем нумай сăвăра çиеле тухаççĕ. Çурхи путакан юр тăрăх шуса пырса чие сухăрне çиет, çăка вăрри пуçтарать:

Ача чухне çисе лараттăм
Çăкан та çуллă мăйăрне...
Пит выçă пулнă, çавăнпа та
Апат эп тупнă тĕшшинче
*(«Ача чухне çисе лараттăм»).*

Тата:

Чие тунинчи сухăр...
Ăна çисенех тутă
Ĕнтĕ эп тин пулап...
Ăна çисенех пек вăй
Манăн ăшра пухăнать
*(«Пахча варринче чие...»).*

Иккĕмĕш кĕнеке хырăм выçсан вăрмана кашличĕ çиме кайнипе пуçланать те кашличĕ çинипех вĕçленет. Ачалăхне аса илни Сунтал лирика геройĕн чĕринче ачаш туйăмсем вăратать пулсассăн та вăл халĕ çук, иртсе кайнă. Шывсăр çунакан çĕр пек унăн чунĕ. Тĕрĕссипе асаилӳсем – çук

кăкшăмран шăрăхра сивĕ шыв ĕçнĕ пекех. «Халь ăçта-ши çав кăкшăм» сăвăра лирика геройĕ тырă вырнă вăхăтра кăкшăмпа уя сивĕ шыв йăтса пынине, çав шыва ĕçсен амăшĕ ăшшăн кулнине, хăй те йăл илнине аса илет.

Халь ăçта-ши çав кăкшăм,
Ванса кайрĕ-ши чанк?
Уйра чавнă чух ваккăн
Тăм татки тупăнать...

*(«Халь ăçта-ши çав кăкшăм...»).*

Çавна шăппăн çĕклет лирика геройĕ, вăл ăна кăкшăм пек туйăнать.

«Тепĕр хут пек ĕçетĕп – анчах ăшăм канмасть!» – тесе вĕçлет сăмахне. Ачалăха тем чул аса илсен те чун çинчи çĕклем çăмăлланмасть теейсе ытарлăн каланиех ĕнтĕ ку. Пĕр тĕслĕхре çеç мар, татах та кунашкал йĕркесем çапла шухăшлама май параççĕ. «Урамра выртатчĕ пĕр юман каска» сăвăра та лирика геройĕ ача чухнехи пек мăйăр катма тăрать. Чĕре çинчи йывăр çĕклеме илсе перес, чĕрĕ юлас тесе «чул пекки», «хăма татки» (асăрхăр: унччен «яка чул таткиччĕ», «юман каскаччĕ») тупать, шалт! катса пăхать те – нимĕн те çук. Каски те, ачи те, сасси те, чулĕ те, Йăлăмкасси те çукки пирки калать Сунтал геройĕ. Поэт пĕр йĕркене пĕр вăрăм йĕр лартать, ку паллă сăмахран та витĕмлĕрех шухăша уçса парать. Тин палăртрăмăр, ачалăхне аса илни çăмăллăх кӳрсех пĕтерейместь. Киленĕç туйни çеç. Киленĕçĕ ирĕклĕхпе çыхăннă. Ачалăхра чи пахи – чун ирĕклĕхĕ. Апла тинех лирика субъекчĕ ачапăча пулнă чухнехи вăхăтсене таврăннин сăлтавĕ уçăмланать пек. «Анчах телей тени вăл нумая пымасть», Сунталăн лирика геройĕ каллех шеллевсĕр чăнлăхпа куçа-куçăн юлать.

«Ăна йывăр, калаçăвĕ йывăр», – тетпĕр. Мĕнрен пуçланать-ши синкерлĕ тĕнче курăм, тĕнче туйăм?

Пĕрремĕшĕнчен, халĕ анчах пăхса тухрăмăр, çăмăл мар ачалăхĕ унăн пурнăçĕнче йĕр хăварнă, вăл хăйне май хатĕрленĕ никĕс те пулса тăрать пулмалла.

Иккĕмĕшĕнчен, хурава – малашлăхра мĕн кĕтнине – пĕлсе тăрать (вăл ăна пĕрмай шутлаттарать, хăратать).

Виççĕмĕшĕнчен, çапах, чăн-чăн инкекĕ савнийĕпеле, вăл хăйĕн патне çывхартманнипе çыхăннă пулас. Ма тесессĕн юрату объекчĕ уншăн (тĕлĕнмелле: амăшне те çак шая çĕклеместь) Турă шайĕнче. Чăн-чăн кисренĕвĕ те унпах çыхăннă:

темĕн чухлĕ вăхăт иртсессĕн савниййĕпе тĕл пулать. Тĕкĕр умне пырса тăраççĕ – лирика геройĕ хăй ватăлнине, ĕмĕр иртнине туйса-ăнланса илет, чунĕнче темĕскер тапранать, ĕмĕрлĕхех хуçăлать. Кулли ун çуралнă чухнех вилет. «Эпĕмĕн курăнатăп питĕ ватă, çав ăнлав ман чуна йăлтах ватрĕ», – тет вăл. Çакăн хыççăн вăл пĕр-пĕчченех пулнине систерет, «сывлăх чаплах мар», «чĕре ыратать» тенисем илтĕнме пуçлаççĕ.

М. Сунтал лирика геройне хăйĕн шăпи, хăйĕн инкекĕ çеç пăшăрхантармасть – вăл тăван чĕлхе, тăван халăх пирки шухăшлать. «Чăвашлăх» ятпа витĕнсе кăшкăракан чылай сăвăç пек, шĕкĕр хуламăрта тăван чĕлхепе калаçманшăн «чĕрене çунтарса», макăрса сăмах нумай вакламасть М. Сунтал лирика геройĕ. Чăваш тĕнчин хаклăх никĕсĕсене, çав хаклăхсем иксĕлсе-тамалса пынăçем тăван чĕлхене тата халăха мĕн кĕтме пултарасса кĕскен  те витĕмлĕн уçса парать. Тӳнтерле лару-тăру темиçе йĕркере сăнарланать:

Çул хĕрринчи йывăç çу варринчех çулçă тăкнă.
Çулĕ те çуркаланса пĕтнĕ.
Садике каякан хĕрача сарă çулçăсене тапкаласа пырать.
Такăнчĕ ӳкрĕ!
«Бобо!» – терĕ.
«Я те дам бобо!» – кăшкăрса пăрахрĕ амăшĕ.
Аллинчен карт! туртрĕ *(«Бобок»).*

Пĕчĕк хĕрача хăйĕн пăшăрханăвне, кӳренĕвне, пулăшусăрлăхне урăхла ниепле те калайман-пĕлтерейменпекех поэт ача-пăча сăмахлăхĕнчен илнĕ тĕслĕхпе усă курать. Çак пĕр «бобо» «тĕнче тăрăх янăраса каякан», «çĕре чĕтретсе-чĕтретсе илекен» чун ыратăвне, лирика геройĕн пуçтарăнса-капланса çитнĕ пĕтĕм кăмăл-туйăмне пĕтĕçтерсе тăрать. «Бобо, бобо, бобо!» тесе çине-çинех кăшкăрни синкерлĕхе пушшех те вăйлатать, çан-çурăма çӳçентерет.

Чĕресем хытса пынишĕн (амăшĕ ачине хĕрхенес вырăнне хăтăрса тăкать), чăвашла калаçманнишĕн тепĕр сăвăç пек хĕм кăларса вăрçнă пулсан чунне лăплантарнă та пулĕччĕ Сунтал геройĕ. Анчах «мăнтарăн чăвашĕ» утнă çĕртех такăннишĕн ăна хĕрхенет вăл, унăн йывăр шăпине ăнланма тăрăшать – çавăнта унăн сапăрлăхĕ палăрать:

Çурăкĕсене çулçăпа хутăш «бобосем» кĕрсе ларнă
Çулĕ те ĕнтĕ, чăнах та, йăлт çуркаланса пĕтнĕ.
Çакă такăнтарать пулас! *(«Бобок»).*

Нумай чухне поэтсем шалти чун тӑрӑмне тӗрлӗ пайрӑмсемпе кӑтартаҫҫӗ (Л. Мартьянова ӑна *алӑ* урлӑ уҫса парать терӗмӗр). Сунтал пултарулӑхӗнче *чул* сӑнарӗ малти вырӑна тухать. Асапласа-ывӑнтарса ҫитернӗ шӑпана, пурнӑҫа, тем пулсан та хуҫӑлман-пӗтмен-путман ҫирӗп кӑмӑла сӑнарласа тӑрать чул. Ҫак символла сӑнар мӗнлереххине кура лирика геройӗн пурнӑҫ тапхӑрӗ, чун тӑрӑмӗ пирки пӗлме пулать.

1. *Ҫул хӗрринчи чул* (хура тӑпрапа хупланнӑскер, ҫеҫке ҫурать – йывӑрлӑхсем витӗр тухса чунӗпе илемленет).

2. *Ӗнсе кайнӑ, хуп-хура та яка чул* (пурнӑҫ «ҫунтарнӑ» хыҫҫӑн).

3. *Шывра хӑвӑрт путман чул* (лирика объекчӗ антӑхса чуп тунӑ савнине «чӗре ҫумне илсе вылянӑ» хыҫҫӑнхи чун тӑрӑмӗ).

4. *Сивӗ ҫапнипе аслати пек шартлатса ҫурӑлакан чул.* Ҫынсем ним ҫукранах вӑрҫӑннине-ҫапӑҫнине, пӗр-пӗрне курайманнине-кӗвӗҫнине курса, ҫапӑҫса ывӑннӑ хыҫҫӑн унӑн урӑх никама та нимӗн те каласа тӑнлантарас килмест («Пӗр сӑмах та калас килмест / Пӗр сас та кӑларас марччӗ!»). Чунӗ ырса ҫитнӗрен халтан кайса чул пек тӗнче пӗтмӗшӗччен выртас килет. Анчах вӑл чун сивӗлӗхӗпе кӳтсе ҫитнӗ (пултарулӑх тӑршшӗпех ахрӑм каять, пӗрре мар «хӗвел ҫинче те ӑшӑнайманни» пирки палӑртать), ҫавӑнпа та вӑл халӗ «шартлатса ҫурӑлать», ҫавӑнпа ҫак сӑвӑ хывӑнать, ҫавӑнпа ҫак сӑмахсем каланаҫҫӗ. «Аслати пек шартлатса ҫурӑлакан чул» – тулса-кӳтсе ҫитнӗ туйӑмсен палли:

> Халӗ эпир чӗрӗ мар, эпир чул!
> Хӗвел пӑхсан хӗрсе выртӑпӑр,
> Сивӗ ҫапсан аслати пек шартлатса ҫурӑлӑпӑр...
> Ҫавӑ пулӗ чулӑн пӗрремӗш сӑмахӗ!
> *(«Пӗр сӑмах та калас килмест...»)*

Ҫӳлерех каланисене шута илсе Ю. Яковлев шухӑшӗпе килӗшесех килмест: «Сунтал хӑйӗн пултарӑвӗнче Юркин курнӑ тӗлӗкех (ҫӳлти хӑватсем панӑ тӗлӗке) курать. Сарри – хагтсен ҫил-тӑвӑл Турри. Хагтсемпе хурритсем ӗлӗк-авал юнашар пурӑннӑ. Сӑвӑри шухӑша (чул сӑмахӗ аслати сасси пулӗ тенине) ҫакӑ ӑнланмалларах тӑвать»[106].

Пирӗн шутпа, Юркин тӗлӗкӗ пӗтӗмпех мӗн пулса иртнипе ҫыхӑннӑ: пӗри Пӑлхар хули вырӑнне пырсан пуҫ

шăмми курать, çынниййĕ пурăннă чух мĕн тери мухтавлă, чаплă пулнă пулĕ, халĕ вара ăна, пуç шăммине, тапса иртеççĕ. Ку чăннипех хăй хальлĕн çывăрнă чух курăннă пулăм. Сунтал лирика геройĕ вара çапла чунсăр пурнăçпа вăрçăнса-хирĕнсе пурăнсан мĕн пулассине куç умне кăларать. Ăс-тăнĕ унăн татăлса-сирпĕнсе каяс пек вĕри. «Пĕтместпĕр, тĕнче хăйне хăй пĕтме памĕ, пĕтсен те шăтса тухăпăр» тесе пурăннă çĕртех çĕтсе çухалма пултараяссине курать вăл.

5. М. Сунтал поэзийĕнче *шыв-шур çурса кайнă хыççăнхи шап-шурă чул* пур. Чулпа çырма уйрăлми çыхăнура. Çырма лирика субъекчĕшĕн – пуçламăшсен пуçламăшĕ, вăл амăш варĕ, чĕрçийĕ вырăнĕнчех. Çавăнпа пĕтĕм ачалăхĕ вар тĕпĕнче пытаннăн туйăнать лирика геройне.

Çак вар ĕмĕр тăршшĕпех асран каймасть. Сунтал геройĕнче эпир пин-пин ача кăмăлне, пурнăç пуçламăшне куратпăр, ма тесессĕн:

Эпĕ вĕт унта çӳренĕ
Мĕн çуралнăранпах,
Ĕне-выльăха çитернĕ
Курăк шăтса тухсанах...
Унтах çырлине те пуçтарнă,
Савăннă та пуль çавăнпа *(«Çап-çутă таса уçланкă...»).*

Унтан та ытла, пирĕн халăх шăпи те ĕмĕрлĕхех çырмапа çыхăннă пулас. Кунтах – тутлă пылак çырлапа вăй кĕртекен çăлкуç шывĕпе пĕрлех «мăнтарăн чăвашĕн» синкерлĕ кун-çулĕ. Чăваш пурнăç тăршшĕпех çав вартан тухас тесе чакаланать.

Лирика геройĕ ӳссе аталаннăçем унăн ăс-хакăлĕ та улшăнать, ачалăхри хăш-пĕр сăнарсем ытарлă пĕлтерĕш йышăнаççĕ:

Пире усал тĕрĕслет,
Çырма тĕпне сĕтĕрет. <...>
Пурнăç мар-çке çырмара!
Упалентĕм тăвалла...
Эх, кулаççĕ пек манран...
Эй, ара, илемсĕр-çке,
Ку чăваш урасăр-çке! *(«Пире усал тĕрĕслет...»).*

Çапларах сăнарсемпе, нумай сăмах вакламасăрах, Михаил Сунтал чăваш çыннин чунне, кăмăлне, унăн шăпителейне витĕмлĕ уçса парать.

## 2.7. *«Эп пулман кунта – ан макăр Вăл та пурăннă тесе...» (Марина Карягина лирикин хăйне евĕрлĕхĕ)*

«„Пурнăç хăрушă, пурнăç айван”, – каланăччĕ тахçан Петĕр Эйзин. Унтанпа çак пурнăç сăнарĕ, нумай çул иртсе кайрĕ пулсан та, улшăнман. Хамăр енчен эпир тата çапла калама пултаратпăр: ”Паянхи пурнăç тискер, хĕрхенӳсĕр...” <...> Пурнăç тискерлĕхне пăхмасăр çак пушă тĕнчене чăваш поэчĕ килнĕ-килнех. <...> Ячĕ – Марина Карягина»[107].

Чăн малтанхи тапхăрта М. Карягина тĕнчинчи сăнарсем, пайрăмсем чĕррĕн курăнаççĕ, вĕсем пире ют мар: çурхи йĕпхӳ, çурăлас тĕм, кĕр вĕçĕ т.ыт.те. Уншăн «çынлăхпа тĕнче илемĕ – ăс-хакăл тивĕçĕ»[108]. Малтанхи сăввисенче вăл ытларах юратупа туслăх çинчен çыратчĕ. Пĕрремĕш хайлавсенчен пирĕн ума çĕр çинчи пурнăç, çав çĕр çинче пурăнакан питĕ туйăмлă çамрăк – лирика субъекчĕ – тухса тăрать. Карягина çырни питех те ĕнентерӳллĕ, унти япаласене курматытма май пур пек, лирика героини илтекен сасăсем те пире çывăх.

Сăваран сăвва вăл пирĕнтен уйрăлса та уйрăлса, çӳлрен çӳле хăпарса пырать. Акă вăл тинĕспе пĕлĕт хушшинче, тинĕс кайăкĕ. «Çăмăллăн, хастаррăн, кăмăллăн ярăнать кайăк тинĕспе тӳпе хушшинче. Унăн сасси – пĕр вылянчăк, пĕр аманчăк, салхуллăрах та-и, тен? ...Ку сасă – тăхăр вуннăмĕшĕсен. Çĕнĕ ĕмĕр алăкне уçас чăваш сăвăçисен.

Чăвашлăха сĕрĕмлесе, ятарласа палăртма тăрăшакансене ан итле. Чăвашлăх вăл – таса сывлăш. Таса сывлăш – палăрмасть. Маншăн пулсан та:

> Пултăр – тинĕс, пултăр –
> тӳпе, юмах пек юрă!

Канма çĕр çинех – Савнă Чăваш Çĕрĕ çинех – анса ларăн»[109], – тесе çырать Петĕр Яккусен поэзи çулĕ çине тухакан çамрăка халал парса. Çук çав, тинĕс кайăкĕ чăваш çĕрĕ çине анса ларнине курмастпăр. Вăл ĕнтĕ, хăй калашле, «шар çулăм», вăл тата çӳлерех, чăвашăн тӳпери уйĕ патнелле вирхĕнсе вĕçет:

Пур çĕрте те тӳпе –
Тӳперен пытанаймăп *(«Те çулсем хăвăл пек...»).*

Çӳлтен çӳле хăпарнă май тĕссем шупкалсах пыраççĕ. Мĕлке, пăр, юр, чул, çăлтăр тата хĕвелпе уйăх сăнарĕсем тĕпе тухаççĕ. «Юр пике», «юр арăм» тет хăйне лирика героини. Тĕпре – вĕçев çеç, хăлхара – сасă çеç. «Унка лекнĕ çӳп» вăл. Унта, çӳл тӳпере, кунти пек çул çук. Е «уçас сулĕ» пулсан та вăл:

Уçас çулăм – çул мар: çип-çинçе!
Эрешмен пек пурнап çип çинче
*(«Уçас çулăм – çул мар: çип-çинçе!»).*

Е «çулсем хăвăл пек» («черная дыра» текен хăвăл пирки каланăнах туйăнать мар-и).

«Марина сăввисен талккăшĕнче тĕп вырăн – çӳл ен. Хĕвелпе уйăхăн, çăлтăрсен инçет илĕртĕвĕ те, чун çӳллĕшĕ те ку, – тесе çырать Ю.М. Артемьев. – Хăвна ху çĕнтерсе тӳпенелле ăнтăлнă чухне çеç яр уççăн курăнса каять (карьера пусмипе хăпарнине ан пăтраштар!) кам кам иккенни. Кунта шăпа хăй сăмахне калать, чун хакĕ çиеле тухать. Маринăшăн тӳпе – яланхи, хăнăхнă вырăн тейĕн, ăна вăл хăй те туймасть-тĕр.

Пуç пур чухне тӳпе те пуç çинчех,
Хĕвел те сарă, чăвашла çемçе.
Аялалла пăхма кăна хăратăп:
Тăратăп имĕш пач ют çĕр çинче.

Çак çӳллĕшренех тĕнче илемне-каяшне те, çынсен шалти туйăмĕсен хусканăвĕсене те сăнать вăл. Пурне те хăй патне кĕтет, шырав канăçсăрлăхĕ сунать, ирĕклĕ вĕçевĕн пуçа çавăракан техĕмне туйтарса пăхтарасшăн. Анчах та чи йывăрри ку». Ю.М. Артемьев çирĕплетнĕ тăрăх, сисĕм тымарĕ çивĕчреххисемпе шалпар чунлисем кăна хăватлă туртăм вăйне парăнса тӳпенелле кармашаççĕ, çавсем çывăх кураççĕ Марина сăмахне. Чун çӳллĕшĕ çеç поэтăн шалти тĕнчине уçма хевте çитерет. «Тӳррипе, каларăмăр ĕнтĕ, ту тăрри, çӳл ен, чун çӳллĕш – кусем Марина ӳкерекен тĕнчен хăйне майлă топонимсем»[110].

Çӳлтен çӳле... Вăл çӳллĕшрен эпир пурăнакан тĕнче «куç хăвăлĕ пысăкăш çеç», «куç хăмăрĕ тарăнăш» курăнать.

«Тĕнче космосра юр пĕрчи пек вĕçсе çӳренине», «эпĕр пурте – хăйăр хурăмлă» пулнине палăртать Карягина. Талккăш та, вăхăт чикки те çук унта.

Мĕн пур пекки – Самант.
Иртен каç тӳрĕ кун –
Вăл вашт иртет ют маррăн,
Ывçа илсе тытмарăм,
Анчах вăл – ирĕкӳ!... *(«Те пулнă, те пулман...»).*

Малтанлăха М. Карягина лирика героини ирĕке çӳлти хăватсенчен тилмĕрсе ыйтать: «Пихампар! Пар мана ура йĕррилĕх ирĕк – йăнăш утăмсемшĕн пил ан пар!» – тет вăл. Анчах мĕнлерех ирĕклĕх куратпăр-ха каярах:

Вĕçекенни – вĕçет:
Кам çăтмахра, кам чăтлăхра вĕçет...
Эп читлĕхре те – читлĕхре вĕçетĕп!
*(«Вĕçекенни – вĕçет...»).*

Вĕçев – Маринăн çынпа пурнăç хакĕн виçи, ирĕклĕ чун символĕ, çав тери анлă пĕлтерĕш хыват вăл çав ăнлава. Кил тĕрĕшри, йăла-йĕркери кулленлĕхрен пуçласа халăх психологийĕпе чĕлхемĕр хавалĕ, наци культурин ирĕклĕ пуласлăхĕ таранах хĕрхӳ кăмăл-туйăм çуратать çав читлĕх символ. Ю.М. Артемьев шучĕпе, ĕнчĕ чĕлхемĕре сума суманни, чăваш ачи-пăчи ăруран ăрăва вырăсланса çитĕнсе пыни М. Карягина лирика субъекчĕн чĕрине шăнтса пăрлантарать. «Хăтлăхне, пуласлăхне, асаттесен пилне манса, çухатса пыракан чăваш тĕнчин (ирĕксĕрлевĕн) анлă пĕлтерĕшлĕ символĕ те вăл – читлĕх. Вăл пĕтĕм чăваш çĕр-сывлăшне пăчăртаса лартнă. Читлĕхре вĕçме хăват çитерекенсем ытларах кирлĕ, унран хăтăлсан тата та лайăхрах»[111].

Тĕпрен илсессĕн, ăсчах шухăшĕпе килĕшмелле. Анчах, символла сăнарăн ăнлантарăвĕ темĕн тĕрлĕ те пулма пултарассине шута хурсан, ку пайрăм çине урăхла та пăхма май пур.

Читлĕх лирика героинин ӳт-пĕвĕ, кĕлетки пулнăн туйăнать. Сăвăра вăл – «пуш-пушă пӳлĕм». Мĕншĕн пушă? Хуравне те автор хăех калать: «Ӳтсем – чунсем кайсан – çапла тăрса юлаççĕ». *Чун ӳтпеле пĕр çыхăра пулманни* – М. Карягина сăввисен тĕп çеммисенчен пĕри. Поэтесса хăй

калашле, «пĕрле-уйрăм». Çакăнта пулас Карягина лирика героинин чăн телейĕ те, тĕп инкекĕ те. Пĕр сăввинче ӳт каçсерен тунсăхлăн чунне кĕтнине, чĕннине сăнатпăр:

...хăнам,
анăç –
канăç
пекки –
шăннă
кантăк
леш айккинче,
тени те –
ӳтĕм чĕнни, тен? *(«А-а! шăп...»).*

Тӳпере, космосра вĕçекен чуна çĕр çинчи пурнăçпа пĕрлештерсе тăраканĕ ун кĕлетки. Анчах кĕлетке, тепре палăртар, хăйне май читлĕх. Çавăнпа лирика субъекчĕшĕн вилĕм чăнлăх пулни ăнланмалла. Ма тесессĕн вилĕм читлĕхе аркатать-çке!

Сăвăсерен – чăнлăха çывăхрах,
(Сăвăсерен вилĕме çывăхрах):
Вилĕм-им – чăнлăх?
*(«Сăвăсерен – чăнлăха çывăхрах...»).*

Лирика героинин ӳт-пĕвĕ те хăйне евĕр. Вăл, Ю.М. Артемьев каланă пек, «çĕр çинчех, хăтласа, тирпейилем кӳрсе çитереймен кулленхи пурнăç юхăмĕнчех ишнĕн»[112] туйăнмасть. Вăл каллех пирĕнпе пĕрле те – уйрăм:

Эп пурăнатăп путнă хулара,
Писсе çӳретĕп пĕтĕм пулăран.
*(«Эп пурăнатăп путнă хулара...»).*

Савни, ачи-пăчи, мăшăрĕ кăшт кăна курăнса иртеççĕ унăн çĕр çинчи пурнăçĕнче. М. Карягина хăйне тăтăшах шывпа, тинĕспе танлаштарать. Кăтартуллă вырăн:

Сана мĕн чухлĕ ăнлантарнă:
Ӳксессĕн те – чĕп-чĕрĕ юлăп,
Вилсен – çĕр мар, эп тинĕс пулăп
*(«Эп вĕçĕп. Вĕçĕп те аманăп»).*

Тинĕс – чунпа кĕлетке пĕрлешес вырăн – кĕтнĕ ирĕклĕх пулмалла. Çак сăвăçăн героини кайран – тĕлĕнмелле те –

космосра юлмĕ, вăл шывран тухнă, унтах таврăнĕ. Тинĕс уншăн вилĕмсĕрлĕх, хăватлăх палли. Вĕçĕ-хĕррисĕр пурнăç çаврăнăвне калăпласа тăрать шыв.

Ӳт-пĕвĕм – пĕлĕт хăйминчен,
Куç тарăнăшĕ – тинĕс:
Хумсем чула та тирĕç –
Ан тĕлĕн йĕп те вăйлинчен,

Ан тĕлĕн çип те вăйлинчен –
Тăва аркатĕ çумăр
(Епле чăтайĕ чунăр:
Чунсем те – çумăр тĕнчинчен).

Чунсем те – хумăр тĕнчинчен
(Чуна унран çĕленĕ!)
*(Ӳт-пĕвĕм – пĕлĕт хăйминчен...»).*

«Карягина не только не боится стихийных сил, но как бы призывает их, делает их некими отправными точками в создании своей поэтической вселенной. В книге «Шёпот волн» (Чебоксары, 1995) хаос не был еще открыто выражен (под вполне традиционной стихотворной формой хаос еще только шевелится), сдержанная интонация поэтессы напоминала обманчивый покой перед ночной бурей. Последние же публикации ее стихов («Ялав», 1996, № 3, «Тăван Атăл», 1996, № 7) – это прорыв кипящей лавы вулкана сквозь застывшую. <...> Вулканическим стал и графический облик ее стихов: слова выбрасываются столбиками, лесенками, зигзагами, сдвигаются то вправо, то влево. <...> Такое раскрепощение ритма предполагает экстаз, дикое беснование, хаотическое возбуждение чувств, подобие ломки. Ломка традиционного стиха для Карягиной не просто ритмический эксперимент, конструирование заумного языка, ритмический жест, техническая работа, но и потребность поэта, одержимого некой мистической стихией»[113].

Ю.В. Яковлев критик кунта эпир пĕрремĕш сыпăкра хускатнă ыйту пиркиех калаçнăн туйăнать: Карягина сăввисем çырас килнишĕн анчах çапла çырăнмаççĕ – лирика героинин чун тăрăмĕ сăвă форминче хăйĕн сăнне тупать.

М. Карягина чăваш поэзине çĕнĕ сывлăш кĕртнине тишкерӳçĕсем пĕрре мар асăрхарĕç. Мĕн палăртать-ха Н. Теветкел? «Поэзин классикăлла виçине тĕпе хурса çырнă сăввисемпе лайăх тĕслĕхсем кăтартнă хыççăн Марина Карягина çĕнĕ шыравсен çулĕпе утрĕ. Сăвă сыпăкĕсен пĕр пек шутне шутласа ларакан «тимлĕ бухгалтера» хăйĕн поэтикинчен нимĕн шеллемесĕр хăваласа кăларчĕ те хăйĕн тĕнчипе калаçма «пĕчĕк ирĕклĕх» тупрĕ. Анчах сăвă кĕвĕлĕхне пурпĕрех упраса хăварчĕ вăл. Сăвă йĕркисен пусăмĕ те (ритмĕ), састашĕ те хăйсен килĕшӳллĕ тытăмне çухатмарĕç. Ку вăл верлибр та мар, «шурă сăвă» та мар. Ку вăл – шухăш-туйăмăн çĕнĕ шыравĕ. Автор сăввисенче этемĕн куçа яр уççăн курăнман драмăлла вăрттăнлăхĕ сисĕнет»[114].

«Чĕлхемĕре артакла аркатса, сăмахсене вакласа, пĕрпĕринпе çапăнтарса, кĕтмен çĕртен сăмаха пĕрпеклентерсе, çĕнĕ састашсем тупса, сăвă йĕркисене сасă ĕнерĕвĕпе килĕшӳллĕн хытă карăнтарса – сасăсене вăл хускатнă, ирĕке кăларнă. Çивĕч сисĕмлĕскер, çиçĕмпе аçана, çиле («Аça та çиçĕм çиçтĕр, çаптăр!»), çут çанталăкăн ытти хăвачĕсене тухатмăш пек хăй патне йыхравласа хальхи чăваш сӳрĕк поэзине чăн поэтла çĕн сывлăш кĕртрĕ»[115], – тесе çырать А.Хусанкай «Тухатуллă вăй» статьяра.

«Кашни поэт хăйĕн «тĕнчине купалама» тытăнсан чи малтан ĕç хатĕрне – Чĕлхене туптать. «Арçури» авторĕн те, Иванов Кĕçтенттинĕн те, Çеçпĕлĕн те, чăн чăваш поэчĕсен – Эйзин таранах – хăйсен «чĕлхи» пулнă. Маринăн та пур вăл. Сасă ĕнерĕвне, сăмах çыхăнăвĕсене (грамматикине) вăл хăйне кирлĕ пек ăсталанă. Чарăну паллисене илес пулсан, вăл пăнчăпа пачах усă курмасть, хӳреллĕ пăнчăпа та – сайра (шухăшăн ирĕклĕ юхăмне чаракан паллăсем тесе-и?), чи юратнисем вара – тире, дефис, икĕ пăнчă, хупăлкасем (пĕр шухăша теприне çыхăнтарать, ăнлантарать, çĕнĕ пĕлтерĕш сĕмне хушать). М. Карягинăн уйрăм сăвви пушăлăхран çуралать пек, кайран каллех çав вĕççĕрлĕхре çухалать»[116].

Çак поэтессăн уйрăм сăвви кăна мар, унăн пĕтĕмĕшле поэзийĕ çавнашкал. Пуш сăвăсем вĕренмелле çырмасăр тӳрех пиçсе çитнĕ сăвăç пулса чăваш литературине тăрук килсе кĕчĕ вăл, вут-хĕм сирпĕтсе вĕçсе иртекен чăмăр çиçĕм пек...

## 2.8. *«Чунра – йĕрӳ, хĕрхӳ, улах»* *(Надежда Сельверстровăн вăрттăн чун тĕнчи)*

Надежда Сельверстрова лирикин тĕп кĕввине «хăйпе хăй калаçни, хăйне хăй итлени е – чун шырани» теме пулать:

Япшар та сăх сăмахсенчен ытла ырсан,
Канма пĕр хушă
Хампа хамах калаçнине итле пырса.
(Курма – хăрушă.)
*(«Кĕске, сайра тĕл пулусен хакне туйма...»).*

Пĕр енчен çак калаçу Михаил Сунталăн калаçăвне аса илтерет. Анчах Сунталăн лирика геройĕ хупăра хăйпе хăй пуплени пыр тĕпне каплам пуçтарать, йывăрлăх патне илсе пырать, Н. Сельверстрова героинишĕн вара, пĕр пысăклатмасăрах, хăйпе хăй калаçни – пĕртен-пĕр чĕрĕ юлмалли, ирĕке тухмалли мел. Пĕр чуна çеç мар, пĕтĕм тĕнчене те шăнăçайми шухăш-туйăмсем вулакана илĕртеççĕ те, хăратаççĕ те. Унтан та ытла:

Шухăшран та хăраса
Сирпĕнсе каять кӳлленчĕк
*(«Çуркунне кăна пулать...»).*

Лирика героинин чунĕнче лăпкăлăх çук, вăл чăтăмсăррăн каллĕ-маллĕ утма пуçлать: шалти канăçсăрлăх кĕлеткене, ал-урана куçать. Туйăм – куçа курăнать!

Пăшăлтатнă нумай
Каякан хĕвеле хирĕç

Тек утмастăп тесе. Уссăр.
Ӳкĕне-ӳкĕнех
Хĕвел анăç енне
Асăрханчăк, кĕске пусăм.

Çав куçа курнакан сывлăш –
Вĕриленнĕ ăрша.
Ăнсăртран хам ăшра:
«Тĕтререн пулаять сывлăм».
*(«Мана мар, халь сана ирĕк...»).*

«Куçа курнакан сывлăш», «вĕриленнĕ ăрша» – юратупа хыпса çунакан чĕре, вĕри туйăмсем – çурхи тулса çитнĕ

пĕве пек. Халех, çак вăхăтрах мĕнпур туйăма çиеле кăлармасассăн, калаçмасассăн –пĕтĕмпех кĕрлесе татăлса каять. Лирика героини патак илсе часрах-часрах шыв çулĕ уçать тейĕн, шухăша кĕскен-кĕскен, хăвăрт-хăвăрт калать. Çавăнпа Н. Сельверстрова сăввисенче вăрăм йĕр, икĕ пăнчă питĕ нумай, кăшкăру палли те пур – «Итлĕр!» тет кĕтмен çĕртен. Вăрăм йĕрсем пĕр шухăш çаврăмĕ тепĕр шухăш çаврăмне хирĕçленинине кăтартмаççĕ, пачах урăхла – çыхăнтараççĕ. Икĕ пăнчăсем пуплеве уçăмлăх кĕртме пулăшаççĕ. Пуплев кĕскен-кĕскен хывăннинче шухăшсăрлăх, туйăмсăрлăх пытанса тăмасть. Пачах урăхла, сăвăç вăйлă юхăма аран-аран йĕркене кĕртсе ĕлкĕрсе пырать:

Сăмахсем чыхăнтарнишĕн
Курăнап пулсассăн нишлĕ
Тарт куçна сăваплă янкăр
Тӳпене, асапсăр антăр.

Вĕçĕнче – веçех вĕçевлĕ:
(Сĕмленеп-ха – сĕм пĕчченлĕх...)
Каллĕ-маллĕ утнăçемĕн
Утăмсем – сăмахсăр çемĕ
(«Сывлăша пӳлсе, мăнаçлăн...»).

Лирика субъекчĕн сăмахĕсем – каланисем мар, вĕсем пĕтĕмĕшле туйăмăн, шалти хирĕçӳлĕхĕн пĕрре çĕрмĕш пайне çеç сăнарлаççĕ.

Н. Сельверстровăн сăвăлла хайлавĕсене сăнарлăх витерсех тăманни те шалти капланупа çыхăннă. Илемлĕх мелĕсем пирки шутласа ларма вăхăт-и?! Кунта – чĕрĕ юласчĕ, çавăн чухлĕ çĕклем пусарнă чухне кăшт та пулин чуна çăмăллатасчĕ!

*Асапланăвĕн сăлтавĕ* вулакана тӳрех ăнланмалла, лирика героини ăна пытармасть, вăл *«савман савнин сивви тивни»*:

Ăна кура – кула-кула
(Чунра – йĕрӳ, хĕрхӳ, улах).
Çӳлтен çĕре вĕçмесĕр ӳкнĕ пек ансан,
Эп сĕмленни ытла ытарлăхсăр, ансат:

Мана савман савнин сивви
тивни. Ку туйăм та – кивви
(Кĕве çимен, кĕлет лартман, кĕвве ларман,
Хальччен курман çилпе хăлаçланман арман).

Йăлтах вăйсăрланса йăшсан
Тута кăна туять ăшша.
Унтан – ача чухне вылянă пек килле –
Кĕтмен çĕртен кĕтмен çĕре кĕрес килет
*(«Ăна кура – кула-кула...»).*

Юлашки икĕ йĕркине вуласассăн лирика субъекчĕн чĕринче савни сивви-ăшшипе çыхăнман пĕчченлĕх туйăмĕ пуррине те сисетĕн. Тăван кил ăшшишĕн тунсăхлани марши вăл?..

Лирика героинин пĕтĕм чĕр пурнăçĕ каçпа иртет. Уншăн каç – талăк пек, «кунсемпе ирсем – каç урлă».

Çĕр варринче шăпах çапла туян.
Çĕр тĕрлĕ палăру çав шăплăхра.
Ирхи тĕссем, шăршсем, сассем – суя,
тĕттĕмленсен – ахлатмалла ахрат
*(«Йăлтах таçта куçарнă урамра...»).*

Н. Сельверстрова, Л. Мартьянова пекех, чăваш хĕрарăмĕн сăнарне калăпласа тăрать тейĕн. Шалта – вутхĕм, çил-тăвăл, сăн-питре вара – «кавар канлĕх». «Тăртанса пăчăртаннă» тута çеç пыр тулли чун кăшкăрăвĕ пурри, пиншер туйăм айăн-çийĕн çавăрттарни пирки систерет. Кĕлеткене ирĕке ярса «пушанас», «çăмăлттайланас» пулсассăн канлĕрех пулĕччĕ. Çапах нумай пăнчă лартни апла хăтланма май çукки пирки асăрхаттарать. Ун вырăнне – ийелле кулни кăна. Ун вырăнне – «йывăра веçех илни».

Чи хухăр куçран пурпĕр паллăн.
Хĕрхен хальлĕхе
Пиншер туйăмсем вырнаçмалăх
Кавар канлĕхе.

(Тултан пушанасшăнччĕ...) Тулнă
Çилле çиеле
Кăларнă та – кулă пек тунă
(Кулни – ийелле).

Тута тăртанса пăчăртаннă.
Пĕр сас – пыр тулли –
Пĕр кăшкăрнăн, пĕр кăштăртатнăн:
«Кăштах та пулин...»
*(«Чи хухăр куçран пурпĕр паллăн...»).*

Лирика героинине туйăмсене ирĕке кăларайманни чăтма çук ывăнтарса çитернĕ. Çакă вăл, маларах палăртрăмăр, кĕлетке тыткаларăшĕ урлă (ура утайманни, сусăрланни, урара вăй юлманни, кăштăртатни т.ыт.) лайăх курăнать:

Йăлтах таçта куçарнă урамра,
тата – тин çунă çурт шăрши кĕрет.
Пĕр шăмă та юлман пек урара.
(Утма вĕреннĕ чух тĕкме – тĕрек.)

Тĕршĕнмелли... хуть хул пуççи, çамка
е, пĕреххут – пĕр тăрăх, урлă сак
ниçта та çук. Ун вырăнне – тумхах.
Ним çук çĕртен туни – çĕр вăрласа
*(«Йăлтах таçта куçарнă урамра...»).*

Н. Сельверстровăн сăввисем чылаях мар (çырнă-çырман пичете йăтса чупмасть вăл вĕсене). Апла пулин те вĕсенчи туйăм тарăнлăхĕ пире тыткăнлать, чăваш хĕрарăмĕн вăй çирĕплĕхĕ ăмсантарать.

* * *

Çапла вара иккĕмĕш сыпăкра хальхи чăваш сăвăçисен (П. Эйзин, Л. Мартьянова, А. Аттил, П. Яккусен, Г. Федоров, М. Сунтал, М. Карягина, Н. Сельверстрова т.ыт.те) пултарулăхне тишкерсе тухрăмăр.

Петĕр Эйзин лирика геройĕ Çутă çинчен, Чăнлăх çинчен калама килнĕ çĕр çине, *анчах ăна тĕнче йышăнмасть.*

Любовь Мартьянова лирика субъекчĕн чун ыратăвĕн сăлтавĕ Эйзинăнне çывăх: унăн *çепĕç кăмăлне, таса туйăмĕсене те йышăнмаççĕ,* анчах унăн «тĕнчинче» тĕп роле арçын вылять. Тĕп кĕвĕ-çемĕ – *тĕнче ăнланманни.*

Алексей Аттил сăвăçăн поэтики тĕлĕнмелле, унăн пултарулăхĕ пекки чăваш литературинче урăх тĕл пулмасть те: арăш-пирĕшлĕхре, пăтрашура пулас гармоние кураять вăл. Аттил тĕнчине йăлтах Çутăран эрешлесе тунă темелле, çапах шалта, чунра çав тери пысăк ырату пуррине сисетпĕр, *шăпчăксăр, хăйĕн ачалăхĕсĕр тата ывăлĕн ачалăхĕсĕр пуçне унăн урăх нимĕн те çук.*

Петĕр Яккусен – питĕ нумай енлĕ поэт. Хавха саманчĕсем тунсăхпа, тарăн шухăша путнипе шав черетленеççĕ. Унăн лирика геройĕ черченкĕ, таса ача чунлă романтик.

Анчах, Эйзин тĕслĕхĕнчи пекех, унăн илемлĕ чунĕ никама та кирлĕ мар. *Тӳпери тăван килшĕн тунсăхлани* – Яккусен пултарулăхĕнчи тĕп кĕвĕ-çемĕ.

Г. Федоров лирика субъекчĕн чи пысăк ыратăвĕ – *каланман сăмахшăн пăшăрханни.*

Тĕнче пĕтесси – Михаил Сунтал сăввисенче пуç пулса тăракан кĕвĕ-çемĕсенчен пĕри. Лирика геройĕ тăр пĕччен, *унăн чунĕнче – иртсе пĕтми хăрав (вилĕм туйăмĕ).*

Надежда Сельверстровăн лирика героини *вĕри туйăмсене ирĕке кăларайманнипе асапланать.*

*Чун ӳтпеле пĕрле пĕр тĕвĕре пулманни* Марина Карягинăн сăввисенче ырату çуратать.

Поэтсен кашнин хăйне евĕрлĕ тĕнче курăм, кĕвĕ-çемĕ, вăрттăн кăмăл-туйăм пулсассăн та вĕсене пĕрлештерекенни пур: вĕсем пурте трагедилле сăвăçсем. Лирика геройĕсем хушшинчи пĕрпеклĕх вăл – пурнăç хĕрхенмесен те, чунра тем пек йывăр пулсассăн та ята ярас марччĕ, çын сăпатне çухатас марччĕ текен кăмăл-сипетпе пурăнни.

# III. ЛИРИКА ГЕРОЙĔСЕН ТĔНЧЕ КУРĂМĔН СИНКЕРЛĔХĔН ХĂШ-ПĔР СĂЛТАВĔСЕМ

## 3.1. *Хальхи чăваш сăвăçисен пултарулăхĕнчи чăвашла (Тухăçла) тата Анăçла шухăшлав палăрăмĕсем*

Иккĕмĕш сыпăк вĕçĕнче эпир П. Эйзин, Л. Мартьянова, А. Аттил, М. Сунтал, Г. Федоров, М. Карягина, Н. Сельверстрова синкер тĕнче курăмлă поэтсем тесе пĕтĕмлетӳ турăмăр. Тĕнче йышăнманни, тĕнче ăнланманни, пĕчченлĕх туйăмĕ, калас сăмаха калайманни çеç йывăрлăх кӳрет-ши вĕсене? Ахăртнех, урăх енсем те пур. Çакна ăсласа илес тесе В.Г. Родионов Çеçпĕл Мишши трагедине мĕнле ăнлантарнине пăхăпăр.

Тĕпчевçĕ шухăшĕпе, чир те, телейсĕр юрату та, выçăллă-тутăллă пурнăç та Çеçпĕл инкекĕнче тĕп выранта мар. Тĕп сăлтавне Родионов XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи чăваш наци культурин парадигми улшăнăвĕпе çыхăнтарать. XVIII ĕмĕрĕн 40-мĕш çулĕсенче чăвашсем хушшинче православи тĕнне, ун йăли-йĕркисене сарма пуçлани каярах чăваш наци культурин парадигма улшăнăвĕн никĕсĕ пулса тăнă.

В.Г. Родионов палăртнă тăрăх, XX ĕмĕрти наци ăнĕ икĕ тĕрлĕ: традицилле тата çĕнĕлле, Европăлла. Пĕрремĕшĕ, традицилле ăн, Европăлла пăтрашу выранне ĕмĕрхи çурасулăх çине таянать; тĕнче ик енлĕ анчах курăнмасть Тухăç çыннине – виç енлĕ; вăхăт та тӳрĕ йĕрпе мар, спираль çаврăнăвĕ пек аталанать т.ыт.те.

Çапла вара XX ĕмĕр пуçламăшĕнче чăваш халăхĕн социокультура парадигми палăрмаллах улшăннă. «Çакă вăл социаллă кисренӳсен условийĕсенче наци интеллигенцийĕн пĕр пайне (кунта чăн малтан В. Родионов Çеçпĕле кĕртет. –

*Н.И.*) пысăк трагеди патне илсе çитерет: вĕсем Анăçла шухăшлама питĕ хăвăрт вĕренсе çитеççĕ, анчах чăнлăха кивĕлле, чăвашла йышăннă»[117], — тесе çирĕплетет ăсчах.

Çакнашкал шалти хирĕç тăру хальхи чăваш сăвăçисен пултарулăхĕнче палăрать-ши? Икĕ тĕрлĕ расна шухăшлав екки хăш поэтсен мĕнлерех сăнланнине каярах пăхса тухăпăр, тĕслĕхсемпе çирĕплетĕпĕр. Унччен чăнлăха «чăвашла» е «Европăлла» йышăнать тенин пĕлтерĕшне уçăмлатни вырăнлă.

Ку ыйтăва татса пама каллех В. Родионов тĕпчевĕ патне таврăнмалла. Шухăшлав чăн малтан чĕлхере (тата музыкăра) палăрнине çирĕплетет вăл. Чăваш чĕлхи агглютинациллĕ чĕлхесен шутне кĕрет, вĕсенче сингармонизм саккунĕ хуçаланать: фонемăпа фонема, сыпăкпа сыпăк çураçса пыраççĕ. Флексиллĕ чĕлхесенче вара сасăсем, сыпăксем пĕрнепĕри пусарса, пăхăнтарса тăраççĕ. «Языки урало-алтайских народов, в том числе и чувашский, воплощают идею ненасилия, согласования взаимодополняющих составляющих. ...В традиционной форме ведения беседы чувашей вместо европейского самоутверждения «я» было стремление к достижению гармонии общающихся сторон»[118].

Çакнашкал шалти хирĕç тăру, икĕ тĕрлĕ расна шухăшлав хальхи чăваш сăвăçисен пултарулăхĕнче те палăрать. Чăвашла шухăшлав палăрăмĕсем çинче кăшт чарăнар.

1. *Çураçулăх патне туртăнни* чăвашсен наци характерĕнче йĕр йĕрленĕ: вĕсем чĕрре кĕрсе тавлашма, тӳррĕн хирĕç калама тăхтаса тăраççĕ. Çак уйрăмлăха чылай ăсчах асăрханă. И.Я. Яковлев чăвашсен характерĕнче лайăх енсем нумаййине палăртнă: «Чăвашсен кăмăлĕнче ырă енсем нумай. Тĕслĕхрен, вĕсем хутшăнура çав тери сăпайлă пулни. Чăваш çынна тӳрккес сăмах каласа кӳрентерессинчен, хăртассинчен пăрăнма тăрăшать»[119].

Çакăн евĕр шухăшах Г.И. Комиссаров ĕçĕнче куратпăр. Вырăссем тутарсене пăхăнтарса чăвашсем пурăнакан лайăх çĕрсем çине вырнаçма пуçласассăн ырă кăмăллă чăвашсем вĕсемпе çапăçса-харкашса тăманни пирки çырать вăл[120].

Чăвашсен пĕрремĕш вырăнта çынна хĕсĕрлес мар тени, ыр кăмăллăх, хутшăнăва кĕме хатĕр пулни тесе палăртать Г. Волков та[121].

Хальхи лирика геройĕсем те калаçура çураçулăх-ăнланулăх патне туртăнаççĕ. Малти вырăна поэтăн лирикăлла «эпĕ» тухать пулсассăн та вăл «эсир», «вĕсем» тенипе хирехирĕçленет:

Йĕрес пулсан – ăнланĕччĕç,
Йĕрес пулсан – каçарĕччĕç...
Ăнланĕç-ши самантлăха
Куççульсĕр хыт чăтăмлăха?!
*(Л. Мартьянова «Йĕрес пулсан – ăнланĕччĕç...»).*

Объекта кӳрентерес теменни лирика геройĕсене маска тăхăнма хистет, «эсĕ», «вăл» («вĕсем») вырăнне «эпир» тесе калаттарать («хĕрĕме калам – кинĕм илттĕр» тенĕ пекрех).

Эпир – вазăри чечексем,
Тымарсăр телейлĕ эпир
(*П. Яккусен «Эпир – вазăри чечексем...»).*

Эй, кам шаккать алăкран?
Кам шаккать?
Чĕререн шаккасан та
Илтместпĕр
*(Л. Мартьянова «Эй, кам шаккать алăкран?»).*

Авалхи чăвашсем çынпа çын хушшинчи çураçулăх патне анчах мар, *çут çанталăкпа этем хушшинчи çураçулăх* патне туртăннă[122]. Пирĕн лирика субъекчĕсем те пĕтĕм тавралăхпа – йывăç-курăк, шыв-шур, чĕрчун т.ыт.те – килĕшӳре пурăнма тăрăшаççĕ. Вĕсемшĕн пĕтĕмпех чунлă («Эп татни, çăлни е кăклани шăппăн-шăппăн хурланса йĕрет», – тесе пĕлтерет П. Яккусен; Эйзинăн чулĕ йывăррăн сывлать, Сунталăн – ĕмĕрсен сывлăшне упрать; Карягинăн тинĕсĕ чĕрĕ). Çут çанталăк тĕнчи лирика геройĕсемшĕн çын тĕнчинчен çывăхрах тесе çирĕплетме пулать.

Чăваш сăвăçисен (Айхи, Эйзин, Мартьянова, Яккусен, Аттил т.ыт.те) пĕрремĕш вырăна *шурă (е сарă) тĕс* тухать – пĕтĕм тĕссен гамминче 70–75 проценчĕ пулать. Пурте пĕлеççĕ: шурă (сарă) тĕс – тасалăх, çураçулăх символĕ. Эппин, çак тĕс мала тухни лирика геройĕсем килĕшӳ, çураçтару патне ăнтăлнине лайăхрах ĕнентерет. Унсăр пуçне тата

юр, юр пӗрчи сӑнарӗ (тасалӑх символӗ) тӗпре.

Ҫак хӑй евӗрлӗхе чӑваш критики унччен асӑрханӑ, анчах ӑнланманни те, ҫитменлӗх тесе шутлаканни та пулнӑ. Сӑмахран, А. Воробьев ҫапла ҫырнӑ: «Хӗветӗр Агивер сӑввин пӗр йӗркине танлаштарушӑн илетӗп:

Ҫӗнӗ юр, шурӑ юр, таса юр чӳхенет.

Георгий Ирхи:

Шур юра хӗр ашать,
Анаслать ҫил-тӑман.

Петӗр Эйзин:

Юр ҫап-ҫутӑ, таса.

Валентин Бурайкин:

Шур хӗлӗхне хӗл карӑнтарчӗ.

Ҫак пӗчӗк кӗнеке юр айнех пулнӑ тейӗн. Куншӑн авторӗсене эпӗ, паллах, тиркесшӗн мар, ҫак кӑлтӑка кӗнеке кӑларакансен асӑрхамалла пулнӑ»[123].

2. Иккӗмӗш сыпӑк вӗҫӗнче хальхи чӑваш лирика геройӗсене «ята ярас марччӗ, ҫын сӑпатне ҫухатас марччӗ тени пӗрлештерет» текен шухӑш патне ҫитсе тухнӑччӗ. Анчах мӗнха вӑл чӑваш курӑмӗнче «ҫын сӑпачӗ»? Тӑван чӗлхери «ҫын сӑпачӗ» текен ӑнлав Европӑпа вырӑс халӑхӗсен «личность» ӑнлавран уйрӑлсарах тӑрать тесе палӑртать В.Г. Родионов. «Чувашское слово означает нравственно-поведенческие устои, установленные в социуме. Так, в чувашском видении личность – это человек, имеющий право называться «ҫын», то есть имеющий определенные ценностные ориентиры, совпадающие с общенародными. У чувашей весьма сильно развито чувство социальной справедливости и общинного равноправия. В таком обществе полностью презирается индивидуально-эгоистическое начало»[124].

П. Эйзинӑн сӑвӑ тӗслӗхӗнче шӑпах чӑвашӑн пӗртанлӑх тӗнчине куратпӑр, хайлавра лирика геройӗ пуян-чаплӑсене сивлет:

Пуян ҫынна пуян темерӗм,
ӗмӗр пуян пулӗ темерӗм.
Чаплӑ ҫынна чаплӑ темерӗм,
ӗмӗр чаплӑ пулӗ темерӗм *(«Пуян ҫынна пуян темерӗм...»)*.

А. Аттил лирика геройĕ «мăн кăмăллисемпе» пĕрле «мĕскĕнсене» те хапăлламасть. Вăл хăй пурнăçне тĕрĕс те тӳрĕ, ята ямасăр пурăнса ирттерни пирки калать. «Ыйтатăп, ан йĕрсемĕр эп вилсен», – тет. Малалла çапла çавăрса хурать:

Пире пĕлмеççĕ мăн кăмăллисем,
Мĕскĕннисем, тăпрам çине ан çӳрĕр *(«Эпитафи»).*

3. Лирика субъекчĕсенчен нумайăшĕ авалхи *чăваш тĕнчин чиккисене пăсмаççĕ.* Авалхи чăвашсен тĕнчи хăш вырăнсемпе чикĕленнĕ-ха? Тăван кил, çемье (уйрăмах ватăсем), çуралнă ял, ял-йыш, сухаласа-акса тăракан çĕрсем, çăва чăваш çыннишĕн сăваплă пулнă, ку вырăнсем уншăн хăйне евĕр микрокосм. Ахрат çырмисем, авăрсем, чăтлăх вăрмансем вара ют, усал-тĕсел вырăнĕ. Тăван çĕртен ют çĕре тухса каясси мĕн тери йывăр пулни халăх сăмахлăхĕнчен уççăн курăнать:

Эх, мăнтарăн ял-йышĕ,
Çилленетчĕ, çураçатчĕ.
Халь уйрăлса каятпăр,
Епле уйрăлса каяс-ши?

* * *

Кив çĕр алăкь – кив алăк:
Епле хупса хăварас-ши?
Çĕн çĕр алăкь – çĕн алăк:
Епле уçса кĕрес-ши?

Наци çырулă культуринче те икĕ хире-хирĕçле тĕнче пуррине асăрхатпăр. Сăмахран, М. Федоровăн «Арçури» хайлавĕнче В.Г. Родионов çынсен тĕнчипе (ялта пурăнаççĕ) усал-тĕсел тĕнчине (вăрманта пурăнаççĕ) уйăрать. Икĕ тĕнче хушшинчи чикĕ – *шыв (çырма)* иккен[125]. Г.И. Федоров шучĕпе, «Нарспи» поэмăра икĕ тĕнче, вĕсем хушшинчи чикĕ – *укăлча*[126].

***Петĕр Эйзин*** поэзийĕнче ют тĕнчепе тăван çĕре уйăракан чикĕ палли пур, вăл – ял хыçĕнче пĕччен ӳсекен *çăка.* Лирика геройĕ, инçе çула пуçтарăннăскер, ватă амăшĕпе сывпуллашнă чух чăткалать-ха, анчах çăка патне çитсессĕн куççульне чараймасть: унтан малалла ют тĕнче пуçланать-çке.

Килтен тухнă чухне мана
анне
ăсатса янăччĕ,
ялтан тухсан – çăка.
Ват аннемрен уйрăлнă чух
эп чăткаларăм,
çăка патне çитсен
куççульленмесĕр тӳсеймерĕм *(«Çăка»).*

Аякра çӳренĕ хыççăн лирика субъекчĕ тăван ене тав-рăнать. Эпир ăна унчченхи йывăç патĕнчех тĕл пулатпăр:

Пин тĕрлĕ йывăç пур пуль
çĕр çинче –
анчах çак çăкаран лайăххине
тĕл пулмарăм *(«Çăка»).*

Лирика геройĕшĕн çак çăка ахаль йывăç кăна мар, ăна эпир лайăх ăнланатпăр: вăл чикĕ палли, малалла тăван çĕрсем пуçланаççĕ. Ахăртнех, çакна лирика субъекчĕ ăспа шухăш-ламасăрах, чун сиснипе туять.

***Любовь Мартьянова*** лирика героини çӳрекен, вăл куллен-кун пулакан вырăнсем (улăх-çаран, кӳлĕсемпе пĕве-сем) каллех чăвашсеннипе пĕр килеççĕ. Ют тĕнче чăтлăхсен-чен пуçланать, унта ĕмĕлкесем çеç:

Çĕрсерен
Йывăçсем хушшипе
Ĕмĕлке çӳрет *(«Çĕрсерен...»).*

Кам пырса кĕрекене çак сивлек тĕнче пĕтерет. Акă йывăçсем хушшипе вирхĕнекен пăлан вилет («Пăлан» сăвă). Тепĕр тĕслĕхре те халь каланă шухăшах:

Каясса, тен, кайăн та – килеймĕн.
Çĕр те пĕлĕт... Пурте ютшăнать.
Кунти пек унта сĕткен илеймĕн...
Тăван çĕр вăл – тăванлах пăхать
*(«Ăçта кайма эс тухнă çиле хирĕç...»).*

***Алексей Аттил*** лирика геройĕшĕн вăрман – леш тĕнче пулас:

Таçта, инçе, пĕр чĕмсĕр вăрманта –
Унта сукмак та, йĕр те çук пыма –

кĕлет-и, çурт-и... –
Е ыйтсан манран
пĕлетĕп: кантăк вырăнне – хăма
*(«Таçта, инçе, пĕр чĕмсĕр вăрманта...»).*

Анчах лирика субъекчĕшĕн вилĕм М. Сунтал тĕслĕхĕнчи пек хăрушă мар. Мĕншĕн тесен, Аттил шухăшĕпе, пурнăç вилĕмпеле вĕçленмест, вилĕм – хавăслă, телейлĕ тапхăра куçмалли самант: «ача-пăча телейĕсем умра».

А. Аттилăн çакнашкал тĕнче курăм Библири çемĕсемпе тӳр килет пулин те, христианство витĕмĕпе калăпланнăн туйăнмасть. Кунта чăвашăн чун пĕлĕвĕ, ламран лама куçса пынăскер, ытларах сас паратъ-тĕр.

Иккĕмĕш сыпăкра ***Петĕр Яккусен*** лирика геройĕ романтик пулни пирки, вăл ыттисенчен уйрăлса тăни пирки çырнăччĕ. Ют тĕнче чиккийĕ те унăн ыттисенни пек йывăçран, вăрмантан пуçланмасть. Чăваш çĕрĕнчен тухсан çеç ăна тунсăх пусать. Самолет çĕкленсе çитсен, пĕлĕтсем аякра, хыçалта юлнăçем: «Чăваш çĕрĕ чунра çеç юлать, / Е юлатьши ман чунăм унта», – тет лирика геройĕ «Çĕр çине тинкеретĕп çӳлтен» сăвăра.

Тăван килĕ, çуралнă ялĕ (Иерусалим вырăннех), çавăнти вырăнсем (Шетмĕ юхан шывĕ, улăх, пĕве хĕрри) Яккусеншĕн питĕ пĕлтерĕшлĕ пулин те унăн пурăнмалли вырăнĕ, чăн тăван килĕ тӳпере тесе пĕтĕмлетнĕччĕ умнерех. Çакăнпах лирика субъекчĕ çăмăллăнах чăтлăхсенче çĕтсе çӳренине ăнлантармалла.

Кĕрхи вăрмана кĕрсе кайрĕ сукмакăм. <...>
Мана чăтлăхри сукмаксем йыхăраççĕ
*(«Кĕрхи вăрмана кĕрсе кайрĕ сукмакăм...»).*

Çавăн пекех «Çĕнĕ çул каç», «Кун çутинчи шап-шурă тĕлĕк...» тата ытти сăввисенче вăл вăрмана кĕнине, унти илемпе киленнине, тарăн шухăша путнине куратпăр. Ытти нумай чăваш поэчĕсен лирика геройĕсем пек тарăн шырлана, ахрат çырмине аннине çеç курмастпăр. Ӳкме пуçласассăн та – унăн çунат шăтать:

Ай, пăхрăм та – айра шырлан мĕлки,
Пуçхĕрлĕн чăмрăм эп унта сасартăк –

Эй, тӗлӗнтермӗш пурнӑҫӑн йӗрки:
Пурнас килнипеле вӗҫсе хӑпартӑм *(«Вӗҫев»).*

***Георгий Федоров*** лирика геройӗ пурӑнакан-кӑмаллакан талккӑш пӗр сӑвӑрах лайӑх курӑнать:

Пур-ши ӗнтӗ манӑн Савӑк?
Пур!
Вӑрмансен хитре кӳлемӗ,
Ҫӑлтӑрсен йӑл-ял ҫӗклемӗ,
Ҫут ейӳллӗ шыв таппи,
Сулхӑн каҫ.
Мӑн ҫул чуппи.
Улӑхсем – чечек тӗрриллӗ.
Хирӗмсем – тӑри юрриллӗ... *(«Хӗсмет»* ярӑмран*).*

Лирика субъекчӗ кӗр вӑрманне юратать пулин те, чӑтлӑхсенче ҫӳренине пӗртте курмастпӑр. Вӑл «вӑрмансен хитре кӳлемӗпе» аякрантарах пӑхса киленнӗн туйӑнать: унӑн пултарулӑхӗнчи тӑтӑш тӗл пулакан хӗрлӗ-сарӑ вӗрене, пиҫсе ҫитнӗ ҫырлаллӑ пилеш йывӑҫӗсем сӗм чӑтлӑхсенче ӳсме те пултараймаҫҫӗ. Кӗрхи *вӗрене* – икӗ тӗнче чикки, вилнисемпе чӗррисене сыпӑнтарса-пӗрлештерсе тӑракан символ та.

***Михаил Сунтал*** лирика геройӗшӗн юратнӑ вырӑн ҫырма пулни пирки те калаҫу пулнӑччӗ. Унта вӑл ача чухне ӗне ҫитернине, ҫырла пуҫтарнине, ҫӑлкуҫ шывӗ ӗҫнине, кайран мекӗрленсе шур чул кӑларнине асӑрхатпӑр. Ҫырма, поэт сӑмахӗпе, анне варӗ пекех, анчах та этемӗн хӑй вӑхӑчӗпе ҫырмаран тухмаллах, пурнӑҫ ҫулӗпе малалла утса каймалла. Сунтал лирика геройӗ вӗҫӗмех чӑвашшӑн ют вырӑнта пӗрпӗччен, тӑван халӑхӗсӗр хупӑра пулнине сисместӗнланмасть пек. Яланхи пусӑрӑнчӑк кӑмӑлӗ, пыр тӗпӗнчен ҫӑхан кӑранклатнӑ сасӑ тухни, вилӗмрен хӑрани те, тен, ҫакӑнпа ҫыхӑннӑ. Чӑваш ҫут тӗнчерен уйӑрӑласран мар – пӳкле вилӗмпе килтен аякра вилесрен, ют ҫӗрте выртасран хӑрать («Арҫурири» Хӗветӗр сӑмахӗсенех аса илер). Ахӑртнех, ҫак туйӑм Сунтал лирика геройӗн чунӗнче тӗпленнӗ те самантлӑха та канӑҫ памасть.

***Марина Карягина*** лирика героини пурӑнакан (вӗҫсе ҫӳрекен тесен тӗрӗсрех-и) талккӑш пирки умнерех ҫырнӑччӗ: унӑн хутлӑхӗ – ҫӳлте, тинӗспеле вӗҫсӗр тӳпе хушшинче.

***Надежда Сельверстрова*** героини çырма-çатрара, йывăççем хушшинче, улăх-çаранра, юханшыв-кӳлĕ таврашĕнче çӳренине анчах мар, пӳртрен тухнине те курмастпăр. Вăл пĕтĕмпех туйăмсен ытамне путнă, вăл хăй шалти тĕнчинче каçпа пурăнать. *Чĕре* – икĕ тĕнче чикки.

Çапла вара, пĕтĕмĕшле илсессĕн, эпир пăхса тухнă авторсен лирика геройĕсем тăван талккăша епле йышăнасси пĕрешкелтерех: лирика субъекчĕсем чăтлăх вăрмана шала кĕниех курмастпăр, ахрат çырмисене те анмаççĕ вĕсем. Эппин, умнерех каланисене пĕтĕмпех шута хурсассăн, хальхи сăвăçсенчен нумайăшĕн шухăшлавĕ чăвашсен ĕмĕртен килекен шухăшлавĕпе пĕр килни пирки пĕтĕмлетӳ тума сăлтав пур. Ку пĕр ен. Тепĕр енĕ: хальхи поэтсем чăнлăха традицилле йышăннă маях Анăçла (Европăлла) та шухăшлаççĕ, çакă вăл шалта хирĕçӳлĕх туйăмĕ çуратать тесе эпир кăшт маларах палăртса хăварнăччĕ. Анăçла шухăшлав ăçта курăнать-ха?

Лирика геройĕсем вăхăта спираль çаврăнăвĕ пек йышăннă чухнех лини евĕрлĕ йышăнаççĕ. Çакă вăл чи пысăк палăрăм. Тĕслĕхрен:

Нихăçан та эс вилместĕн,
«Çын вилет» тени – пустуй, –

тет Яккусен пĕр тĕслĕхре («Тепĕр чух тата пулаççĕ...» сăвă), хыççăнах çапларах хушса хурать:

Тепре каласан – васкани
Ура утнă чух анчах *(«Хитре те иккен улăхра...»).*

Çакă вăл хирĕçӳлĕх туйăмĕ çуратать. Аттил пĕр сăвăра вилĕме тепĕр шая куçмалли тапхăр пек ăнлантарать. «Шакăлтатĕ шăпчăк пĕринче» хайлавра ĕç-хĕл çинчен манса кайăк юррине итлеме чĕнет. «Сан валли юрламĕ вăл ыран», – тет. Сунтал лирика геройĕ вилĕм çук тесе ĕнентерет, çав вăхăтрах вилĕмрен хăрани те палăрать: кунтан кайсан урăх нихăçан та таврăнмассăн туйăнать ăна. Федоровăн лирика геройĕ: «Вилсен те ӳт, шутларăм – чунăм юлĕ», – тет. Хыççăнах этем вилсессĕн сăмахсăр пуçне нимĕн те юлманни пирки калать.

Хальхи поэтсен сăвă чĕлхине тишкернĕ хыççăн та киввипе çĕнни харăс ӳкерĕннине асăрхатпăр.

Акă вĕсен пултарулăхĕнчи чăваш тĕнчине сăнарлакан сăмахсем: *ут, лаша, урхамах, тиха, ыйткалакан, кăмака, вучах, алтăр, хуран, çурла, чăкăт, уйран, тенкĕ, шӳлкеме, арча, пир хутаç, юман, çăка, пилеш, улăп* т.ыт.те.

Çĕнĕ пурнăçа, çĕнĕ шухăшлава кăтартаканнисем: *партитура, карниз, тонна, гастроном, аквариум, трагеди, симфони, зал, оливка ращи, фейерверк, зооцирк, линза, Ева скульптури, Нефертити, ля бемоль, Сальери, тушь, цех, клуб, путевка, жонглер, самолет, бульвар, сквер, вокзал, марсианин, джинн, Сизиф* т.ыт.те.

Чăваш чĕлхинче тӳрĕ пуплевлĕ предложенисенче «тесе» («терĕ», «текен») татăк пур: «Путса вилчĕ тесе ан кала» (П. Яккусен). Хальхи авторсен илемлĕ чĕлхинче вырăс чĕлхинчи синтаксис тытăмĕпе йĕркеленĕ предложенисем сахал мар тĕл пулаççĕ. Тĕслĕхрен:

1) Эп кăшкăртăм: «Ăçта чунăр?!» *(П. Эйзин)*;
2) Аякран вăл калать: «Эп кунта» *(Л. Мартьянова)*;
3) Ку илемре калас-и манăн: «Чун çук?» *(А. Аттил)*;
4) Çумăр витĕр вара пăшăлтататăп:
«Пуçу çине телей çутăрччĕ...» *(П. Яккусен).*

И.А. Андреев вырăс çырулăхĕнче предложени ыйтуллă е калуллă пулнине кăтартма нумай чухне чăрăну паллисемпе кăна усă курни, пирĕн чĕлхе ятарлă мелсемпе е татăксемпе палăртма хистени пирки çырать[127].

Сăвăçсен чăвашла йĕркеленĕ предложенисемпе çумаçумăн тăтăшах «вырăсла» предложенисем ылмашăнаççĕ:

1) Эп çывăрнă е çут çанталăк?

* * *

Тĕттĕмлĕхе курма пĕлни? *(П. Эйзин)*;

2) Çынсемпе çынсем пек пулаймарăм?
Пурăнатăп апла урăхла?
Вĕсем пек савăнса кураймарăм?
Йышра мар, ытларах – хырлăхра? *(Л. Мартьянова)*;

3) Май çук? Хе-хе. Ма – çук? *(А. Аттил)*;

4) Выçлă-тутлă пулин те – юмах?

* * *

Савусăр касăлнă чун пулчĕ? *(П. Яккусен).*

А. Аттилăн вырăсла йĕркеленĕ предложенисем час-часах тĕл пулаççĕ.

Жанрсене, сăвă виçисене, сăнарлăх тытăмне пăхас пулсассăн та çакнашкал ӳкерчĕкех: сăвăçсен пултарулăхĕнче *икĕ тĕрлĕ шухăшлав* пурри яр уççăн курăнать. Сăвăлла хайлавсенчен чылайăшĕ тулаш тĕлĕшĕнчен (шалашĕ те) халăх сăмахлăхĕнчи тĕслĕхсене питех те аса илтереççĕ. Тепĕр чух тап-таса стилизаци теме те пулать, анчах ку апла мар. П. Эйзин, Л. Мартьянова тата ыттисен лирика геройĕсем нумай чун асапĕ витĕр тухаççĕ, шалта пуçтарăнса çитнине калама витĕмлĕ сăмах шыраççĕ. Çавăнпа халăхăн сăмахлă культурине сума сунă çĕртех лирикăн çĕнĕ тĕсĕсене алла илнĕ, сăвăсен сăнарлăхне унччен пулман тĕссемпе пуянлатнă тата ытти çĕнĕлĕхсем кĕртнĕ çĕрте – кĕтмен çаврăнăшсемпе вулакана тĕлĕнтересси е ят-сум илесси мар, пĕрремĕш вырăнта чун шыравĕ тăрать-тĕр.

### 3.2. *«Чикĕри тăрăм» тата сăнарсем хире-хирĕçле аталанни*

Лирика субъекчĕсем икĕ тĕрлĕ социокультура хушшинче пулни хăйне евĕрлĕ тăрăм çинчен калаçма май парать. «Чикĕри тăрăм» («состояние межстоянья») терĕмĕр ăна. Тишкернĕ хыççăн пур лирика геройĕшĕн те паллă «чикĕри тăрăм» тата лирика субъектне пĕр хăйне çеç тивĕç, ăна ыттисенчен уйăракан тăрăмсем пурри палăрчĕ.

Пĕрремĕш тĕсĕ çул сăнарĕпе çыхăннă. Лирика геройĕсем хăйне евĕр тăрăмра: вĕсем пĕр вырăнта та тăмаççĕ, çав вăхăтрах инçе çулра çӳренине те курмастăн. Вĕсем яланах тăван килте, ял таврашĕнче, кӳлĕ е юхан шыв хĕрринче, улăхра, уй-хирте. Ăнсăртран инçе çула тухма вăхăт çитсессĕн пăлхану, чун ыратăвĕ пуçланать. Тин кăна палăртрăмăр: лирика геройĕсем инçете утнине, ларса кайнине, вĕçнине курсах каймастпăр: çула пуçтарăннă е тăван тĕнчен чиккине çитнĕ саманта сăнать вулакан. Çакнашкал «чикĕри тăрăм» вĕсене пĕр рете ларттарать те.

Тепĕр пĕрлештерекен ен – лирика субъекчĕсем ятанах çутăпа тĕттĕм (каçпа ир е кунпа каç) тата ырăпа усал чиккинче пулни.

Эп çитрĕм çитмелли çĕре.
Малта
сап-сарă кун тĕнчи йăлтăртатать,
хыçра
хуп-хура каç
*(П. Эйзин «Эп çитрĕм çитмелли çĕре...»).*

Петĕр Эйзинăн хăйне çеç тивĕç «чикĕри тăрăмĕ» вăл – лирика геройĕ *пӳлĕмпеле тулаш хушшинче пулни* (шалта та мар, тулашра та мар).

Петĕр Яккусенĕн «чикĕри тăрăмĕсем» пĕрре кăна мар:
– пурăнас килни тата пурăнас килменни;
– чечеклĕ уй-хир – шырлан;
– хула – ял;
– Турра ĕненни – ĕненейменни;
– тунă пусăм – тăвас пусăм;
– чăн – асамлăх т.ыт.те.

Анчах тĕп тăрăмĕ вăл – *çĕрпе тӳпе хушшинчи* тăрăм. Кун пирки «вертикальлĕх» çинчен калаçнă чух палăртнăччĕ.

Марина Карягина *виçесĕр ирĕкпеле ирĕк çукки хушшинчи* тăрăмра («читлĕхре те – читлĕхпе вĕçет»).

Надежда Сельверстрова лирика героини *пуçа çухатса савăшура манăçаслăхпа чун мăнаçлăхĕ, тасалăхĕ хушшинче* асапланать.

Любовь Мартьянова тӳрремĕнех палăртать:

Пĕр енчен чĕнет – мăнкăмăллăх,
Илĕртет хисеплĕх тепринчен
*(«Санра – çуралчĕ пултарулăх»).*

Георгий Федоров лирика субъекчĕ *сăмахпала кĕвĕ хушшинчи* тăрăмра. «Вилĕмпе пурнăç хушшинчи хутлăхра эп, / Сăмахпа кĕвĕ хушшинче», – тет вăл.

Михаил Сунтал – *хитре ачалăхпа шелсĕр пуласлăх хушшинче*, халĕ, çак самантра, вăл пурăнмасть те пек.

Алексей Аттилăн та хăйне çеç тивĕç тăрăмĕсем пур: *çут çанталăк чĕрçийĕпеле çӳлти кайăксен патефонĕ хушшинчи* тăрăм; *икĕ Çутă хушшинчи* тăрăм. Анчах чи пĕлтерĕшли

тарăнрах вырнаçнă. Маларах палăртса хăварнăччĕ: унăн пултарулăхĕнче лирика геройĕ пăтрашура пулас килĕшĕве курать. Урăхла каласан, Аттил геройĕ 1960–1990 çулсенчи чăваш лирикинче никамран ытла *çураçулăх* патне туртăнать (ку чăвашла, Тухăçла, шухăшлавăн тĕп палли). Анчах çав вăхăтрах А. Аттилăн сăввисенче вырăсла шухăшласа йĕркеленĕ предложенисем, Анăç культуринчи сăмахсем, сăнарсем, пайрăмсем нумаййи унăн шухăшлавĕ Анăçла пулнине кăтартать (Г. Федоровăн та вĕсем чылай, анчах шухăшĕ унăн типтикĕс чăвашла йĕркеленсе çырăнса пырать, ытлашшипех те). Кĕскен: ăн айĕнчи шайра лирика геройĕ – чăваш, чăвашла тĕнче курăмпа вăл çак çĕр çине килнĕ, унра несĕлсен чунĕ пурăнать; ăс-тăнĕпе вара Анăç культури патне туртăнать. Икĕ *расна социокультура хушшинче* пулни А. Аттил пултарулăхĕнче, хальхи сăвăçсемпе танлаштарсассăн, никамран вăйлă палăрать. Çавăнпах-тăр унăн трагедийĕ пуринчен те тарăнрах. Сăвă тĕнчинче лирика геройĕ çав синкерлĕхе çиеле кăлармасăр хăварма – çĕнтерме – вăй çитерет пулсассăн, чĕр пурнăçра поэт психика чирĕпе чирлесе каять. Сăлтавĕсем, тен, çак шалти хирĕçӳлĕхпе те çыхăннă...

* * *

Çапла «чикĕри тăрăм» лирика субъекчĕсен чунĕнче канăçсăрлăх, хирĕçӳлĕх туйăмĕ çуратать. Çавăнпа пулас пĕр сăвăçăнах пĕр сăнарах нумай чухне хире-хирĕçле аталанать (А. Аттил сăвăсенче трагедие çĕнтерме вăй çитерет, çавăнпа сăнарсен хире-хирĕçӳлĕхĕ те çук унăн. М. Карягинăн шухăшлавĕ, çыру чĕлхийĕ ют планета çыннийĕн евĕрлĕ, сăмахсем, сăнарсем аталанниех курăнмасть – юпан-юпан, сыпăкăн-сыпăкăн, уйрăм саспаллин мĕлтлетсе иртеççĕ, пуçа ваттараççĕ).

Акă Петĕр Эйзин поэзи тĕнчинче ***уйăх*** – ырă сăнар, вăл вăтанчăклăха, çутта, тасалăха калăпласа тăрать:

> Эп çаплах сарă уйăх çинчен куç илместĕп.
> Ялтан килнĕ сăпайлă инке пек
> туйăнать вăл мана *(«Уйăх»)*.

Анчах «Çухату» сăвăра «тунсăх пек» шупка уйăх чӳречерен чакаланса кĕрет, лирика геройне шыраса вырăн çине

улăхать, ытаклать ăна, пăвать, лечекелет тутипе. Кунта уйăх намăссăрлăха, килпетсĕрлĕхе калăплать.

Никам умĕнче те ăнлану, хĕрхенӳ тупайман лирика геройĕ ***йытăпа*** çеç чунне уçаять («Ах, йытă, йытă... / Эс ăнланатăн-çке мана йăлтах»). Урăх хайлавра вара йытă ун çине ял хушшинчех siksе ӳкнине, тӳрех çыртма, çурма-тăпăлтарма пуçланине куратпăр.

***Хурăн*** тасалăха, илемлĕхе сăнарлать («Хура çăкалăха хурăн çутатать»). Тепĕр текстра хурăн – вилĕм палли («Скелет пек пĕр хушă куçа курăнать»).

Нумай чухне ***тӳпе*** сăнарĕ Эйзинăн ырă енчен палăрать. Çапах «ĕнерхи каç тӳпе хурине», çулсем çине хура тӳперен тĕттĕмлĕх çунине куратпăр.

***Хĕвел*** çутăлăх, ырăлăх сапалать, вăл лирика геройне хуралăхпа кĕрешнĕ çĕрте пулăшаканĕ:

Хĕвел пайăркин
юлашки хĕçне
илсе эпĕ
йĕпе сăмсаллă пĕлĕтсемпе
вăрçатăп *(«Çуртсем»).*

Тепĕр çĕрте хĕвел юра – тасалăх символне – вĕлерет («Çил те çиет ăна, / Хĕвел те хĕрхенмест»).

***Тĕттĕмлĕх*** пĕрре хитре, черченкĕ сăнар пулса тухать пирĕн ума («Хуп-хура тĕттĕмлĕх çырать пек музыка»), тепре – пусаракан, тĕнчене йывăрлатакан сăнар.

Канăçлăха, тĕнчен нумайенлĕхне сăнлать ***шăплăх***, унра – пурнăç чăнлăхĕ («Шăплăх – йăл-йăл кĕренлĕх. <...> Сывлăм тумламĕ витĕр / Шăплăх»). Тепринче вăл тĕттĕмлĕхпе пĕрешкел, общество чĕнменлĕхне, чунсăрлăхне кăтартать.

***Каç (çĕрле)*** – пурнăç тĕллевсĕрлĕхне хирĕçлекен сăнар: «лăпкăлăха уртарса янă каç». Е чун тата çĕр çинчи илемсем каçпа çеç уçăлаççĕ («Каçпа Чунри мĕнпур илемлĕх чĕре витĕр курăнакан пулса тăрать»). Урăх тĕслĕхре «хуп-хура каç хĕпĕртесе ташлать» – сӳнсе-сӳнсе пыракан, вилекен лирика геройĕ умĕнче.

***Çил*** çăмăллăха, черченкĕлĕхе, уçăлăха, хитре асаилӳсене пĕлтерекен сăнар («Çил ачашлăхĕ сип-симĕс кайăк пек, асаилӳ пек... вĕçсе çӳрет»). Çав вăхăтрах вăл лирика геройĕн

юлашки шанăçне туртса илме пултарать («Юлашки çулçа та / Татса илчĕ çил»).

***Хыр*** – асапланакан сăнар, ăна хĕрхенес килет. Хырсен сасси пыр тĕпĕнчен хăрăлтатса тухать. Анчах акă кĕçех хырсем хаяррине сăнатпăр:

Хырсем
таптаса ан кайччăрччĕ. <...>
Хырсем
тата карниз –
асав шăлĕсене кăларнă *(«Вăрану»)*.

Любовь Мартьянова пултарулăхĕнчи сăнарсен аталанăвне пăхсассăн та çав хирĕçӳлĕхех куратпăр. ***Кĕркунне*** – хитре, çутă сăнар («Кĕрхи кун кĕрхилле те – хитре...»). Çав сăнарах – чун талпăнăвне пусараканĕ, пĕр утăм тутармасăр хирĕçлекенĕ.

***Сăмах*** чĕрĕ, вăл сисĕмлĕ («чĕрĕ сăмах çӳçенчĕ»). Анчах нумай чухне усал енчен курăнать: «хура сăмах янкать», «йышăнман пуш сăмах», «йӳçек сăмах», «сивĕ сăмах».

***Шăплăхра*** асамлăх çуралать («Шăплăхра шăп юмах çуралчĕ»). Шăплăх ют та пулать иккен тата ултава пĕлтерет:

Ку шăплăхра – тĕлĕнмелле пăлхав,
Ку шăплăхра – тĕлĕнмелле ултав.
Эп паллаймастăп ку ют шăплăха
*(Л. Мартьянова «Эп паллаймастăп ку ют шăплăха...»)*.

***Кун*** тĕрлĕрен пулать: «шурă кун», «çутă кун», «ырă кун» – çутă сăнар. Çав вăхăтрах «тĕссĕр тĕлĕк витĕр пушă кун килнине» асăрхатпăр.

Пĕр вырăнта: «Ытла та ирĕклĕ / Ытарма çук / Ырă-ырă ***каç***», – тенĕ. Тепринче каç лирика геройĕн савăнăçне хуплать.

***Тунсăх*** пĕр сăвăра айван, вăйсăр («Те чăнах та вăйсăр пуль ман тунсăх»), урăх сăвăра вăл хаяр, алхасуллă («Мĕнма апла кăра», – тенĕ тунсăх пирки).

***Пăлан*** сăнарĕ пĕр сăвăра килĕшуллĕ пулнине куратпăр. Анчах тепĕр текстра пăлан çырлана, ĕмĕт-кайăка пусса, таптаса иртет.

***Çăхав*** – пуш сămахлăха, чун нишлĕхне кăтартакан сăнар. Тепĕр тĕлте вăл айăплă та мар: ăна çынсем карăнтараççĕ те яраççĕ.

Петĕр Яккусен пултарулăхĕнче нумай сăнар хирехирĕçле аталанать. **Ял** – пĕр енчен, унсăр пурнăç та çук пек («Ялăм! Эсĕ пурри – эпирех те пурри»). Тепĕр сăвăра «Халăхĕ – ырă, ялĕ – пуян» тет, çапах хăй ку ялта пурăнаймассине пĕлтерет.

***Кĕркунне*** – терт мар, шевле вăйне ăнланни çеç. Çав вăхăтрах кĕркунне сăнарĕ чун асапĕпе, «кантăк çиййĕн юхакан» ĕсĕклевпе ассоциациленет.

***Кӳлĕре*** çăлтăрсем курăнаççĕ, вăл чăнлăха çутатакан тĕкĕр пек. Тепĕр тĕслĕхре кӳлĕ хăрушлăха, усал-тĕселе калăплать:

Çавра кӳлĕ варри – авăр,
Авăртан аçтаха вĕçрĕ *(«Путса вилчĕ тесе ан калăр...»).*

***Çăлтăр***. «Çыннисем сив çăлтăр пек çӳреççĕ» сăвăра çăлтăр чунсăрлăха кăтартать, тепĕр тĕслĕхре – ăнланакан, лăплантаракан сăнар:

Чӳречери çăлтăрпала
Пăшăлтатса выртатăп *(«Çывăрасчĕ – ыйăх çук...»).*

***Тăван халăх.*** Лирика геройĕ хăй халăхне юратать, унпа мухтанать:

Халăхăм, эс вăйлă, мĕскĕн мар,
Тинĕс хăватне пултарнă халăх
*(«Самана – çил евĕр – каш та каш...»).*

Мухтанă маях тăван халăхне нишлĕлĕхĕшĕн шеллет те, намăслантарать те:

Вĕтелсех пыратпăр, вĕтелсе...
Пăнтăх пĕвери пулă хурăмлă.
Кăшкăратпăр: «Улăпсем!» – тесе.
Улăпсем ĕлĕк пурăннă...
*(«Вĕтелсех пыратпăр, вĕтелсе...»).*

***Вăрман (йывăç)***. Ытти сăвăçсен лирика геройĕсем вăрмана кăмăлласах каймаççĕ, унта кĕмеççĕ, П. Яккусен лирика субъекчĕ вара чăтлăхсенче те çӳрет. *Вăрман (йывăç)* – йывăр

чухне лăплантаракан, ăнланакан, вăй паракан сăнарсенчен пĕри. Вăрманта юмах, асамлăх пурăнать.

Çут çанталăк ачи – пурпĕрех мана çитмĕ инçетлĕх,
Пурпĕрех чунăма çавăрса илсе кайĕ вăрман.
*(«Çут çанталăк ачи – йывăç-курăксăр эп тунсăхлатăп...»).*

Çапах та пĕр сăвăра юмансем чун ыратăвне илтменнине-курманнине те асăрхатпăр («Чунна уçни çеç ĕнтĕ / Улталанни»).

Ытти сăвăçсен пекех ***хĕвел*** сăнарĕ Яккусенĕн те ырра, çутта, пурнăç чĕрĕлĕвне калăпласа тăрать. Апла пулин те хĕвел хуралнине, вăл шăнса пăрланнине, илеме киревсĕрлетнине сăнатпăр.

***Пас ереш***. Малтанах, пĕчĕккĕ чухне, лирика геройĕ чӳрече çинчи пас кристаллă эрешсене тĕсесе ларнăçем вĕсем ăна джунгли евĕр туйăнаççĕ, юмахри эрешсене аса илтереççĕ. Ку чух эрешсем тĕлĕнтермĕшпе хаваслăх туйăмĕ вăраттаççĕ, тасалăх алăкне уçаççĕ. Тепĕр сăвăра вара «чунсăр эрешсене» тĕл пулатпăр:

Сĕткенсĕр, чунсăр эрешсем
Чӳречере лапсăркаланнă.
(«Сисмесĕр çутăлать те тул...»)

П. Яккусен пултарулăхĕнче пачах хирĕçле сĕм йышăнакан сăнарсем сахал мар. Пĕртен-пĕр сăнар çеç – ***анне*** сăнарĕ – улшăнмасть.

Анне сăнарĕ сăвăçсен пултарулăхĕнче мĕнлерех вырăн йышăннинчен лирика геройĕн тĕнче курăмĕ, трагеди тарăнăшĕ, шăпи епле пуласси тӳрремĕнех килет иккен. Çеçпĕл патнех таврăнар. Пурне те паллă: унăн пултарулăхĕ «чĕлхе» тата «чăваш» («тăван халăх») концептсем çинче никĕсленсе тăрать. Анчах Çеçпĕлĕн «анне» концепт çук. (Сăлтавĕ çемьери лару-тăрупа тачă çыхăннă-тăр. «Амăшне хисепленĕ пулин те, ашшĕ Çеçпĕле чылай çывăхрах пулнă. Ашшĕне тĕрмене хупсассăн хăй çак тĕнчере тăр пĕччен юлни пирки калать Çеçпĕл»[128].)

Маларах, Яккусен романтизмĕ пирки çырнă чух, Çеçпĕлĕн иртнипе пуласси хушшинче нимĕнле çыхăну та пулма пултараймасть тенĕччĕ. Йăваш чăваша, çемçе чĕлхе-

не, ыйхăллă уйсене савмашкăн унăн хал çитмест. Умра, «хĕвеллĕ ыранра», пĕртен-пĕр маяк – тимĕр те татакан, тĕнчипе янраса тăракан çулăмлă чăваш чĕлхи. Анчах каярах çĕр-шыври лару-тăрăва, ултавлă та хаяр пурнăçа кура тăра çирĕп ĕненĕвĕ хуçăлать. Юратнă чĕлхен, тăван халăхĕн малашлăхĕ çук пулсан – ăна валли те ку пурнăçра вырăн çук (вăл пĕр çын мар, вăл хăй пин-пин, халăхăн уйрăлми пайĕ)... Çирĕп тĕкĕ – амăшĕ – пулнă пулсассăн синкерлĕхĕ кăшт та пулин çăмăлрах пулмĕччĕ-ши...

